

Валентина Эльби

# Кашнинех килте кӗтеҫҫӗ

Национальная библиотека ЧР
4-016223

...ТА
...БЫТЬ
...ПОЗЖЕ
...СРОКА

0053

162 23. чув.

Валентина Эльби

К С(Чув) Э 53

# КАШНИНЕХ КИЛТЕ КĔТЕҪҪĔ

Калавсем, повесть

ЧĂВАШ КĔНЕКЕ ИЗДАТЕЛЬСТВИ
Шупашкар — 1972

С (ЧУВ)
Э 53

16223 чув

Республиканская
библиотека
им. М. ГОРЬКОГО
Чувашской АССР

ТУПМАЛЛИ

Тăван ял . . . . . . . . . 3
Қашнинех килте кĕтеççĕ . . . . . 10
Ваттисемсĕр кил-çурт илемсĕр . . . 21
Иккĕмĕш арăм . . . . . . . 26
Шурă такси (повесть) . . . . . 48
Упăшку кунăçли пултăр . . . . 34

**Эльби Валентина Андреевна**

**КАЖДОГО ЖДУТ ДОМА**

Рассказы, повесть

На чувашском языке

Редактор М. П. ЕГОРОВ
Художник Ю. И. БОГДЯЖ
Художественный редактор Е. Е. МИХАЙЛОВА
Технический редактор В. М. МИХАЙЛОВ
Корректор Н. Н. МАСЛОВА

НТ 11600. Сдано в набор 16/IX-1971 г. Подписано к печати 27. 07. 1972 г. Изд. № 57-71 г. Формат 84×108 1/32. Бумага типографская № 3. Физ. печ. л. 2,625. Услов. печ. л. 4,41. Учетно-изд. л. 4,39. Тираж 6000 экз. Заказ 4817. Цена 16 коп.

**7-3-3**

**57--71М**

ПРОВЕРЕНО
2010 13 СЕН 2017

## ТĂВАН ЯЛ

Аякри хуларан тăван ялне килекен ватă хĕрарăм автобусран чи юлашкинчен, васкамасăр, кăштăртатса тухасшăнччĕ. Ара, ăна кунта никам та кĕтмест-çке. Хапăлласа йышăнакансем тахçанах вилнĕ пуль ĕнтĕ. Тата таçта ĕлкĕресшĕн те хыпаланмалла мар. Анчах та çынсем хыçне тăрса юлма хал çитереймерĕ. Чун тухса ӳкесле сикет, чĕнет: хăвăртрах, хăвăртрах! Тӳсейми илĕртет çуралнă çĕршыв. Ăна курас, ыталас, çупăрлас килет. Хăçантанпа асăнса пурăннă тăван яла килес пирки. Кулленхи ĕçхĕл тыткăнĕнчен хăпайманни шав ĕмĕте татса тăнă.

Миçе çул ялтан тухса кайни! Пĕр ĕмĕр каялла. Тĕрĕсех. Амăшĕ вилсен, хулана ача пăхма илсе кайнăччĕ ăна. Хăй те ачаччĕ ун чух, çын ачине утьăкка сиктермеллеччĕ. Тав революцие, вăл тăлăх-туратсене çул уçса панă. Ĕнтĕ алăра кĕнеке. Вĕреннĕ мĕн тухтăра тухиччен. Ура çине тăнă, ырă пурнăçпа савăшасси çеç юлнă. Сикет-тухать кĕтмен тип шар—вăрçă. Фронта кайма тивнĕ врачăн. Сахал мар çĕнĕрен пурăнăç парнелет вăл аманнисене. Мирлĕ самана таврăнсан, каллех вĕренӳ, каллех ĕç, ĕç, ĕç.

Пурнăç пĕр пек тикĕс килмест. Ырринчен ытла шырлăхĕ нумай. Апла пулин те, утмăл пилĕк çула çитсе тăнине сисмен çак хĕрарăм. Канма ăсатаççĕ. Мĕнех, вилме те вăй пухмалла.

Ачаран чуна хурлантарнă ĕмĕт — алăра. Çын автобусран çамрăк хĕр пек сиккĕнсе тухрĕ. Шоссе хĕрри çеремлĕ. Кăшт шаларах кĕчĕ те çĕре лартрĕ хăйĕн тăпăлтăпăл чăматанне. Вара ярт! тăсăлса тăчĕ те тăван уй-хирĕн сиплĕ сывлăшне тарăннăн туртрĕ ăша. Ытла селĕмçке, кăкăра уçăлтарсах ярать.

Кăвак лентăпа кăшăл çавăрнă улăм шлепкине хывса пуçне якатрĕ турапа. Хĕвел шевли самант вылярĕ йăл-йăл çуталса кĕмĕлленнĕ çӳç пĕрчисем çийĕн. Чечеклĕ çӳхе кĕ-

пи ахаль те йĕркеллĕ, пурпĕрех, умран та, хыҫалтан та кăрт-кăрт турткаларĕ. Сумкинчен тĕкĕр кăларса пăхрĕ сăнне. Чиперех пек. Куҫсем ҫеҫ тем ыйтнăн сĕлкĕш, халсăррăн тинкереҫҫĕ. Ҫеҫке ҫинчи сывлăм тумламĕ евĕр йăлтăртататчĕҫ. Кам вĕрсе сӳнтерме хăйрĕ-ши?

Чăматанне ҫĕклесе утрĕ малалла. Нимех те хуман, алла усать.

— Анна Ивановна, чăматанна конфетпа ан тултар, йăтса ҫӳреме йывăр пулĕ,—тенĕччĕ ăна юлташĕсем.—Укҫине чылайрах ил. Укҫа-тенкĕ пулсан таҫта та, тем те тупса туянăн.

— Килтен илсе тухнă кучченеҫ темрен те паха, — тавăрчĕ вăл тусĕсене.

Ялта паллакан ҫын тупăнĕ-ши? Тантăшсем те сайраланнă пулĕ. Никам та палламĕ. Пуҫра пăшăрхантаракан шухăшсем явăнаҫҫĕ. Ватăра ача чунĕ ларать ҫав. Ҫавăнтах вĕҫсе каясла савăнать. Ара, тăван тавралăх ытамĕнче-ҫке ҫын.

Сылтăмалла сукмак пăрăнать. Ку ĕнтĕ ыраш пусси урлă яла тӳррĕн илсе ҫитерекенни. Сукмакăн икĕ айккипе вăрăм хăмăллă, тулли пучахлă ыраш кăрр ӳсет. Каснăтатнă утмăлтурат чечекĕпе илемлетнĕ, сарă хăмапа тытнă хӳме пек вăл.

Ĕлĕк те пурччĕ ҫак сукмак. Ура айĕнчи ҫĕр йышлăн таптанипе тимĕр пек хытса, урлă-пирлĕ лăш-лаш ҫурăлатчĕ. Ытларах кунта турра кĕлтăвакансем таҫти ялтан та ҫӳренĕ чиркĕве.

Темшĕн куҫ умне чуна нумай тарăхтарнă, кӳпшек питлĕ, вăрăм ҫӳҫлĕ, ҫытар хырăмлă пуп тухса тăчĕ. Пайтах ăш пиҫнĕ пуп патĕнче ĕҫлесе. Нихăҫан та манăҫа тухмасть ҫав вăхăтри асаплă пурнăҫ. Ҫĕр ҫинче—патша, ялта пуп хуҫаланатчĕ.

Анна Ивановнăна ун чух Анук тесе чĕннĕ. Сакăр ҫула ҫитнĕ ҫĕрелле пысăк хуйхă пырса ҫапать: ҫемьене тăрантакан юратнă ашшĕ вилет. Анук чи асли, кĕҫĕннисем татах иккĕ. Амăшĕ хыпса ҫуннă вăхăтра ял пупĕ пырса кĕрет.

Чеескер пулнă пуп. Кам мĕнле инкеке кĕрсе ӳкнине хытă сыхланă, уйрăмах тăлăха юлакансене курса тăнă. Турă ячĕпе вĕсене хăйшĕн ĕҫлеттерме меллĕ-ҫке.

— Хирхенетĕп сына,— текелене пуп, чăвашла пĕлнĕпĕлмен чĕлхипе ачасен амăшне. — Аслы хӳрна маи пыта яр. Усрып ăна. Матушкана пылăшкалатыр кышт-кашт. Амăшĕ хĕпĕртет, пупа тав туса ҫитерейместь. Нуша.

Ӑилте ырҫа тӗпӗнче шӑлса пуҫтарсан та савук ҫӑнӑх тупӑнмӗ. Ҫуркуннехи выҫӑ уйӑхра пӗр ҫӑвар ҫӑкӑр теме тӑрать.

— Ӑран ирех пӑтӑр иппын, — каласа хӑварать пуп тухса каяс умӗн.

Хыт кукарӗпе, ӗмӗтсӗрлӗхӗпе, ҫӑткӑнлӑхӗпе палӑрса тӑнӑ ҫак пуп таврара. Ӑӗсйинчен нихӑҫан та, никама та пус укҫа кӑларса паман. Тарҫисем ҫакӑншӑн тарӑхнӑ, вӑрах ӗҫлемен, пӑрахса кайнӑ.

Хӳтӗсӗр тӑлӑх-турат тупӑннӑшӑн ку хутӗнче пуп ҫӑвкаланса кӑна ҫӳренӗ.

Анук калаҫса татӑлнӑ пек ирхине пычӗ пуп патне. Ҫитерессе кӗтрӗ хӗрача. Пупӑн хырӑмӗ тутӑ, ҫын выҫҫине сисмест. Сиссен те пӗлмӗш пулать.

— Исӗ мын кыркка чипписене пыхӑн. Атья тухар картышне,— чӗннӗ пуп Анука.

Чӑн-чӑн кӗтӳ. Ӑун чухлӗ кӑркка Анук тӗлӗкӗнче те курман. Чӗпписем икҫӗр пуҫа та ҫитеҫҫӗ пулӗ. Пӗчӗк ҫӑмха пек йӑпӑртатаҫҫӗ ваттисем тавра. Вӗсем, путех, ҫӑмарта ӑшӗнчен тухни те нумаях пулмасть. Пысӑк кӑркkисем темиҫе. Хӗрлӗ алкисене чӗтрентерсе, ҫунаттисене сарса кӑлтӑртатаҫҫӗ. Мӗншӗн кун чухлӗ кӑркка усрать?

Пуп кӑркка какайӗ юратнӑ-мӗн. Уйрӑмах пӗҫерсен, тепӗр кунне, хырнӑ йӳҫ кӑшман сӗрсе ҫинӗ вӑл эрех сыпасыпа.

Анука вӑрӑм патак тыттарчӗҫ. Кӑркка кӗтӗвне пахчана илсе тухмалла. Пуп пахчи аслӑ. Улмуҫҫисем, чие йывӑҫҫисем, ҫырла тӗммисем ӳсеҫҫӗ. Хыҫра — ҫеремлӗ вырӑн. Ҫакӑнта уҫӑлтарса ҫӳремелле иккен кӑркка йышне.

Тӳпере хурчӑкасем ярӑнаҫҫӗ, чӗпӗсене вӑрласшӑн. Чупкаласа ҫеҫ ҫӳрет пӗчӗк кӗтӳҫ, хӑлатсене патакпа юнать, кшу-у! хӑвалать вӑрӑ-хурахсене.

Хуралт хыҫне пытаннӑ пуп пӗчӗк тарҫӑ ӗҫне сӑнаса тӑнӑ. Лешӗ пӗр вырӑнта лара-тӑра пӗлмен, вӗлтӗртетсе кӑна ҫӳренӗ. Шӑп алла лармалласкер, хӗпӗртенӗ хуҫи.

Ӑун иртрӗ. Анука никам та ҫӑкӑр татӑкӗ тӑсса памасть. Выҫӑ хырӑмне уткӑшкарӗ чӑмласа лӑплантарчӗ. Макӑрчӗ те, пайти ҫук. Ӑаҫхине амӑшӗ пӗҫернӗ курӑк яшкине сӑрпалантарчӗ вара. Иккӗмӗш, виҫҫӗмӗш кун та Анук выҫӑллӑ-тутӑллӑ кӗтнӗ кӑркка кӗтӗвне. Ӑапла юрамасть, чееленмелле. Ӑӑркка чӗпписене ҫитерме вир пӑтти пӗр чӗрес парать пуп майри. Сӗтпе пӗҫернӗскер. Пӑхсан сӗлеке юхса анать. Тутлӑ пулма кирлӗ. Нумайччен шухӑшласа тӑмарӗ Анук, чӗресе хӑй умне лартрӗ те тытӑнчӗ

çиме ывăçла-ывăçла илсе. Сивĕнсе хытнă пăтă каснă çăкăр чĕлли пек кăпăлт! хăпăнса илĕнет. Тăранчĕ хĕрача. Хырăм кăнтăрла та, каçалапа та выçать. Эппин, вир пăттине кайран çиме пытармала. Вăл хупах çулçи татать те унпа пăтта чĕркесе карта хăми çумне пытарса хурать. Юлашкине чĕпĕсене сапса пачĕ.

Кунĕпех тутă, капла ĕурăнма та юрать.

Киле тавăрăнсан, Анук кăмака хысĕнче тем çинчен пăшăлтатрĕ йăмăкĕпе.

— Вапюк шăллăма та илсе пыр, — хушрĕ вăл амăшĕ илтиччен.

Тепĕр кунне ирхине пуп пахчи кĕтессинче икĕ ача чарăнса тăчĕ. Анук чупса пычĕ те вĕсем патневаскаса каларĕ:

— Тăхтăр кăшт, пăттине илсе тухаймарĕç-ха. Выльăр.

Ачасем çеç те мар, кăркка чĕпписен те çиес килет. Шимплетеççĕ.

— Ан та йăнкăртатăр! — çиллессĕн хăмсарать чĕпĕсене Анук вăрăм патакĕпе. — Пăтă лекмест сире паян.

Нумай та вăхăт иртмерĕ пуп кухарки каллех сĕтпе пĕçернĕ тулли пысăк чĕрес вир пăтти илсе тухса лартрĕ. Вăл каялла кĕрсе çухалсанах, виçĕ пĕчĕк тăван пĕрле пуçтарăнса ларчĕç те айлантарчĕç пăтта ним юлмиччен. Варта каскалать, нимех те мар, лашалла выляса чупса çÿресен иртет.

Эрне хушши тăранса пурăнчĕç ачасем çапла майпа. Инкекĕ те çумрах çапкаланнă. Пупăн кăркка чĕпписене чĕмĕре вăтăрма тытăнать. Месерле кайса ÿкеççĕ те урисемпе тапăлтатаççĕ, вара шăпăрт пулаççĕ.

Пуп пăшăрханать. Капла кăрккасăр тăрса юлать пачах.

— Мин полчĕ? — ыйтать пуп хĕрачаран. Анук кăркка чĕпписем мĕншĕн кĕлернĕ сăлтавне питĕ пĕлет, шарламасть. Аптранă енне пуп унăн амăшне чĕнтерет. Ятларĕ кăркка чĕпписене начар пăхнăшăн, ĕçрен кăларса ярассипе хăратрĕ.

— Турăран хăрăр, сасартăках çапса ан хуçăр ĕнтĕ пире,— тилмĕрчĕ тăлăх арăм.— Хĕрĕмпе юмахласа пăхам.

Анук киле таврăнсан, амăшĕ сăмах тапратрĕ:

— Кăркка чĕпписем вилеççĕ-çке сан.

— Вилĕçин,— терĕ Анук пĕр шелсĕр.— Выçă вĕсем. Ним пытармасăр йăлтах каласа пачĕ хĕрĕ.

Хырăм выççине никам та тÿсеймест.

Амăшĕ пуп патне пычĕ те каларĕ:

— Эсир кăркка кĕтӳçне вуçех апат памастăр. Чĕрĕ чун çиесшĕн.

Пуçне çавăрсах шухăшларĕ-тĕр пуп. Урăх çын тытас, пушшех хакла ларать. Хĕрача нумаях çиеймĕ. Тытăнчĕç вара ир-каç шӳрпепе тăрантарма.

Тепĕр мыскара асне килчĕ те, хăй тĕллĕнех лĕх-лĕх кулчĕ, ыраш пуссинчи сукмакпа утакан Анна Ивановна.

...Мункун умĕн типĕ тытрĕç çынсем. Кайран чиркĕве çылăх каçарттарма пухăнчĕç çемйипех. Анука черет çитрĕ. Шак-шак шаккать ăна пуçран пуп.

— Кыла, исĕ тип тытнă выхытра аш-какай çисе çылăха кимерĕн-и?

— Эпĕ çимен,— кăшкăрчĕ çиллес сасăпа Анук.— Эсĕ ху какай çисе çылăха кĕтĕн. Сирĕн урайне çума пырсан, эсĕ какай çинине хам куçпа хам куртăм.

Çак калаçăва илтнĕ чиркӳри халăх тих! тих! кулчĕ вăрттăн. Пуп çилленнипе чутах çурăлса каймасть. Хăй çапах та илтмĕше, ăнланмăша хывре. Анука кăна пуçран вирлех тивет татах:

— Кыла, тип тытнă выхăтра эсĕ сӳт ĕçсе çылăха кимерĕн-и?

— Эсĕ ху сĕт ĕçсе çылăха кĕтĕн, — тет Анук. — Кĕпе çума пырсан чăланта сĕт ĕçсе тăнине хам куçпа хам куртăм-иç.

Ку хутĕнче çынсем тутисене тăп тытса тăма вăй çитереймерĕç, сасăпах ахăлтатса кулса ячĕç.

— Антихрист! Тухса кый чиркӳрен! — Çат! çапрĕ пуп Анука ĕнсерен. Чикеленсех ӳкрĕ хĕрача, пурпĕрех йĕмесĕр тӳсрĕ.

Каллех пуп Анук амăшне хăй патне чĕнтерет. Çĕр тепле тӳсет çухăрашса ятланине. Хĕрачапа амăшне хăйсене чиркӳре çапла ирĕклĕ тыткаланăшăн турă амăшĕ умĕнче каçару ыйтса, çĕр хут пуççапма хистет.

Ял хĕрарăмĕ шухăшласа тăчĕ-тăчĕ те çиеле тухма пикенчĕ:

— Чим-ха, пачăшкă, хăв айăплă-иç. Ача умĕнче мĕншĕн какай çирĕн, мĕншĕн сĕт ĕçрĕн? Ача-пăча ялан тĕрĕссине çеç калать. Хăвăр çапла вĕрентетĕр-çке.

Хăратма та шутларĕ.

— Сан пачăшкă, турăран каçару ыйтса çĕр хут пуççапма тивет. Анукăн курса тăмалла çакна. Унсăрăн тем курса тăрăн, архирей хăлхине çитерĕç.

Шартах сикрĕ пуп. Чăнах, ĕç капла та çавăрăнса ларĕ. Чиперех вырăнтан тухса ÿкĕн.

— Çÿр хут нумыйрах! — хирĕçлет пуп, — аллы çитет.

— Апла мар ĕнтĕ, пачăшка. Икĕ хутчен çылăха кĕнĕçке, какайне те çинĕ, сĕтне те ĕçнĕ. Çĕр хутах! — каланинчен чакман Анук амăшĕ.

Хăравçă чунлă пуп ирĕксĕрех килĕшет. Чиркÿре, алтарь умĕнче, пуп чĕркуçленсе ларнă. Айккинче Анукпа амăшĕ пуп урай хăмине çамкине перĕнтерсе илнине пăхса тăнă, миçе хутчен перĕнтернине шутласа пынă.

Çак хыпар халăх хушшинче апла та, капла та йăваннă. «Чее хĕрарăм», — мухтанă Анук амăшне çынсем.

Хыпар пуп майрин хăлхине те кĕнĕ. Тавăрма шутлать. Анук амăшĕн чунне ыраттармаллах мăшкăлласшăн. Мĕнле майпа? Нумайччен пуçне муритлесе çÿренĕ.

«Тавçăртăм, — хĕпĕртенĕ вăл пĕррехинче. — Чăваш хĕрарăмне сыснапа танлаштарăп. Анук амăшĕ ларса макăрĕ».

Сад пахчине тухать те пуп майри, улмуççи айĕн тытăнать упаленме. Хĕрлĕ питлĕ, анчах çĕрĕк, панулмисем суйлать вăл. Пĕр аркă пуçтарса кĕчĕ хайхискер. Тирĕк çине майласа хучĕ панулмисене. Кĕтет Анука, чÿрече умĕнчен каймасть.

Хĕвел анас умĕн, Анук хиртен кăркка кĕтĕвне хăваласа таврăнчĕ.

Йăпăр-япăр тухрĕ крыльца çине пуп майри.

— Эй! — чĕнчĕ вăл Анука, шурă шăлне кăтартса. — Кил-ха кунта!

Алкум вĕçне пырса тăчĕ хĕрача.

— Сан аннÿ валли кучченеç хатĕрлерĕм. Ме, кайса çитер, — тыттарчĕ вăл ăна панулми тултарнă тирĕк.

Хĕпĕртерĕ Анук. Хĕрлĕ питлĕ панулмисене çăтса ярасла пăхрĕ. Хăй те сисмерĕ, йăпăр-япăр ярса тытрĕ пĕрне. Чăмăртарĕ. Мĕн амакĕ? Пÿрнесем хушшипе чуста евĕр тем пăчăртанса тухать. Пăхрĕ. Çĕрĕк иккен. Татах тепĕр панулмине илчĕ, ку та — çĕрĕк! Йăш! пăхрĕ Анук куçне хĕссе пуп майри çине. Мăнаçлăн тăрать каçăрăлса, хальхаль ахăлтатса кулса ярасла. Анук унăн киревсĕр шухăшне тÿрех ăнланчĕ.

— Ман анне панулми юратмасть! — кап! тыттарчĕ вăл тирĕке пуп майрине. — Сирĕн валли ку панулмисем шăпах шăл çемми. Çийĕр хăвăр!

Çакна кĕтмен пуп майри çухалса кайрĕ, чунĕ кÿтсе

хăпарчĕ. Хапха патнелле лăпкăн утакан Анука тытса чарасшăн кăшкăрчĕ:

— Эй, тарçă, ку панулмисене сыснасене кайса панă пул!

Çавăрăнса та пăхмарĕ мăнкăмăллă хĕрача.

Анна Ивановна ачалăхри самантсене аса илсе пынă май сукмак вĕçне те тухрĕ. Чарăнса тăчĕ. Ывăç тупанĕ çинчи пек курăнать кунтан тăван ял. Ĕлĕк малтан чиркӳн хĕреслĕ шĕвĕр тăрри куç ытамне тулатчĕ, унтан çĕр çумне лăпчăннă, тăррисене улăм витнĕ, ун çийĕн ленкерсем уртса янă пӳртсем курăнатчĕç. Халĕ ял хăйĕн сăн-сăпатне улăштарнă. Чиркӳ çук. Урамсен икĕ енĕпе тимĕр е шифер витнĕ çуртсем лараççĕ ешĕл йывăççем хушшинче.

— Сывлăх сунатăп, сана, мана çутă кун панă ялăм! — саламларĕ пуç тайса Анна Ивановна. Куçĕсем шывланчĕç.

Тăкăрлăкпа аслă урама тухрĕ. Çавăнтах икĕ хутлă чул çурт. Куçлăхне шăлса илчĕ хăна. Вуларĕ. Шкул. Мĕнле чаплă шкулта вĕренеççĕ ку чухнехи ача-пăча. Юнашарах — клуб, магазин. Чиркӳ вырăнĕнче сад пахчи. Шалта чул çуртсем курăнаççĕ. Мĕнле çуртсем-ши? Ача ясли.

Утать Анна Ивановна тăван ялĕнче. Унччен те пулмасть урам варрипе хĕрлĕ галстуклă ачасем стройпа пынине асăрхарĕ. Параппан тăнкăртатнă май харăс-харăс пусаççĕ. Хушăран горн сас парать.

Аякри хуларан тăван ялне килекен хĕрарăмăн кăмăлĕ уçăлса çĕкленчĕ. Çук, кусем пуп патĕнче тар юхтармаççĕ. Сыншăн çурăм авмаççĕ, мăшкăлла ĕçе пĕлмеççĕ. Кусем совет çĕршывĕн ирĕклĕ, телейлĕ ачисем.

Анна Ивановна патне темиçе ача чупса пычĕ. Вĕсемпе пĕрлех вожатăйсенчен пĕри. Сывлăх сунчĕç вĕсем. Чăматана ярса тытрĕç.

— Эсир — Анна Ивановна. Çапла-и? — чĕвĕлтетрĕ пĕри. — Эсир медицина наукисен кандидачĕ.

— Ăçтан паллатăр мана? — тĕлĕнчĕ хĕрарăм.

— Ял историне тĕпченĕ чух, сирĕн çинчен йăлт пĕлтĕмĕр, — тăрăшсах ăнлантарать икĕ çивĕтлĕ хĕрача. — Сирĕн сăнӳкерчĕкĕрсене хаçатран касса илтĕмĕр те альбома çыпăçтартăмăр.

— Анна Ивановна, атьăр пирĕн пата,— чĕнет виççĕмĕшĕ.

— Вăл пирĕн пата пырать! — тавлашса кайрĕç ачасем.

Анчахрах çеç Анна Ивановна ялта çывăх çын тупаймасран пăшăрханнăччĕ.

— Ман асанне сире час-часах асăнать, — кăна сарă çӳçлĕ хĕрача каларĕ. — Анук яла ма пĕртте килсе курмасть-ши? Хамăр патăртах усрăттăмăр, тет. Эсир пĕчĕккĕ чух ман асаннепе выляса ӳснĕ.

Хăна чăр-р пăхрĕ хĕрача çине. Паллана сăн. Кама аса илтерет? Вăл ачалăхри хĕрачасене суйларĕ.

— Эсĕ Уçтин сăнлах, çавăн мăнукĕ мар-и?

— Тĕрĕс! — хĕпĕртерĕ хĕрача хăйне палласа илнишĕн.

— Анна Ивановна, сире хам пата чĕнетĕп, — тет вожатăй. — Эпĕ учительница, ку ял шкулĕнче ĕçлетĕп. Халĕ лагерьте ачасен вожатăйĕ.

— Тавтапуç! Пырăп та.

Шап-шурă темиçе чӳречеллĕ чул çурт тĕлне çитрĕç. Хапха умĕнчи сак çинче пĕр карчăк ларать. Ăна курсан паçăрхи сарă çӳçлĕ хĕрача кăшкăрса ячĕ:

— Асанне, кур-ха, мĕнле хаклă хăна илсе килетĕп!

Самант та иртмерĕ, ача чухнехи туссем пĕр-пĕрне ыталаса илчĕç. Кулаççĕ, макăраççĕ хăйсем.

Чăнах, хаклăран та хаклă хăна пулчĕ тăван ялта Анна Ивановна.

## ҪАШНИНЕХ КИЛТЕ КĔТЕÇÇĔ

Хулари милици уйрăмĕнчен пĕри тухрĕ. Хĕрарăм. Вăтам пӳллĕскер. Алăк шалт! хупăнса юлчĕ ун хыçĕнче. Урамра ун-кун пăхкаларĕ хĕрарăм. Çын килни курăнмасть. Вара йăпăр-япăр аллине хыçалалла ярса, çурăмне хыпашларĕ.

— Турра шĕкĕр, кунтах, — терĕ пиçиххи хушшинчен çӳхе тĕрке йăшт! кăларса.

Мĕн-ши? Укçа тĕрки тем. Çапла. Ав, хыпалансах шутлама тытăнчĕ.

— Тĕрĕс-тĕкел, икçĕр аллă тенкĕ, — мăкăртатрĕ татах хĕрарăм хăйпе хăй. — Сĕт туянатăп ĕнтĕ. Тӳсмелле мар сĕт çиес килет.

Хăлхара çаплах милиционер сасси янăрать. Çамрăк кăна, сĕтел çапса вăрçать хăямат: «Спекулянт! Сутмалăх

çăкăр ăçтан тупнă эсĕ?.. Вăрлани ку сан!.. Законпа айăпланан!»

— Вăрлани мар, — мăкăртатрĕ каллех хĕрарăм. — Юн çăкри! Тĕнче хĕсĕр мар, этеме ăнланакансем те пур.

Ерипен утрĕ хĕрарăм малалла, хăй çулĕпе. Уринчен ури аран иртет. Ватăлнăран-и? Çук. Чараксăр чĕлхелли калĕ: «Ку хĕрарăм хĕрĕхелле çитнех...» Ун пеккине илтсен-тусан никам та ан ĕнентĕр. Вăл мĕнпурĕ те çирĕм саккăра кăна пуснă.

Çăт-çат илтĕнет ун уттинче. Йывăç тупанлă пушмак çапла сас парать пылчăка çăрнăçем. Тĕршĕннĕ. Çийĕнче кивĕ пальто. Тĕссĕр пысăк тутăр пĕркеннĕ. Куçĕсем ытла та сĕлкĕш. Эппин, вăй иксĕлнĕ. Апла пулин те, чунĕнче савăнăç хĕлхемĕ йăлкăшать. Халĕ ăна пĕр-пĕр çывăх юлташĕ тĕл пулса: «Мĕнле пурăнан, Хвайкка?» — тесе ыйтсан, мĕн калĕччĕ-ши вăл? Пытарĕччĕ-ши вăл хăйĕн савăнăçне, милицире тин çех пулса иртнĕ пăтăрмахне? Темĕн çав. Ăнланать Хвайкка. Шапăлтатни килĕшмест. Кашни çын çумне тикенек евĕр хуйăх çыпăçнă. Вăрçă авать пурне те. Акă Хвайккан хăйĕн те упăшки фронтра, хаяр тăшмана хирĕç çапăçать, ачи-пăчи килте çиме ыйтать. Хĕссепĕссе тыткалан, хире-хирĕç сыпăнмасть ним те. Çăкăр çеç-и, паранки те виçеллĕ ку чух.

Юнашарах Атăл. Унăн кăваккăн-хуран курăнакан хумĕсем çырана çиллессĕн пыра-пыра çапаççĕ. Çĕр çинче вăрçă пынăшăн айăп тăвать тейĕн çырана. Атăлтан ту сĕвекĕ тăрăх çӳçентерекен сивĕ сывлăш хăпарать. Çурçĕр енчен вĕрекен аскăн çилĕ те канлĕх памасть, çĕр питне тухатмăш шăпăрĕпе шăлать каллĕ-маллĕ, тустарать, йĕплет пит-куçа, кĕр пылчăкĕ çине сапа-сапа илет юр кĕрпине.

Утать Хвайкка Шупашкар урамĕпе. Темшĕн курпунĕ те тухнă. Ăна виçĕ çул каялла тĕл пулнисем тĕлĕннĕ ун чиперлĕхĕнчен. Таврара тупăнман унашкал хитри. Сайра чăн-чăн пикесем. Пĕр пичĕ — Хĕвел, тепĕр пичĕ — Уйăх. Сенкер куçĕ çăлтăр пек йăлтăртатнă. Кулли те йĕс шăнкăрав сасси. Пĕвĕ-сийĕ — çурта. Ахальтен мар хуса çитсе иртен çын çаврăнса пăхмасăр тӳсеймен. Тепри, сĕмсĕрри, йăлт! пăхса илнипе çырлахман, умлă-хыçлă пуçне пăрнă хыçалалла, çăтса ярасла. Хвайкка айванран тăрăхласа кулнă çеç:

— Татах, татах çаврăнса пăх ĕнтĕ.

Упăшки — Тимĕр — ăнăçлă çын пулнă. Ятлаçман, хирĕçмен, кутăнлашман. Туслă, шăкăл-шăкăл калаçса пу-

рăннă. Кĕвĕç чунлисем ăмсаннă мăшăрсене. Йăпанмалăх пĕр ача çуратса панăччĕ Хвайкка. Упăшки каçсах каятчĕ хăй сăнлă пепкишĕн. Халĕ, ав, Хвайккан пĕччен икĕ ача пăхма тивет. Мĕнле йывăр! Кĕçĕннине ашшĕ курман таçке, фронта кайсан çуралнă. Ентĕ кăкăр пăрахтарма вăхăт ачине, анчах ăна амăшĕ шеллет. «Мĕн ашшĕ таврăниччenex ĕмĕртетĕп»,— тет. Хăçан таврăнать упăшки? Никам та каласа параймасть. Малтанхи вăхăтра çырусем килсе тăратчĕç. Хĕрхенсе те йăпатса çыратчĕ:

«...Юратнă арăм Хвайкка. Ытлашши ан кулян. Пĕлетĕп сана икĕ ачапа саплашса пурăнма питĕ хĕн. Асра тыт, халĕ никама та çăмăл мар. Тÿс. Эпир хаяр тăшмана çапса аркатсанах çĕнтерÿпе таврăнатпăр. Вара сана алă çинче кăна йăтса çÿрĕп. Пĕчĕк хĕрĕмсене ман çинчен аса илтерсех тăр. Ашшĕне ан манччăр, унсăрăн таврăнсан ютшăнса тăмалла пулĕ».

Хвайкка упăшкин кивĕ çырăвĕсене çеç вуласа пурăнма тытăннăранпа часах çулталăк çитет. Ăçта-ши вăл?

— Атте час таврăнать-и? — ыйтать аслă хĕрачи, амăшĕ сĕтелтен виçĕ кĕтеслĕ çырусене илсе вулама ларсан.

— Эсир çав тери кĕтсен таврăнать, — тет те амăшĕ, пуçне айккинелле пăрать. Юхса анакан куççульне ачисене кăтартасшăн мар вăл.

Урам енчи чÿрече умĕнчен каймаççĕ-тĕр халĕ ачисем. Амăшĕ таврăнасса кĕтеççĕ. Хырăмĕсем выçрĕç пулĕ. Савăнĕç-ха паян пĕчĕккĕскерсем.

Хвайкка васкать. Туллипе таврăнать вăл килне. Кĕсйинче ун хутпа чĕркенĕ услам çу катăкĕ. Вăл ачисем валли яшка пĕçерĕ çу ярса.

Çу... Çынсем вăрçă пуçланнăранпа ун ятне те манчĕç. Ара, лавккара çу тавраш çук. Ахальтен мĕн тума асăнас? Çу çеç-и, лавккара какай тĕсĕ те курăнмасть. Айăп каллех — вăрçăра. Хăçан тĕп тăвĕç çав ирсĕр фашист йăхне.

Услам çу... Сап-сарă тĕслĕ. Курсан сĕлеке юхать. Чĕрне вĕçĕпе хырса чĕпĕтсе илнĕ ясмăк пысăкăш çăва чиксен çăвара, вăл юр пĕрчи евĕр ирĕлет, чĕлхе çине тутлăн-тутлăн сарăлать.

...Малашне каллех Хвайкка çемйинче çăкăр ытларах пулĕ. Çăкăр! Вăл çынна пурăнăç паракан çимĕç. Çăкăр ылтăнран та хаклă. Çăкăр тăраниччен çименни çынна халсăрлатать. Ачасем хăйсен карточкипе илсе панă çăкăр татăкне, чи тутлă премĕк çинĕн, самант хыпса çăтаççĕ. Кайран каллех амăшĕ куçĕнчен пăхаççĕ çиме ыйтса.

Киле ҫитсен, Хвайкка аслă хĕрне савăт тыттарса сĕт илме ярĕ. Сĕт ҫиесшĕн паян вăл тем пама хатĕр. Юрать кӳршĕре Шапошковсем ĕне усраҫҫĕ. Каҫсерен сĕт сутаҫҫĕ вĕсем. Сĕчĕ мĕн тери хаклă! Ĕҫ укҫипе илсе ҫиеймĕн. Четвĕрчĕ икҫĕр аллă тенкĕ тăрать. Хвайккан уйăх укҫи — мĕн пурĕ те пилĕкҫĕр тенкĕ. Ку шăп икĕ четвĕрт сĕт илме ҫитет.

Кӳршĕ хĕрарăмĕсем, Хвайккана тĕл пулса, ылханаҫҫĕ асаплă пурăнăҫа. Пĕр-пĕри Шапошков арăмне ăмсанса илет: «Упăшки килте. Фронта кайман. Ҫăкри те ытлăн-ҫитлĕн. Сĕт ҫиет. Упăшкапа ҫыврать...»

— Кайран фронтран килекенсен куҫĕнчен мĕнле пăхĕ-ха вăл? — хушса хурать вара ушкăнтан тепри.

Часах кĕтсе илеҫҫĕ шăнкăрчă чĕпписем амăшне. Хвайкка темиҫе кил урлă ларакан улттăмĕш вăтам шкул тĕлне ҫитрĕ.

Ячĕ ун шкул та-ха, анчах кунта ача-пăча сасси тахҫанах ҫухалнă-ҫке. Ҫар госпиталĕ кунта. Хвайкка паян милицине лекесси те пĕтĕмпех ҫак госпитальпе ҫыхăнса тăрать.

Пĕррехинче Хвайкка ĕҫлекен цехра комсомолецсене пухрĕҫ. Кирлĕ калаҫу. Хула комитетĕнчен ятарласа ҫын килнĕ. Пуҫласа ҫĕнĕ хыпар илтрĕ Хвайкка ҫак пухура: Шупашкарта ҫар госпиталĕ уҫаҫҫĕ. Паян-ыран аманнисен малтанхи ушкăнĕ килсе ҫитет. Госпиталĕн пĕр палати те шефсемсĕр юлмалла мар. Сусăрланнисен хушшинче, паллах, вăйсăррисем те пурах. Вĕсене юн кирлĕ. Шанчăк комсомолецсенче. Донорсен ретне тăмалла.

Пуху хыҫҫăн пĕр-ик кунтан ҫамрăк хĕрарăмсем, хĕрсем юн тĕрĕслеттерме кайрĕҫ. Хăшин виҫҫĕмĕш, хăшин иккĕмĕш группăллă юн. Хвайкка юнĕ пĕрремĕш группа.

— Пĕрремĕш группăллă юн вăл ыттисемшĕн ырлăх, пурне те юрăхлă, хăйшĕн шырлăх, — тет цехра пĕрле ĕҫлекен сарă хĕр.

— Мĕншĕн апла? — ыйтать Хвайкка.

— Сасартăк инкек: хăвна юн ямалли самант килсе тухать, — ăнлантарать сарă хĕр. — Сан чĕрӳ пĕр хăвăн йышши юна кăна йышăнать. Туп-ха ун пек ҫынна.

Хвайкка нимĕн чухлĕ те хыпăнса ӳкмест.

— Пулин, — тет вăл аллипе сĕлтсе. — Килте ларнă чух мĕн инкек-синкекĕ пултăр. Ман юн пур ҫынна та ҫырлахтарать. Пайти — ҫакă. Куншăн савăнатăп.

Темĕн чухлĕ вăхăт иртрĕ. Тен, эрне, тен,—иккĕ. Госпитале юн кирлĕ. Икĕ ача амăшĕ пулин те, Хвайкка юн

пама чи малтан килĕшет. Темшĕн ăна хăйĕн упăшкине те илсе килессĕн туйăнать госпитале. Апла пулмасан, ыттисем сывалччăр. Кашни çыннах халĕ фронтран ырăсывă таврăнасса кĕтеççĕ килте.

Сĕтел çине выртгарчĕç ăна. Шурă çиттипе витрĕç. Тухтăр юнашарах. Хавхалантарать сăмаххипе:

— Сан юн, Хвайкка, хальхи вăхăтра çав тери кирлĕ. Эсĕ темиçе çынна вилĕмрен хăтарса хăварма пултаран. Тылри донор вăл чăн-чăн фронтовик.

Пурте хатĕр. Хвайкканне сылтăм аллинчен юн илеççĕ. Йод сĕрчĕç. Сестра сарлака шăтăклă йĕппе Хвайкка хулне шăтарчĕ. Мĕн амакĕ? Юн юхмасть.

Пăлханать Хвайкка. Апачĕ начар, тен, пĕр тумлам юн та çук-и, тен?

— Тухтăр юлташ, пулăшăр, донорăн юн тымарне тупаймастăп,— тет сестра.

Тарăхмасть тухтăрĕ, ятламасть те çамрăк сестрана. Лăпкăн кăна йĕппине илчĕ те юнашарах шăтарчĕ тепĕр хут. Тинех палкаса тухрĕ юн. Икçĕр грамм илчĕç малтанлăха. Çитет. Хвайкка хăй çавăн чухлĕ юн пама килĕшнĕ.

Кайран донорсене сĕтел хушшине чĕнчĕç апатланма. Турилккере вĕри яшка пăсланать. Пӳлĕмре тутлă шăршă. Тĕлĕнтермĕш, çăкрине те хурса панă-çке. Хвайкка ыттисем пекех кăн-кан пăхкалать. Пурте ăнланчĕç, кунта хăнара мар, сăйласа тăракан çук. Лартса панă, çи. Сыпрĕ те сыпрĕ яшкине Хвайкка, çăкăрĕ — ачисем валли. Тахçанах çименччĕ-ха вăл какай шӳрпи. Кăмăл та çĕкленчĕ унапатланнă май. Юнашар ларакан леш сарă хĕре чавсипе кăт тĕкрĕ те каларĕ шăппăн:

— Итле-ха, эпĕ юн чакнине ним те туймастăп.

— Эпĕ те,— пĕлтерет, кӳрши.

Ĕç-пуç апат çитерниреп çырлахмарĕ-ха. Çийĕнчен укçа тӳлерĕç. Ку çеç-и? Çук. Кашни кун ултçĕр грамм çăкăр илсе тăма карточка пачĕç.

— Пурте тухтăр пӳлĕмне, — пĕлтерет шурă халат тăхăннă сестра.

Шавламасăр, шăппăн кăна кĕрсе вырнаçрĕç хĕрарăмсем йыхăрнă çĕре.

Сĕтел хушшинче ларакан тухтăр ура çине тăчĕ. Сăмси çинчи куçлăхне çамки çине хăпартрĕ те сăмах пуçларĕ:

— Хаклă юлташсем, сире пурсăра та тав. Паян çар госпиталĕн икĕ палати аманнисемпе тулчĕ. Хăшпĕрисен пурнăçĕ çип çинче тытăнса тăрать. Сирĕн юнсемпе тулнă кĕленчесене госпитале ăсатрăмăр та. Шухăшлăр-ха, си-

рĕн юн темиçе салтак пурнăçне çăлса хăварать. Вĕсем юсаннă хыççăн каллех хаяр тăшмана хирĕç çапăçма фронта кайĕç. Эсир хăвăр Тăван çĕршыв ирĕклĕхне хўтĕлекен чăн-чăн хастар салтаксем. Ырă ĕçĕре халăх ĕмĕр манмĕ.

Унтан юн панисене «Донор кĕнеки» парнелерĕç.

— Ку вăл сирĕн салтак кĕнеки, — тет татах тухтăр. — Мухтанăр. Эсир чăннипех те паттăр çынсем.

Ушкăнран тухса калаçрĕç. Вĕсем мĕн вăрçă пĕтиччене юн парса тăма пулчĕç.

Кĕнеке страницисене уçа-уçа хупнăн, шав иртеççĕ кунсем. Хвайкка татах юн пачĕ. Юлашки хутĕнче çăкăр карточкисĕр пуçне услам çу илмелли пичет çапнă хут тыттарчĕç. Анчах çав кунах туянма май килмерĕ, таварĕ çукчĕ лавккинче. Кайран хăйĕн вăхăт тупăнмарĕ. Заводран тухмасăр ĕçлерĕ вăл. Фронта пулăшмалла, фронта.

Паян ăна цехран хăваласах ячĕç: «Кан пĕр кун, унсăрăн ўксе вилĕн. Ачасене мунча кĕрт...»

Тухрĕ заводран Хвайкка. Ăна уçă сывлăш чыхăнтарчĕ. Темшĕн пуç çавăрăнать. Сулăнчĕ ўкеслех. Тăчĕ вара пĕр кана карта çумне тайăнса. Чĕре касăлса килчĕ. Хырăм выçă. Ирхине ăша пĕр хĕлхем яман. Урăххи ним те мар, сĕт аса килчĕ халь. Сĕт! Сĕт! Стакан сĕт ĕçсен сирĕлĕччĕ куç умĕнчи кăварлă ункă. Сĕт çимесен ўксе вилессĕн туйăнать ăна. Анчах енчĕк тĕпĕ яка. Мĕнле туянмалла? Четвĕрчĕ—икçĕр аллă тенкĕ. Мĕн сутса укçа тумалла? Килте çынна юрăхлă япала ним те юлман, тахçанах çĕрулмипе улăштарса пĕтернĕ. Сасартăк ун кучĕ умне çăкăр тухса тăрать. Сутас. Сĕт çинĕ хыççăн выççа та тўсĕп. Кайрĕ вара Хвайкка лавккана. Туянчĕ услам çу, çăкăр. Чĕлĕ касман çаврака çăкăр. Икĕ кунхи паек. Хăй çийĕччĕ, анмасть. Сĕт, сĕт ыйтать чун. Сĕт ĕçмесен юн типсе ларĕ. Тутăрпа витрĕ çăкăрне, вара пасаралла утрĕ. Хăй хăрать, вăтанать.

Пасарта çын хĕвĕшет кăна. Тем сутаççĕ, тем туянаççĕ. Хвайкка тутăр кĕтесне сирчĕ. Унтан çăкăр сăмси курăнать. Шикленет хĕрарăм. Пĕлет-çке çăкăрпа сут тума юраманнине. Унччен те пулмарĕ ума пĕр арçын пырса тăчĕ, хĕп-хĕрлĕ сăмсаллăскер. Аллинче — пулă.

— Сутатăн-и? — ыйтрĕ вăл.

Хвайкка килĕшнине пĕлтерсе пуçне сĕлтрĕ.

— Мĕн хак?

Ахальтен çеç сăмах ваклать арçын. Пасарăн хăйĕн йĕрки. Вăл пур япалана та хак парса тухнă. Пуçламан çăкăр хакĕ — икçĕр аллă тенкĕ.

— Туянатăп, — тет хĕрлĕ сăмса.

Хĕпĕртерĕ Хвайкка. Ĕçне хăвăрт тусан, инкек-синкек курмăн.

— Кӳр çăкăрне, тыт укçине!

Шута юрататъ укçа. Шутларĕ. Тĕрĕсех. Шĕкĕр турра. Çавăрăнса кайма тăнăччĕ, çак вăхăтра яп! ярса тытрĕ хайхискер алăран.

— Ах! Çаплипех каятăп тетĕн-и? Çăкăрпа сут тума юрамасть. Закона пăсатăн. Халех тыттарса яратăп сана. Милици! Милици!

Халăх капăр пухăнчĕ. Акă ăçта пит хĕретмĕш. Ваштах çитрĕ кăвак шинелли. Вăл иккĕшне те илсе кайрĕ милици уйрăмне. Хĕрлĕ сăмса хирĕçет, ун ĕçĕ: тыттарнă, пĕтнĕ. Каялла тавăрса патăр мана укçине.

Хвайкка çул çинче пытарчĕ укçа тĕркине çурăм çумне, пиçиххи хушшине. «Укçине памастăп, — шутларĕ вăл. — Ман сĕт туянмалла, сĕт çимелле. Сĕтпе юн хутшăнать. Юн фронтра аманнисене кирлĕ».

Милици уйрăмĕ. Сĕтел хушшинче — дежурнăй. Пичĕ-куçĕ çап-çутă. Пĕрре пăхсах паллă, вăрçăра тар шăрши шăршламан. Çиллес. Чĕнме памасть, тытăнчĕ Хвайккана сĕтел çапса ятлама.

— Спекулянтка! Сутмалăх çăкăр ăçтан тупрăн? Çынсем çăкăрсăр антăхаççĕ. Хăйсем çиес çăкрине фронта ăсатаççĕ. Эсĕ сутан. Вăрлани! Совет законĕпе айăпланатăн.

Хĕрлĕ сăмса кулса тăрать.

Çак вăхăтра çӳлти хутран тепри анчĕ. Ку чинпа аслăраххи пулас.

— Мĕнле шăв-шав кунта? — ыйтрĕ вăл.

— Спекулянткăна тытса килнĕ пасартан. Çăкăрпа сут тăвать.

— Суять! — кăшкăрса ячĕ Хвайкка тарăхнă сассипе. — Эпĕ спекулянтка мар. Эпĕ — салтак. Курăр акă!

Вăл кĕсйинчен донор кĕнекине кăларса сĕтел çине çатлаттарчĕ. Унтан лăпкăн çапла каларĕ:

— Ман сĕт çиес килет.

Асли хĕрлĕ хĕреслĕ пĕчĕк кĕнекене илчĕ те пăхрĕ уçкаласа. Куçĕсем çуталчĕç. Вара ним кĕтмен çĕртен Хвайккана алă парса:

— Спаççипă сире! — терĕ, — илĕр кĕнекĕре. Киле кайăр. Сывă пулăр.

Сĕтел хушшинчи çаврака питлĕ милиционер ăнланаймасть.

— Мĕнле кĕнеке вара ун? — тĕпчет.

— Салтак кӗнеки.

— Ҫак имшеркке хӗрарӑм фронтра пулнӑ-и?—тӗлӗнет ӑнланайманскер.

— Вӑл — тылри салтак, — ӑнлантарать асли.

Хӗрлӗ сӑмсаллине тытӑнчӗ тӗпчеме.

— Документ кӑтартӑр!

— Ҫук хампа, начальник юлташ, — тет лешӗ.

— Пулӑпа сут тӑван? Спекулянт?

Хвайкка хӑйӗн донор кӗнекине кӗсъене чиксе майланчӗ те милици уйрӑмӗнчен тухрӗ.

Ҫапла пӑтӑрмах пулса иртрӗ ун паянхи кун.

Утать Хвайкка килнелле. Акӑ госпиталь. Иртет ун ҫумӗпе. Чӳречерен халат тӑхӑннӑ ҫынсем курӑнаҫҫӗ. Пуҫне бинтпа ҫыхнисем те пур. Ураланнисем. Тен, вӗсенчен хӑшӗсене Хвайкка юнӗ ҫӗнӗрен пурнӑҫ парнеленӗ. Пырӗҫ акӑ тав тума.

Тав тума пырӗҫ... Пӗри халӗ те чуна ҫунтарать. Яша танкист вӑл. Халиччен Хвайккана ют арҫын пӳрнепе тӗкӗнмен, Яшӑпа вара вӑл чуптурӗ. Аса килчӗ те ҫак самант, хӗрарӑм хӑйӗнчен хӑй вӑтанчӗ. Мӗншӗн? Йӗри-тавра хуйхӑ-суйхӑ алхасать. Хӑрушла вӑрҫӑ асаплать этеме. Упӑшка пирки те сас-хура ҫук. Анчах чӗрӗ чун тепле вӑхӑтра та пурӑнма хавас. Ҫавӑнтанпа вара тӗлӗкре те час-часах икӗ ҫын куҫа курӑнаҫҫӗ: пӗри — упӑшки, тепри — Яша танкист. Иккӗшӗ те алӑкран пӗр харӑс пырса кӗреҫҫӗ пек е иккӗшӗ те ҫапӑҫу хирӗнче юн юхтарса выртаҫҫӗ. Чӗре шари! ҫурӑлса каясла хӑранипе вӑранать ун пек самантра Хвайкка. Ним шухӑшлама пӗлмест вара. Чӑнах, ӑҫтан пырса кӗчӗ-ха Яша Хвайкка пурнӑҫне?

Ҫуллахи шӑрӑх кунччӗ ун чух. Ҫанмалли кун турӗҫ заводра. Вӑрҫӑччен вырсарнисенче кинона, театра каяканччӗ. Е Атӑл хӗрне тухан та каллӗ-маллӗ утса ҫавӑрӑнан. Халӗ мӗнле канас? Кино-театра каяс, яка тум ҫук. Ҫапӑр кӗпесем ҫӗтӗлчӗҫ. Атӑл хӗрне кайма хаваслӑ кӑмӑл кирлӗ ҫынна.

Хвайкка ҫав кун кил-ҫуртӗнче йӗрке кӳме шутларӗ. Анчах мӗнле илем кӳрен, пукан-сӗтел пур-и? Ҫук. Юлман ним те. Тӗрӗссипе каласан ҫамрӑк мӑшӑр илемлӗ сӗтел-пукана туянма та ӗлкӗреймен. Юрать-ха, витрере роза йывӑҫҫи ӳсет. Ҫулҫисем тусанлӑ. Тасатрӗ вара ӑна Хвайкка. Тӑрӑ шывпа чӳхенӗ хыҫҫӑн роза йӑлтӑркка ешӗл тумпа капӑрланчӗ. Урай хӑмисем те кусарпа хырӑнса, вӗри шывпа ҫӑвӑнса саралчӗҫ. Нумай кирлӗ-и, тавӑрӑнчӗ те кил-ҫурта хӑтлӑх.



16223 чув
Республиканская библиотека им. М. Горького Чувашской АССР

Ĕнтĕ ачасене чăпăл тумалла. Ӳте супăнь тасатать. Çук пулсан, ăна ăçтан тупăн? Нуша çынна шурă кулач çитерет. Тупаççĕ мелне. Хвайкка мунчана супăнь вырăнне пир татăкĕпе çыхнă кĕл илчĕ пĕр чăмакка. Тазри вĕри шыва кĕл яран та тепĕр самантран кĕлтăрри хатĕр. Çăвăн вара. Пуçра та нимле кирĕк юлмасть.

Вăрçă вăхăтĕнче кĕлтăррипе кĕпе-йĕме те çунă пайтах. Кĕлерсе лартан та шыв хĕрне кайса килре кисĕпсемпе тĕвен кăна, шыв сапса. Чӳхенĕ хыççăн кĕпе-йĕмне кашта çине çакса типĕтме именмĕн.

Мунчаран таврăнчĕç. Пĕчĕк хĕрĕ çул çинчех ыйхăланăччĕ. Ăна кăмака хыçĕнчи арча çине вырттарнă-вырттарман унăн куçĕ хупăнчĕ. Хвайкка пĕчĕк тимĕр кăмака хутса чей лартрĕ, юнашарах — чукунпа çĕрулми. Çак вăхăтра коридор урлă пурăнакан Униççе алăк уçса пăхрĕ. Ырăпа çӳремест вăл çын патне. Элекçĕ. Шăнаран вăкăр тăвать. Хвайкка хăрамасть усал хĕрарăмăн элекĕнчен. Типĕ тăпра урана çыпçăнмасть.

— Эх, тĕнче маркуш, пӳлĕмне мĕнле çутатса лартнă, — тĕлĕненçи пулчĕ Униççе. — Хăна тавраш кĕтетне?

— Кĕтетĕп, — шӳтлет Хвайкка. — Килсен, чей ĕçме лартăттăм.

— Сисетĕп. Ахальтен хурчка çавăрăнмасть ку таврара, тĕнче маркуш. Чĕрĕ пуç йӳнеçет, — ихĕлтетсе кулса ячĕ Униççе.

— Хуп алăка! — кăшкăрчĕ Хвайкка. — Сан çаварунтан ырă сăмах тухмасть.

Кăмăлне каймарĕ ку Униççене. Тутине сарса çиллес сассипе йĕплерĕ алăка хупнă май:

— Ха! Тӳрккес. Ытлашши çӳле сикен. Тем чул сиксен те, сикĕ çине ларайман.

Чылайччен шухăшларĕ Униççе сăмахĕ пирки Хвайкка. Тупсăмĕ тупăнчĕ хăй тĕллĕн. Часах алăк шаккани илтĕнчĕ. Сас париччен кĕчĕ тăчĕ пӳлĕме çар çынни. Саламларĕ те ыйтрĕ:

— Фаина Николаевна эсир-и?

— Эпĕ, — терĕ кил хуçи.

Салтакăн куçĕ каçхи тӳпери çутă çăлтăрла йăлтăртатрĕ. Вăл Хвайккан сылтăм аллине ярса тытрĕ те хытă-хытă чăмăртарĕ, пуçне пĕкрĕ. Ĕсĕклени илтĕнет.

— Мĕн эсир, чарăнăр, — лăплантарма пикенчĕ Хвайкка. Салтак пуçне çĕклерĕ.

— Пин, пин, пин хут тав сире, Фаина Николаевна. Сирĕн юн чĕремре. Эпĕ сывалса çитрĕм сирĕн хулари гос-

питальте. Виçмине каллех фронта тухса каятăп, — хăвăрт-хăвăрт калать салтак, тĕл пулнишĕн савăнса. Темиçе хут та килсе алăка шакканă вăл, ырă сăмахсем каласшăн, анчах темшĕн калайман.

— Тав тума кирлех мар, — сăмах хушрĕ Хвайкка. — Эпир хамăр юна шеллесе тăмăпăр. Тăшмана çапса çĕмĕрме вăйăр çиттĕр кăна сирĕн.

Кил хуçи хăнана иртме, сĕтел хушшине ларма сĕнет. Салтак тилмĕрттермест.

Ку таранччен Хвайкка хĕрĕ ним чĕнмесĕр ларнăскер хăюллăн çапла ыйтрĕ:

— Пичче, эсĕ мĕн ятлă?

— Қаçарăр,—айăплă туйрĕ хăйне салтак.—Сирĕн пек пĕчĕккисем мана Яша пичче, пысăккисем Яков Гурченко е Яша тесе чĕнеççĕ. Эпĕ танкист.

— Эпĕ — Аля! — тет пĕчĕк хĕр.

Танкист ăна алă тытать. Виççĕшĕ те хаваслăн кулаççĕ. Яша сĕтел çине хутпа чĕркенĕ кучченеç кăларса хучĕ.

— Мĕншĕн чăрманатăр, — тет Хвайкка.

— Пирĕн енче хăнана пушă алăпа каймаççĕ, — таврать салтак.

— Ай, мĕн ку, анне? — тĕлĕнет Аля кучченеç çине пăхса.—Çăкăр татăкĕсем-и?

— Пĕлейместĕн пулĕ çав. Курман. Шоколад ку, хĕрĕм.

— Çиме юрать-и?

Яков Гурченко хурлăхлăн сăнать ача мăкăлтатнине.

— Қат, кат! — сĕнет вăл Альăна.

— Ай-ай, пылак!

— Чей ĕç, чей! — хушаççĕ ачана иккĕн тан.

Хвайкка чей тултарать стакана виççĕмĕш валли те. Сĕтел çине тирĕкпе чăмăрла çĕрулми лартать.

— Тахçанах апатланманччĕ кун пек, — тет танкист хĕпĕртӳллĕн. Шăкăлтатаççĕ, сăмах-юмах килĕшсе пырать.

Яша авланайман та-мĕн. Малтан вăл колхозра тракторист пулнă, унтан çар училищинче вĕреннĕ, вара — вăрçă. Фронтра вăл тăшмана тимĕр утпа çĕмĕрет. Сталинграда хӳтĕленĕ çĕрте аманать. Танк экипажĕнчен пĕр вăл çеç сывă юлнă.

Қалаçать хăна. Анчах туять: кил хуçи хĕрарăмĕн кăмăлĕ çырлахмасть, тем пĕлес килнĕн шăтарасла пăхать куçран.

Пӳлĕме кас тĕттĕмĕ сăрхăнчĕ. Амăшĕ хĕрачине çывăрма вырттарчĕ майласа. Вара салтак çумнех кĕрсе ларчĕ те шăппăн ыйтрĕ: «Қамсемччĕ сан юлташусем?»

— Тӗлӗнмелле хӑюллӑ, паттӑр ҫынсемччӗ. Павел — Горький ҫывӑхӗнчи вырӑс; Давлет — Хусан тутарӗ; ҫӗмӗрт куҫлӑ, йӗпкӗн хура та кӑтра ҫӳҫлӗ Булат — азербайджанец, вӑл вӑрҫӑччен нефть кӑларнӑ. Пуҫ хучӗҫ. Ӗмӗр мухтав вӗсене.

— Ман упӑшка Кирле ятлӑ, — хушса хучӗ Хвайкка.

— Тӗл пулман фронтра Кирилл ятлӑ ҫын, —терӗ Яша.

Пӳлӗмре тӗксӗм пулин те, танкист курчӗ икӗ сенкер чечек пек куҫ ҫиҫнине. Ҫутҫанталӑкӗ те пӗлсе парнелет ҫавӑн пек ҫынсене йӗтӗн евӗр сап-сарӑ ҫӳҫ.

«Мӗншӗн? Ма апла, ма капла?» — тесе тӗпчемест Яша ҫумри хӗрарӑмран. Ун пурнӑҫӗ ывӑҫ тупанӗ ҫинчи пек, ӗмӗр пӗрле ӳснӗн туйӑнать. Халиччен хӗр юратса курман. Хӑй те сисмерӗ вара, пӑчӑртаса тытрӗ те ҫумри хӗрарӑма, хыттӑн-хыттӑн чуптурӗ.

Чӑрсӑрланнӑшӑн, тен, ҫупкӑ кирлӗччӗ ӑна. Ҫук, Хвайкка ун ҫумне таччӑнрах йӑпшӑнчӗ кӑна. Вӑрахчен тухмарӗ вӑл вӑйлӑ алӑсен ытамӗнчен. Ӗмӗр ҫапла пулинччӗ. Анчах салтакӑн ҫулӗ вӑрӑм. Тухса каяс умӗн мӗнпурӗ те вӑл пӗр сӑмах ҫеҫ каларӗ: «Кӗт».

Ҫӗрӗпех пӑркӑчларӗҫ Хвайккана шухӑшсем. Йӗчӗ те, упӑшкинчен каҫару та ыйтса пӑхрӗ. Анчах мӑшӑрӗпе темиҫе ҫул пурӑнса та кун пеккине курман. Мӗнле ҫӗнӗ туйӑм ку? Ытла та ачаш, илемлӗ, чуна ӑшӑ. Сирсе ывӑтма вӑй ҫитерейменӗн.

Тепӗр кун Хвайкка тӳсейми кӗтрӗ Яшӑна, анчах алӑк хыҫӗнче элекҫӗ Униҫҫе кӑна ҫӳрерӗ кумса.

Унтанпа виҫӗ уйӑх иртрӗ. Аҫта вӑл? «Пӗр кӗвӗлнӗ турӑх сӗт пулмӗ ҫав», — шутлать Хвайкка.

Килне ҫитрӗ. Ав, ачисем. Йӑвари шӑнкӑрч чӗпписем тейӗн, чӳречерен пӑхаҫҫӗ, тем хӑлаҫланаҫҫӗ. Урата урлӑ каҫсанах илтрӗ вӑл:

— Атте ҫыру янӑ! Ҫыру!

Хвайккан чӗри картлатса илчӗ: «Тупӑнчӗ-ши мӗн?» Ҫырӑвне илчӗ хӗрӗнчен, пӑхрӗ.

— Аҫу алли мар ку, хӗрӗм.

Аля пичӗ тӗксӗмленчӗ.

Васкаса уҫрӗ конверта Хвайкка. Вӗҫӗнче Яша ятне курчӗ, сӑр! сӑрлатрӗ ура тупанӗ темшӗн?

Хӗрачисене сӗт патне кӑларса ярсан тин вулама ларчӗ ҫырӑва.

«Хвайкка, кам телейне пула тепӗр хут вилӗмрен ҫӑлӑнтӑм-ши?

Шупашкар госпиталӗнчен пире ҫав каҫах ҫӗрле илсе

тухрĕç. Тӳрех — фронта. Эпĕ каллех танкист. Кунĕн-çĕрĕн малалла ыткăнтăмăр. Унка çавăра-çавăра илсе тӳрĕмĕр, хуçрăмăр тăшман пилĕкне. Тĕнче ахăрса тăрать. Пĕр çапăçура хам та кăшт çеç леш тĕнчене ăсанман. Çĕр айне кăкăр таран варăннă. Выртнă тăн çухатнăскер. Çапах та тупса госпитале илсе кайнă. Ним илтмерĕм, курмарăм.

Тăххăрмĕш кун илĕм-тилĕмпе хăпартрĕç сăрт тăрне. Тăратăп. Унччен те пулмарĕ куçа çулăм çăмхи явăнса кĕчĕ. Çиçĕм пек ялтăртатса илет, сенĕк пек тирет. Тӳсмелле мар ыраттарать. Шари! кăшкăратăп. Каялла илсе кайма хушатăп, ятлатăп тухтăрсене.

Мĕн калана пулĕ вĕсем мана хирĕç? Йăпатнă-ши, вăрçнă-ши? Пĕлместĕп. Эпĕ илтмен, пачах.

Чи малтан ман хăлхана хуткупăсăн çинçе сасси çурчĕ. Кайран пĕлтĕм, юриех калана-мĕн ман çывăхра хуткупăсне.

Майĕпен илтекен, куракан пултăм. Кулăшла. Пурте тачка кантăк витĕр пăхнăн тĕтреллĕ курăнатчĕç. Халĕ ав çыратăп. Сывалса çитсен каллех — фронта. Хаяр фашиста çапса çĕмĕрсен — киле.

Мĕнле пурăнан? Сана шав хам çумра туятăп.

Кĕт. Пурпĕрех таврăнатăп».

Хвайкка пукан хыçне тайăнса куçне хупрĕ. Ачисем кĕрсе тăнине те сисмен. «Анне, Шапошков арăмĕ сĕтсĕр кăларса яратчĕ, пирĕн укçа пуррине ĕненмен», — илтрĕ вăл Аля сассине.

— Сĕчĕ пур-и?— йăпар-япăр тăрса пăхрĕ Аля аллинчи чĕресе.

Тăраниччен çирĕç вара сĕт.

Хвайкка чĕринче каллех туллин юн тапать. Чармасть, илччĕр ун юнне, сипленччĕр çĕршывăн паттăрĕсем. Таврăнччăр вĕсем киле.

## ВАТТИСЕМСĔР КИЛ-ÇУРТ ИЛЕМСĔР

Праски кинемей çемйи сĕтел тавра ларнă те шăкăлшăкăл калаçса апатланать.

Тăваттăн вĕсем: ватă амăшĕ — Праски кинемей, ывăлĕпе кинĕ тата пĕчĕк Оля, ăш хыптармăш. Çамкинче ун мăкăль.

Ман кӳршĕсем вĕсем. Виçĕ çемье пурăнатпăр. Кухньăра ытла тăвăр, пĕр-пĕринчен иртсе кайма та хĕн. Туслă

пуранна чух ку чармав palармасть. Пиçнĕ апата пурте кухньăрах çиеççĕ.

Каласать Праски кинемей çемйи. Эпĕ аякрах та мар тăратăп. Çук, асăрхамаççĕ вĕсем мана. Паллах, пушар хыççăн шыв кирлĕ мар. Пулин. Нимĕн чухлĕ те кÿренместĕп. Чи пахи — çемьери килĕшÿ. Пăхатăп та вĕсем çине, саванатăп, чунра хĕвел йăлкăшать.

Ватă амăшĕ килтен тухса тарма пултаратчĕ. Ăçта çÿрĕччĕ-ши вăл халь? Оля та çулталăк ытларахри ача çеç. Кам пăхĕччĕ ăна? Курасчĕ, мĕнле юратать ăна асламăшĕ! Турра шĕкĕр, халĕ ав пурте пĕрле.

Çапла. Тин анчах ку çемьере хăрушла çил-тăвăл ахăрчĕ. Пĕтĕм хваттер кисренсе тăчĕ. Пурнăçĕ çавнашкал пирĕн, ирĕксĕрех пурне те курма, илтме тивет. Ара, пирĕн пÿлĕм алăкĕсем хире-хирĕçех, хушши пĕр утăм çеç. Юмахлани, кулни, ятлани, — пурте илтĕнсе тăрать. Юратмастăп эпĕ çынсем пĕр-пĕринпе ятлаçнине, çапăçнине.

Харкашу Праски кинемей çемйинче ним кĕтмен çĕртен пуçланчĕ. Чи малтан ача çар-и-и! çухăрса янине илтрĕмĕр.

— Мĕн амакĕ? — ыйтрĕ кухньăра тăракансенчен тахăшĕ.

— Ӳкрĕ пулĕ, — терĕ тепри. — Ача-пăча ÿке-ÿке хăй шăмшаккине çирĕплетсе ÿсет.

Унччен те пулмарĕ, кухньăра тем тăрмашакан Праски кинемей, хыткан та çăмăлскер, йăпăртатрĕ пÿлĕме.

— Ай, çырлах! — терĕ вăл. — Мĕн турăр ачана? Çамкинчен юн пĕрĕхет!

— Арча кĕтессине пырса тăрăнчĕ...

Ку ывăлĕ сасси.

— Икĕ мăнттай ларатăр хире-хирĕç пăхса, ачана астумастăр! Эх, сире...

— Никам та мар, сан арчу айăплă! — кăшкăрса пăрахрĕ кинĕ. — Ларать пÿлĕме тултарса, тискерлетсе. Çынсем ав тахçанах çинçе ураллă сĕтел-пукан туянна. Эпир шав кивĕлле пурăнатпăр. Халех кăларса ывăтатăп арчуна!

— А-а, сана ман арча килĕшмест-и?!

— Килĕшмест! Пăрăн, тухатмăш карчăк!

— Арчана мар, хăвна кăларса ывăтмалла сана — усал кине!

Тăрс! тапрĕ алăка. Пĕлместпĕр тахăшĕ, путех кинĕ. Тĕрĕс. Ав алăк уçăлчĕ. Пире пурте курăнать ĕнтĕ. Тĕпĕр-

тетеççĕ, ах! Кинĕ арчине тулалла сĕтĕрет. Пăянамăшĕ — шалалла.

— Арчупа пĕрле хăвна та кăларса ывăтатăп! — тет çиллес сассипе кинĕ. — Çынсен, ав, çамрăк мăшăрĕсем уйрăм пурăнаççĕ. Эсĕ пирĕн пата çыхăнса ларнă. Тухса кай!

Ай-ай! айкашаççĕ. Аслати авăтать, çиçĕм çиçет. Ывăлĕ шарламасть. Нихăшин хутне те кĕресшĕн мар-тăр. Вăл, ним пулман пек, ачи çамкине чĕмсĕррĕн эмеллет. Хушăран çеç сăн-пичĕсене çухатнă хĕрарăмсене çапла каласа хурать:

— Чарăнăр, тархасшăн!

Чарăнма-и унта. Тĕркĕшӳ хĕрнĕçем-хĕрсе пырать. Халь-халь пĕр-пĕрне çӳçрен ярса тытаççĕ. Чăнах, кинĕ пăянамăшĕн пуçĕнчи тутрине сӳсе антарчĕ. Праски кинемей те маххă памасть. Таçтан вăйĕ çитрĕ, тăрс! пырса тĕртрĕ кинне, лешĕ йăванса каян пекки турĕ. «Хурах! Вĕлерет!» — кăшкăрать урайĕнче тапаланса выртнă май. Карчăкĕ арчине мекеçленсе вырăнне лартрĕ те ун çине ача пек ал-урипех хăпарса ларчĕ.

— Э-эй, намăссăр! Пçих! Епле вăл тапăлтатать урисемпе! Тьфу! — сурать карчăк кинĕ енне. Çамрăкки йĕрем пекки тăвать. Куççулĕ тухмасть. Кашкăрла улать. Кам мĕнле хăратма ăста ĕнтĕ.

— Ман ачана юратмастăн, пăхмастăн! — кăшкăрать кинĕ карчăка. — Кирек хăçан килсе кĕрсен те сĕтел çинче ялан стаканпа шыв çеç ларать. Ача апатне хăв çиен!

Кăна кинĕ пустуй калать вара. Эпир, пĕрле пурăнакансем, курса тăратпăр-иç. Праски кинемей мăнукĕшĕн чунне пама хатĕр. Çав тери юратать ăна, килĕ çине хурса тӳменни кăна. Темтепĕр пĕçерсе çитерет. Ача умĕнче ташлать, юрлать, такмаксем, сăвă-юмахсем калать. Пĕчĕк Ольăчкă вара — чăн-чăн пăрчăкан. Йăпăртатса чупса çеç çӳрет. Пĕрре чирлесе курман. Ир утма вĕренчĕ, вунпĕр уйăхрах. Мĕн ан кала, пурне те ăнланать. Тупата, хаваслă хĕрача. Ахăлтатать вара. Кăмăлласкер. Пурте йăпанатпăр унпа. Пĕррехинче шалт тĕлĕнтерчĕ вăл. Тем калаçаттăмăр. Ашшĕ çапла каларĕ:

— Оля ӳссен, лавккана сăра илме яратăп.

Мĕн тейĕн, Оля таçти шăтăкран пушă сăра кĕленчи тупса ашшĕ патне йăтса пычĕ:

— А-а! А-а! — тет.

Вар хытиччен култăмăр.

Ахалех кӳрентерет карчăка. Ачин пипи иртнĕ те ав,

йĕме чăраннă, ашшĕпе тем мăкăлтатать. Амăшĕ ун кӳршĕсенчен те вăтанмасть.

— Вилеп, вилеп, чĕре тапма пăрахрĕ! — кăшкăрать шеремет хĕрарăмĕ.

— Вил! Эсĕ виличчен тĕнче пĕтет, — тет ватти.

Стакан шыв илетĕп те пӳлĕме кĕретĕп.

— Ĕç,— хушатăп çамрăк кинне.— Усал-тĕсел тухса кайтăр тăрă шывпа.

Тăрса ларчĕ. Лăнкăрт-лăнкăрт çăтать сивĕ шыва. Чунĕ уçăлсах кайрĕ пулас.

— Спаççипă,—тав тăвать мана вăл. Ура çине тăчĕ уйăх.

Халĕ ĕнтĕ урăхла самана пуçланчĕ. Тытăнчĕç иккĕш те татăлса йĕме. Ах, куççулĕ юхтараççĕ. Ватти япалисене тутăр çине пухать, мăкăртатса:

— Тухса каятăп, кураймастăр. Ман арча ытлашши сире. Вăл маншăн хаклă япала. Ана мана, качча тухсан, упăшка туянса панă, — тет.

Пичĕ тăрăх юхакан куççульне саппун аркипе шăлса илет карчăк. Татах каламалли пур мĕн-ха ун.

— Ывăлăм, сана çакна калатăп: халĕ арăму мана тапăнать, кайран унăн шăнăçайми çилли сан çине тиенĕ.

Питĕ чухлатăп, пĕлетĕп кӳршĕ кинемейĕн кăмăлне. Куркаланă. Нумай çулсем пĕрле пурăнатпăр-çке. Паçăр, тĕркĕшнĕ вăхăтра, ăна тапса кăларса ывăтнă пулсан та, вăл каялла чупса кĕрсе, арчи çине хăпарса ларатчĕ. Халĕ, чармасан, тухса каять. Çапла, тухса каять. Ăçта пурăнĕ? Ют çынсем патĕнче пурнăç тутлах пулас çук. Вăл тӳсĕ. Шăла çыртĕ те тӳсĕ. Акă. Кĕрĕк тăхăнчĕ, çыхха хулайне хĕстерчĕ. Алăк патнелле утать.

Иккĕн тавлашнă чух виççĕмĕшĕн ĕç çук теççĕ те, анчах çитет, тек чĕнмесĕр тăма юрамасть. Усаллăх тăшманлăха, курайманлăха куçĕ. Ваттисĕр кил-çурт илемсĕр. Пĕчĕк Оля кампа ларĕ тата? Кам пăхĕ ăна?

— Чим-ха, Праски кинемей, — çулне пӳлетĕп унăнне. — Ан васка, сивĕн кăшт.

Шăртланать карчăк. Çапах та итлерĕ ман сăмаха. Ĕнтĕ çыхнă япалине арча çине хучĕ. Кĕрĕкне хывсан, аллинчен тытрăм.

— Хирĕçрĕр, туллашрăр. Сĕт те хăпарса тăкăнсан çулăма сӳнтерет. Халĕ мирлешме вăхăт.

Сăмсисене нăш-нăш турткалаççĕ иккĕш те.

— Нюра, — тетĕп, — эсĕ çамрăкки, каçару ыйт пăя-

намунтан. Тӳрех хăяймасть. «Каять вăл, тухса каять...» — текелет шăппăн.

— Пар аллуна! — хытах калатăп. — Ватти, эсĕ хирĕç мар-и? Иксĕр те ырă çынсем вĕт эсир. Килĕштерсе пурăнмалла та пурăнмалла.

Макăрса хĕрелнĕ куçĕсем иккĕшĕн те ăшшăн çуталчĕç.

— Ну, ну... Алă тытăр.

— Kaçар, пăянам, — тет аллине тăсса.

Алă тытаççĕ.

— Чуптăвăр, мирлешнĕ ятпа.

Хыттăн чăмăртаса ыталаççĕ пĕр-пĕрне. Чăп! чăп! туни илтĕнет. Питĕ кăмăллă.

Кинĕ ваттине хурласа татах тем мăкăртатма пикенчĕ.

— Шăп-шăп, айван, — асăрхаттаратăп. — Халĕ ĕнтĕ çырт шăлна, лăпланнă кайăка шуйлантармаççĕ.

Капланса килнĕ пĕлĕтсем пĕтĕмпех сирĕлчĕç. Килте çутă шевле ялтăрать.

Ывăлне куç хĕсетĕп. Вăл чее çын, мĕн тумаллине самант ăнланчĕ. Часах сĕтел çине ун-кун кăларса лартать.

— Килĕр, килĕр! — чĕнет вăл.

Çемье пуçтарăнать. Куратăп, халĕ ĕнтĕ эпĕ кирлĕ мар. Пӳлĕмелле кĕрсе çухалатăп. Вăрах ларайрăп-и кун пек чух? Кухньăна тухатăп, шыв ĕçенçи пулатăп.

Праски кинемей çемйи хаваслă. Ывăлĕ тем пит хăпартланса калаçать. Итлетĕп:

—...Нумай та вăхăт иртмĕ, çĕнĕ хваттере куçăпăр. Унта ирĕклĕ пулĕ. Анне, эсĕ Ольăпа расна пĕр пӳлĕмре пурăнăн, эпир, Нюрăпа иккĕн, тепĕр пӳлĕмре. Хальхи пек шыв ăсма каймалла мар, вăл килех юхса кĕрет. Ун пек-кун пекшĕн тула, сивĕ çĕре чупса тухмастăн. Канлĕ пурăнăр, улпут майрисем пек.

— Апла, юлхава ерсе кайăпăр! — тет амăшĕ. Виççĕшĕ-те туслăн кулса яраççĕ.

— Анне, анне, сана çĕнĕ кравать илсе парăп, — тет ывăлĕ.

— Ма тăккаланас? — тет амăшĕ. — Ара, ман арча пысăк, Ольăпа чиперех вырнаçатпăр...

Çемьере килĕшӳ пулсан мĕн тери ырă. Шăкăлтатăр, кӳршĕсем, шăкăлтатăр.

## ИККĔМĔШ АРĂМ

Ял пуçлакансем кунтан ытла «илемлĕ» вырăн ниçта та тупайман-ши? Килсе вырнаçнă, тупата, ту сĕвекне. Шывсăр антăхтарать. Çĕрне тем тарăнăш пăраласан та тумлам пăчăртанса тухмасть. Пĕтĕм çын шыв ăсма çырма тĕпĕнчи чулсем айĕнчен сăрхăнса юхакан шыв хĕррине анать. Кирек мĕнле çанталăкра та: шартлама сивĕ-и, ĕнтсе ярасла хĕвел хĕртет-и, — пурпĕрех, мекеçленеççĕ этемсем çырма тĕпĕнчен шыв йăтса.

Ял хĕрринче ларакан килтен, яланхиллех, кĕвенте вĕçне витре çаклатнă икĕ ача тухрĕç, Хветуçпа Куля вĕсем— аппăшĕпе шăллĕ.

Иртенпех тăман вĕçтерет. Кассăн-кассăн вĕрекен çил юр кĕрпи пĕрĕхтерет, куçа уçма памасть. Каялла кĕмерĕç ачасем. Куçĕсене хĕскелесе малаллах талпăнчĕç. Мĕн тăвăн? Хăнăхнă ĕнтĕ вĕсем, пĕрремĕш хут мар, ялан çапла.

Хветуç вунвиççе кайрĕ. Шăллĕ вара унтан тăватă çул кĕçĕн. Кулян хăйĕн кĕске кĕвенте, мăшăр тăпăл-тăпăл витре пур. Пĕчĕкренпех вăл пĕчĕк аппăшĕпе пĕрле шыв йăтма тытăннă. Нуша хăвалать. Хăйсем шыв кӳмесен кам пырса ĕçтертĕр? Тăлăх-туратсем-çке. Пуринчен ытла Хветуç уй варринчи юпа пек. Унăн ашшĕ те, амăшĕ те çук. Куля çапах та ашшĕллĕ. Тепĕр тесен, ашшĕ пурри мĕн усси? Унăн урăх çемье. Вăл хăйĕн ывăлĕ пирки тухса кайнă кунах маннă. Юрать-ха аслă пиччĕшĕ Ваççа пур килте.

Пулать çав пурнăçра инкек. Вăл пĕр-пĕр çемьене çыпăçать те ним шелсĕр хуçать, ватать çынсен телейне. Чи малтан çамрăк мăшăрсен Ваççа, унтан Хветуç çуралать. Савăннă ĕнтĕ вĕсем ывăлĕпе хĕрĕшĕн. Анчах часах ашшĕсĕр тăрса юлаççĕ. Амăшĕ парăнасшăн пулман, хуйхасуйха сирсе, пурнăçа çĕнĕрен чĕртсе яма пикенет, киле кӳртет кӳршĕ ял çыннине. Анман пурăнăç сыпăнман. Куля çуралсан, хĕне кайса амăшĕ вилет. Кĕçĕннин тăван ашшĕ виçĕ ачана пăхма ӳркеннĕ. Вĕсене пăрахса кĕрчене хĕр патне киле кайса кĕрет.

Çемьере виççĕн тăрса юлчĕç. Чи асли те, Ваççа, вунтăватă çулта çеç. Кĕçĕнни — виççĕре.

— Ан макăрăр, — йăпататчĕ пиччĕшĕ йăмăкĕпе шăллĕне. — Сире тăрантаратăп. Ӳсĕр, çын пулăр ака.

Кĕтӳ кĕтме кĕрĕшрĕ Ваççа. Чăнах та, пĕчĕккисене çăкăрсăр лартмарĕ.

Хветуç апат та, çăкăр та пĕçерме вĕренчĕ. Кĕпе-йĕм те çăвать. Шеллесе пăхатчĕç хĕрачана. Ыра кăмăллă хĕр-

арăмсем сĕт-турăх пырса паратчĕç. Куля ăна-кăна чухламан. Ача-çке. Унăн умĕнче ялан хăнăхнă куçсем çиçсе тăнă. Аппăшĕн вĕри юратăвĕ ăшăтса лăпканă ăна. Хырăм выççан, аппăшĕ çăкăр чĕлли касса панă. Вылянă чух такăнса ӳксе чĕркуççине чĕртерсе пипи тусан та йĕре-йĕре аппăшĕ патне чупнă. Лешĕ хĕрхеннĕ. Питçăмарти тăрăх юхакан куççульне шăлнă хăйĕн саппун аркипе. Ачашласа ӳф! ӳф! тесе вĕрнĕ сурана. Ачан çавăнтах таçта кайса кĕнĕ ыратни. Хветуç унăн юратнă амăшĕ те, ашшĕ те тата чи çывăх тусĕ те. Çук, хăпмасть ун çумĕнчен. Вăйăра та, ĕçре те пĕрле. Çуркунне алкум вĕçне шыв кӳлленсен ăна икĕ пĕчĕк этем алли çул уçса юхтарса ярать. Çĕр типсен пахчара купăста лартаççĕ йăрана. Çулла, тырпул пиçсе çитсен, колхоз уйĕнче вĕсем халăхпа. Тупăнать унта пĕчĕк алăсем валли те ĕç. Пучах пухаççĕ пĕр хутаçа. Кĕркунне çĕрулми кăларнă чух та Куля аппăшне пулăшать. Çĕрулми пуçтарать вăй çитнĕ таран.

Халĕ те Куля пĕкĕрĕлнĕ те Хветуç хыççăн утать. Çырмаран шыв ăсса хăпараççĕ. Тулли витре çăмăл мар, ĕнсене пусать хытах. Хăй уксахлать. Йĕлтĕрпе сăртран ярăнса аннă чух чикеленсе ӳкнĕ те урине ыраттарнă. Киле çитсен, пушатрĕç витрисене.

— Тепрер кайса килĕпĕр-и? — тет Хветуç.

— Катка чăп тулли-çке, — асăрхаттарать Куля.

— Шыв халичченхинчен ытларах кирлĕ.

— Кĕпе çăватăн-и?

— Васса пичче авланать, паян арăм илсе килет. Пирĕн каллех инке пулать.

— Каллех?

Куля шартах сикрĕ. Инке мĕн тути каланине питĕ лайăх пĕлет вăл. Ун чухне те пĕр çу кунĕнче аппăшĕ çапла хыпарланăччĕ: «Васса пичче авланать, паян арăм илсе килет. Пирĕн инке пулать».

Колхоз председателĕ Васçана арăм илсе килме çăмăл машина панăччĕ. Юлташĕпе ларса кайрĕç. Тепĕр куние, кăнтăрла умĕн, чăнах та, хапха умне çитсе чарăнсан, машинăран пиччĕш хыççăн хĕр тухрĕ. Мăнтăрккаскер хăй. Кунĕпех тĕпĕртетрĕç вара. Хĕре сурпан сырăнтарчĕç. Вăл çапла инке пулса тăчĕ ĕнтĕ. Ял çамрăкĕсем юрларĕç, ташларĕç чăм шыва ӳкиччен. Туй куракансем питĕ нумай, пӳрте те шăнăçаймаççĕ. Теприсем урамрах, шалалла чӳречерен пăхаççĕ. Унччен те пулмасть, ачасем хушшинчен Куляна сĕтĕрчĕç кăларчĕç урай варрине: «Ташла!» — теççĕ. Вăтанать. Вăйăçĕ туртать кăна купăсне. Аçтан тӳссе

тăрăн? Урасем хăйсемех тытăнчĕç сиккелеме. Яра пачĕ вара! Çăтти-çатти тутарать çара тяппипе урайне. Йăлт-йăлт лăпчăнать, тăрать.

— Маттур, ура хуçса ташлама пĕлет! Артист пулать кунтан! — кăшкăраççĕ алă çупакансем.

Чун савăнчĕ ачан. Темшĕн ăна пурăнăç малашне те çакăн пек хаьас пулассăн туйăнчĕ.

Туй иртсен, Хветуçа асап тиврĕ темелле. Пÿрте-çурта пĕтĕмпех вăл тасатрĕ. Урайĕ мĕн тери хура! Кам лапăртанă-ши çав тери, кам çăра çĕпре тăкса янă-ши? Хветуç хăйăрпах лутăркарĕ, вĕри шывпа çурĕ. Типсен, çăмарта шурри евĕр тытăнчĕ йăлтăртатма. Тупата, урапа пусса çÿреме те шел.

Çĕнĕ инке кĕпе çĕлет хăй валли, эрнерен чирлерĕ ÿкрĕ. Вырăн çинчен анмасть. Ыратать имĕш. Месерле те, ÿпне те, айккăн та выртать. Пайти çук. Хветуç пĕçернĕ апата çиме Ваçça ăна вырăн çине парать тирĕкпе. Чирлĕ пулин те, çимĕçе йăпăлт ярать тасатса.

— Сывалатăп та-ха, — тет хăй апат çимессерен тути-не чĕлхипе çуласа.

Такам хĕнесе шăмми-шаккине ватнăннах ахлатать, ас-сăн сывлать.

Куля шеллет инкĕшне, лешĕн асапне туйса.

— Ах, анчах. Аппа, инке хăçан çÿрекен пулĕ-ши?

— Тахçан, — тет Хветуç шăлнĕне лăплантарса. — Тă-рĕ-ха, ан васка.

Малалла мĕн кĕтнине пĕлнĕ пулсан вырттăрччĕ-иç ĕмĕрех.

Ачасем пÿрте кĕрсенех инкĕшĕн куçĕ вут пек йăл-ял çуталса илет. Шăтарасла пăхать вĕсене выртнă çĕрте. Кунсем иртнĕçемĕн чунĕ шав туллашать, чĕри хĕсĕнет. Упăшкин пÿрчĕ пĕчĕкки килĕшмест иккен ăна. Тăвăрла-таканни тата — икĕ мур ачи. Тăваттăн ăçтан пурăнăн?

Хăй те çуратса парсан, çемье пилĕк çăвара, пÿлĕх йĕкĕрешсем парнелесен, улт çăвара çитет. Ун чух хă-вăннишĕн те, çын ачи-пăчишĕн те ĕçлесе чикеленмелле. Халех килтен тасатмалла ку шăкăр-макăрсене. Анчах ăçта ямалла? Шухăшлать çĕнĕ çын. Тупрĕ. Хветуçа интер-нат-шкула ăсатас кĕркунне. Куличе паянах кăларса ярас. Сиксе тăчĕ ура çине.

Аппăшĕпе шăллĕ сĕтел хушшинче ларатчĕç. Кÿршĕри кинемей уйран каçса панăччĕ те, кăнтăр апачĕ тума шут-ларĕç.

Инкĕшĕ çемье тытăмне ăçтан арпаштарма тытăнам-

ши тенĕн тула тухса кĕчĕ, каткаран алтăрпа шыв ăсса ĕçенçи пулчĕ.

Упăшки Хветуçăн хăпăннă сантали тĕпне çĕлесе ларать.

Çĕнĕ çын пуçне мĕн килнине самантлăха та ырана хăварасшăн мар.

— Ваçça, — чĕнчĕ вăл урмăшнă сассипе, сĕтел хушшинче ачасем çине вут-хĕлхем сапса, — Куляна нечево тăрантса пурăнма!

Апăрша ачисем кăн-кан пăхкалаççĕ. Хветуç кашăкне шăкăрт хучĕ сĕтел çине, ун хыççăн Куля та. Пурте шăпăрт!

— Мĕншĕн? — тет ним ăнланман упăшки. — Ку таранччен Куля çемьере ытлашшине нихăçан та туйман. Хамăр тăвана тивмĕпĕр.

— Тупнă тăван! — хăтăрса пăрахрĕ арăмĕ. Хăйĕн куçĕ пăр пек сивĕ. — Ăçтан тăван пултăр? Аçусем пĕр мар, тăмана. Хăтăлмалла мăйри пăявран. Çавă çеç.

— Ăçта кайтăр вăл пĕчĕкскер?

— Мĕнле ăçта? Унăн ашшĕ çук-и? Кайтăр ун патне пурăнма! Ай-ай чее, унăн савăнса пурăнас, пирĕн асапланса. Çапла-и? Капла ĕç тухмĕ.

Куляна сивĕ чир тытрĕ. Хăрарĕ вăл, çавăнпа чĕтрет. Ăнланчĕ: инкĕшĕ ăна килтен хăваласа ярасшăн. Мĕнле пурăнтăр-ха юратнă аппăшĕсĕр? Хута кĕме тилмĕрнĕн, чăрр пăхать аппăш куçĕнчен. Хветуç хăй те шăллĕсĕр пĕр кун пурăнаймĕ. Иккĕшне уйăрсан, вăл шыва сиксе вилме хатĕр.

— Куляна усрамастăр пулсан, эпĕ те килтен тухса каятăп, — пĕлтерчĕ Хветуç татăклăн хăйĕн шухăшне.

Хыпăнса ӳкрĕ-и инкĕшĕ? Кĕт сана.

— Питĕ тĕрĕс тăватăн, — лаплаттарса хучĕ вăл.

Хветуç шăллĕне çавăтса пӳртрен тухрĕ. Мĕн калаçрĕçши иккĕш тăрса юлсан инкĕшпе пиччĕшĕ? Пĕлеймерĕ.

Хӳтлĕх шыраса урам тăрăх каймарĕ хĕрача. Хăнăхман элекпе çӳреме. Çĕнĕ инке çапла хăтланни пирки кӳршĕсене каласа пама вăтаннă та пулĕччĕ. Куля ашшĕне вăл чунтан кураймасть. Пурнăçра тем пек йывăр самант килсе тухсан та, пулăшу ыйтма каймĕ ун патне.

— Ан кулян, — лăплантарать Хветуç шăллĕне. — Пурăнăпăр-ха. Тен, инке шеллĕ пире.

Çак асар-писер самант ачасене пӳртрен пачах сивĕтрĕ. Инкĕш куçне курăнасшăн мар унта-кунта çӳреççĕ. Юрать вăрман пур ял çывăхĕнче, чуна йăпатмăш. Хурăн çырли

пӗтӗм хуйха-суйха мантарать. Выртса-тăма кӗлетре вырăн тупрӗç. Урам енчи кӗтессе пăрахнă улăм ҫине шăналăк сарчӗç те, пулса тăчӗ ҫемҫе тӳшек. Ҫăссерен сулхăн, хăш чух аҫам витӗнсен те ăшăнаймастăн. Тӗршӗнеççӗ вара пӗр-пӗрин ҫумне ачасем.

Уйăх иртрӗ ҫапла муталанса. Пӗррехинче, ӗçе тухас умӗн, инкӗш Ваççана амăшӗсем патне хăнана илсе кайрӗ. Ирӗке юлчӗç ачасем. Чуна ҫăмăл. Чупса кăна ҫӳре, никам та сивӗ куҫпа пăхмасть. Пӳртре никам та ҫук, пуш-пушах. Хуҫаланаççӗ унта икӗ пӗчӗк этем. Вӗри яшка сыпманни хăçан! Вучахра кăвайт ҫунать. Лӗркке кӗрпе шӳрпине. Тата, ах, тутлă-ҫке, пӗчӗк хуран пăтти!

Тăтăшах пăхаççӗ уй урлă выртакан ҫул ҫине. Ак, тамаша! Мӗне пӗлтерет ку? Ваçҫа килет! Пӗчченех. Хирӗç чупрӗç вăркăнса. Ытамне хупрӗ пиччӗшӗ хăйӗн икӗ тăванне.

— Мӗншӗн пӗччен?

— Инке ăҫта? — тӗпчеççӗ икӗ пӗчӗк чӗкеç.

— Ан та ыйтăр. Ăнман хӗрарăм пулчӗ. Пурăнасшăн мар вăл пирӗнпе. Юлчӗ уйрăлса, — ăнлантарать Ваççа хурлăхлă сассипе.

Ним калама пӗлмерӗç Хветуҫпа Куля. Шеллеççӗ ăна Пиччӗш телейӗшӗн тем тӗрлӗ асап та тӳсме хатӗр вӗсем.

«Инке» тесен акă мӗншӗн ӗнтӗ пӗчӗк Куля шартах сикрӗ.

— Хветуç аппа пурăнма каллех кӗлете куçăпăр-и ӗнтӗ? Халӗ хӗлле. Сивве мӗнле тӳсӗпӗр?

— Ан хăра, — йăпатать ăна Хветуç. — Ку леш инки мар, урăххи. Тен, вăл ырă кăмăллă пулӗ, пире тивмӗ.

Утать кӗвентепе витресем йăтнă Куля аппăш хыççăн. Ҫамрăк пуçӗнче пысăк, ăнланма хӗн шухăшсем явăнаççӗ. Хӗл мучи сăмса вӗçне чӗпӗтни те ним мар. Ури ыратнине те тӳсет.

Ӗнер чăнах та Ваççа пиччӗшӗ ҫуна кӳлсе ҫӳлти урампа мал еннелле чуптарчӗ, машинăпа вăл ăнатри урампа кайнăччӗ. Эппин, паян урăх инкепе килет.

Тӗрӗс. Ваççа пулас арăмне килӗнчен кăларнă. Ав, аслă хирте лав курăнать. Юртать ҫул хыттине туйса ҫӳрен лаша. Ури айӗн юр чăмаккисем сирпӗнеççӗ. Улăм сарнă ҫуна ҫинче иккӗн: пӗри — хӗрарăм. Ҫап-ҫамрăкскер вăл. Уйăх питлӗ. Пуç тăрăх ҫӳҫеллӗ пысăк хура шаль тутри пӗркеннӗ. Тутри ҫинче — юр пӗрчисем. Пăхма илемлӗ. Тепри — вăйпитти йӗкӗт. Кăтраскер. Ҫӳç пайăркисем ҫӗлӗк айӗнчен тухса ҫамка ҫинче алка евӗр ункăланнă. Ку-

çĕ кăн-кăвак, шăп утмăл турат çеçки. Янахĕ шĕвĕр. Ваççа ку. Хветуçпа Кулян пиччĕшĕ.

Темĕншĕн-çке, хăйсем чĕнмесĕр кичеммĕн ларса пыраççĕ. Сăмах енчĕкĕ пушанса юлнине ĕненме çук. Вĕсем пĕрле чĕлхе вĕçне якатса пĕр хутчен те шурăмпуçне кĕтсе илмен, çур çĕр çитнине систерсе автансем авăтнине те пĕрле итлемен. Сахал курнăçнă. Паллашни те нумаях пулмасть. Кĕркунне Ваççа колхоз хушнипе хăмла тымарĕ туянма пынăччĕ. Шăп çавăн чухне, халĕ лав çинче юнашар ларса пыракан хĕрпе—Униççепе—тĕл пулнăччĕ. Куçа-куçăн пăхкаларĕç те пĕр-пĕрне килĕштерсе пăрахрĕç. Сăмах татрĕç çавăн чухнех. Ĕмĕт ума çитрĕ. Ваççа çĕнĕ пурнăç пуçлама Униççене лартса каять тăван ялне, килне. Апла пулсан, путех, сăмах енчĕкĕ салтăнман та пулĕ.

Чупать лаша. Хуçи ăна хушăран чăпăрккипе хăмсаркаласа илет.

Ту хĕррине çитсен, айлăмра виççĕн мĕкĕлтетни курăнчĕ. Çуран çын утти темĕн чул малалла пулин те ерипен ўсĕнет. Часах вĕсене лав хуса та çитрĕ. Камсем-ши? Тинкерсе пăхать Ваççа. Палламан çынсем. Виçĕ хĕрарăм. Виççĕшин те пĕр сăн. Тăвансем ĕнтĕ. Çамрăкраххи кăна майралла тумланнă. Ун çийĕнче кĕске пальто.

— Тăпру-у! — чарчĕ лашине йĕкĕт. Унтан çапла каларĕ хĕрарăмсене: — Айтăр пирĕнпе, аппасем!

Ваттисем самаях ывăннăччĕ ĕнтĕ утса. Хаваспах килĕшрĕç. Тав тукаласа çуна пуçнех вырнаçрĕç.

— Тепри мĕншĕн тиркет тата? — тет Ваççа.

— Пурте тиенсен, лашу туртаймĕ, — сăмах хушрĕ кĕске пальто тăхăнни.

— Ан тилмĕр, — хута кĕчĕç кинемейсем. — Вăл çыравçă. Хĕллехи уя лайăхрах сăнасшăн.

— Çыравçă? — хыпăнса ўкрĕ Ваççа. — Тур çырлах! Ку çула çитсе те пĕр писателе курман. Кĕнекисене вулама юрататăп. Лар-ха, писатель юлташ, сана хамăн пĕрремĕш арăм пирки каласа парам. Çыр-ха ун çинчен.

Çыравçă тени çынна итлеме хавас. Йышăнчĕ ун сĕнĕвне хапăлласах.

— Шаларах сик, унсăрăн таçта сулăнчăка ўксе юлăн,— асăрхаттарать çыравçă-хĕрарăма Ваççа.

— Эпĕ мĕн. — сăмаххине пуçларĕ хайхискер, — çулла авлантăм. Ку — Униççе, манăн иккĕмĕш арăм пулать ĕнтĕ. Пĕрремĕш арăмпа эпир кану çуртĕнче туслашрăмăр. Мана колхоз путевка парнеленĕччĕ те, хĕл каçах сысна ферминче лайăх ĕçленĕшĕн... Пўлĕме улттăн вырнаçтарчĕç,

Таçтан та пынă çыннисем. Вăрмана кайса çӳрерĕмĕр. Апат умĕн каялла килмелле. Кĕтĕмĕр кăна кану çурчĕн килкартишне, и-их, хăлхана çурать купăс сасси. Халăх пухăннă ырăна эпир те пырса тăтăмăр. Пĕр мăнтăрккa хĕр (манăн пĕрремĕш арăм пуласси ĕнтĕ вăл) ах, çырлах, ташша ислетет сăвă кала-кала! Авкаланать, тăпăртатать, аллисем çĕр сыпăкăн хуçланаççĕ. Куç илмесĕр пăхатăп. Çавăнтах килĕштерсе пăрахрăм. Эх, шухăшлатăп. Шăп арăмлăх хĕр ку. Хамран кăшт çӳлĕрех, платна. Çакăн йышши хĕрарăм ĕçре чăтăмлă пулма кирлĕ. Фермăра хулă пек çинçешки час авăнать, унта ĕç йывăр. Авланас та иккĕн фермăра ĕçлес. Укçи-тенки кĕсъе тулли илсе таврăнăпăр. Вара çурт-йĕр лартас, паллах, кирпĕчрен. Кермен пек илемлĕ пулĕ.

Ырă пуласлăх илĕртет. Вăл çак хĕре качча илсен тин ума çитессĕн туйăнать.

Тепĕр кун тин хĕр патне пыма май килчĕ. Унпа сăмах хушиччен ним те çиеймерĕм, çывăраймарăм. Чĕрем сиксе тухасла тапать. Калаçăвĕ вара чăннипех те чĕре çумне сар çу хывтарчĕ. Илĕртӳллĕ кулкалать. Курман эпĕ унăнни евĕр тикĕс шăл. Хура куçĕ хăй çăлтăр.

Кану çуртĕнче çур минут та тăмăттăм. Хăратăп савнине ытти каччăсем туртса илесрен. Пĕр тăхтамасăр вăрлăттăм та килĕ вĕçтерĕттĕм. Çулăмпа хыпса çунатăп. Пĕлетĕп, юрату çапла хĕмлентерет. Турра шĕкĕр, урăх каччă-мĕн пырса явăнмарĕ хурчăкалла.

Кану вăхăчĕ хăвăрт иртрĕ. Киле каятпăр. Эпир унпа пĕр енчисем иккен, пĕр районтан. Ялсем хушши, каланă пек, çывăх мар, çирĕм, çирĕм пилĕк çухрăм пурах. Урара вăй пур чух, вăл ним те мар. Çук, ун пек эпĕ нихăçан та, никама та юратман.

Çыравçă тем пăшăрханать, сисĕнчĕксĕр унăн иккĕмĕш арăмĕ çине пăха-пăха илет. Вăл ним илтмест тейĕн, пуçне пĕкнĕ те тем çинчен пит тарăннăн шухăшлать.

— Çитрĕм киле. Выртса-тăма ырăн тупаймастăп, — малалла тăсать калаçăвне Ваççа. — Кайрăм хĕр ялне, авланас шухăшпа. Вăл пур яхăнне те ямасть, килĕшмест. Тилмĕрсе хăшкăлтăм. Пушă алăпа таврăнтăм.

Лав çул юппине çитрĕ. Карчăксем пĕрин хыççăн тепри анчĕç.

— Тавтапуç!

— Ялан телейлĕ пул! — ырă сунчĕç вĕсем лавçа. Йăмăкне те анса юлмаллине систерчĕç.

— Чим-ха, каласа пётермен, — пăлханать йекĕт. — Хăвăрт калăп, эсир кайран майлаштарса çырăр.

Лаши лавĕ çăмăлланнине туйрĕ те малалла ĕрĕхтерчĕ.

— Тпру-у! — кăшкăрать Ваççа тилхепине хыттăн туртса.

Выльăх темерĕн, çын кăмăлне ăнланмасть.

— Униççе, анса лаша пуçĕнчен тытса тăр-ха, — хушать çĕнĕ арăмне. — Пуçланă сăмаха каласа пётерем ĕнтĕ.

Хирĕçлемерĕ Ваççана иккĕмĕш арăмĕ. Итлерĕ. Çунаçинчен сиксе анчĕ те мала иртсе лаши пуçне нăхтинчен ярса тытрĕ. Çӳренĕ тулхăрать, пĕр вырăнта тăрасшăн мар. пуçне ывăтать.

— Юлашкинчен мĕн каланăччĕ-ха эпĕ? — аса илесшĕн пулчĕ Ваççа.

— Хĕр илсе таврăнайманни çинчен, — тет çыравçă.

— Э-эхе, çапла, — кулкалать Ваççа. — Мур илесшĕ, хăйĕн хакне ӳстерет мар-и... Кайран, шăрчăк, чĕнсе хăй çыру ячĕ. Çăмăл машинăпа кайса илтĕм. Туй хыççăн...

— Пĕрле фермăна ĕçлеме кайрăр-и?—сăмах хушрĕ çыравçă йекĕт калаçма тăхтаса тăнине курса.

— Мĕн эсĕ? Çĕнĕ çынна тӳрех кам ĕçе ярать? Ик-виç уйăх иртсен куç курĕччĕ. Юратнă арăма шеллетĕп ĕнтĕ. Тăватă эрне иртсен хуньăмсем патне кайса килес терĕмĕр тырă вырма тухиччен. Анчах телее çул çинче хĕрлĕ йытă çирĕ. Арăма каялла илсе таврăнаймарăм. Аппăшĕпе тем пăшăлтатрĕç, пăшăлтатрĕç. Вара таçта чиксе хучĕç арăма.

— Каялла пымасть вăл, — тет аппăшĕ.

— Мĕншĕн? — тетĕп.

— Мунча пек лапчăк пӳртӳнте мĕн туса пурăнтăр. Чапсăр хĕр мар вăл.

— Иксĕмĕр те фермăра ĕçленĕ пулсан чул çурт лартаттăмăр-ха.

— Ай-уй,— йынăшса ячĕ аппăшĕ, — ман йăмăкăн пилĕкне авасшăн-и?! Ĕç тухмĕ! Эпир айван çынсем мар. Ав хамăр кӳршĕ каччи салтакран курма килнĕ, çитес çул пуçĕпех таврăнать. Ашшĕ-амăшĕн вăл пĕр ывăл. Çурчĕ вĕсен кантур пек. Чăнах ăмсанмалăх пур, чăн-чăн каччă.

Пуç усса киле таврăнтăм юратнă арăмсăр. Халĕ, ав...

— Çитет ĕнтĕ пуплесе, лашу тапăртатать, тытса чараймастăп!—илтĕнчĕ иккĕмĕш арăмăн сасси.

— Юрĕ, килсе лар, Униççе! — чĕнчĕ Ваççа арăмне.

Çыравçă, çамрăк мăшăрпа сывпуллашса, аппăшсем

хыççăн утрĕ. Вăл сылтăмалла пăрăнакан çул çине мĕн лав курăнми пуличченех пăхса тăчĕ.

Мĕн кĕтĕ-ши Ваççана малашне? Анăçлă пулĕ-ши унăн иккĕмĕш арăмĕ?

Çак çул сыпăкĕ пăсăк пурнăçăн пуçламăшĕ ан пултăрах. Ара, иккĕмĕш арăмĕн те чунĕ, кăмăлĕ, чапĕ пурах.

Яла пырса кĕчĕ лав. Çырма урлă каçрĕ. Çул кунта тăвалла.

Умра икĕ ача пырать. Вĕсем шыв тултарнă витресем йăтнă. Хыçалти, пĕчĕкки, аран-аран утать. Уксахлать, ури ытла та ыратать пулас. Витрери шывĕ чӳхенсе тăкăнать, пăт-пăт тумлать юр çине.

Ваççа ачасене çийĕнчех асăрхарĕ, Куляна хĕрхенниле чĕри хĕсĕне-хĕсĕне килчĕ, анчах вырăнтан тапранма хал çитереймерĕ. Йăмăкĕпе шăллĕ пурри çинчен Униççене киле çитмесĕр каласшăн марччĕ вăл.

Унччен те пулмарĕ, уксахлаканнин ури шуса кайрĕ те шăкăр-макăр чикеленсе ӳкрĕ витри-мĕнĕпех.

Лаша тăпах чарăнчĕ. Ваççа куçне хупрĕ пăчăртаса.

— Ай-уй! Ачана мĕн пулчĕ?!—кăшкăрса ячĕ сехĕрленнĕ сасăпа Униççе, йăпăр-япăр çуна çинчен сиксе анчĕ те, лашаран иртсе, ачасем патне чупса çитрĕ хăвăрт.

Ваççа куçне уçса пăхать, тĕлĕннипе шак хытать. Унăн иккĕмĕш арăмĕ ачашшăн ура çине тăратрĕ Куляна. Тем калаçать йĕркеллĕн. Вара пушă витресене илчĕ те вĕçтерчĕ çырманалла.

## УПĂШКУ КУНАÇЛИ ПУЛТĂР

Сĕтел çинчи телефон шăнкăр-р шăнкăртатрĕ. Трубкине илсе хăлха патне тытатăп та сас паратăп: «Алло! Кам кирлĕччĕ?» Мана чĕнеççĕ-мĕн. «Шăпах эпĕ, — тетĕп. — Аçтан калаçаççĕ? Хула Советĕнчен? Аван. Сывлăх сунатăп!» Тимлĕн тăнлатăп хампа калаçакан çын сăмахне. «Чăнах-и? Ай-уй... Кăмăлтан килĕшетĕп».

Телефон трубкине çăмăллăн хуратăп. Васкамалла ман, каймалла.

Чи хитре кĕпеме, йăрăм-йăрăмлине, кăларатăп. Тулта хĕлле пулин те, урана туфли тăхăнас. Эпĕ депутат-çке, ятлă çын хулара, мана лăпăш-лапăш çӳреме юрамасть. Ах, мĕнле ĕç хушрĕç! Таçта та çитнĕ эпĕ депутат ĕçĕпе, анчах кунашкаллине пĕрремĕш хут тĕл пулатăп. ЗАГСа пынă мăшăрсене хула Совечĕн ĕçтăвкомĕ ячĕпе салам-

лама каймалла манăн. Уявне «Электрик» клубĕн пысăк залĕнче ирттереççĕ.

Тĕлĕнмелле кун капланса килчĕ паян. Kaç кÿлĕм ахаль те туя каймаллаччĕ-ха. Темиçе çул каялла çак хваттерте пĕрле пурăннă Лидия Петровна аслă ывăлне — Вовине — авлантарать. Çĕнĕ хваттерĕ аякра пирки пачах çÿрейместпĕр пĕр-пĕрин патне. Халĕ те, ав, туя пыма йыхрав хутне çырупа ярса панă. Питĕ туслă пурăнаттăмăрçке. Хуйхи-суйхине те пе́рле тÿссе ирттернĕ. Икĕ ывăл ÿстерчĕ пĕччен. Упăшки, вăрçăран аманса таврăннăскер, çĕре ир кéчĕ. Мéн каласси пур, йывăр пурăнăç тÿсрĕç аш шĕсĕр. Çапах та, çын ăмсанмалла сăпайлă ачасем çитĕнчĕç. Техникумран вĕренсе тухсан, Вова комсомол путевкипе Колымана ĕçлеме кайрĕ. Kанма килнĕ те халь, авлансах каять имĕш.

Тухрăм килтен. Пыратăп урампа. Kăмăл çĕкленÿллĕ. Лапка-лапка юр çăвать. Вăл ним те мар, чăрмантармасть. Клубĕ çывăхрах. Ваштах çитрĕм.

Кино курма час-часах çÿретпĕр ку клуба. Тур çырлах! Паян ăна палласа та илеймĕн. Çап-çутă! Ильич лампочкисем куça йăмăхтармалла ялтăраççĕ. Ăçта ан пăх, чечек! Хĕл кунĕнче мĕнле çав териех хитре чечек тупнăши?! Çепĕç музыка лăпкать чуна. Таçта вĕçсе каяс килет. Çамрăксем мĕн чухлĕ пухăннă тата! Вĕркĕшеççĕ кăна. Çакăн пек самантра ăçтан тĕк тăрăн. Унталла, кунталла иртеççĕ. Чÿрече умĕсенче яш каччăсем, пикесем ушкăнăн-ушкăнăн тăраççĕ. Пурте хаваслă. Хĕрсен кулли йĕс шăнкăрав сасси пек илтĕнет. Каччисем те маттур, кичеммĕн мĕскĕнленсе тăракан çук, пĕри шÿтлет, ыттисем каçса кайсах кулаççĕ. Хавас чух тута хупăнмасть.

Çÿлти хута хăпаратăп. Çаврака сĕтел хушшинче темиçен лараççĕ. ЗАГСра ĕçлекенсем. Вĕсем çĕнĕ çынсене йышăнаççĕ. Эпĕ те хампа паллаштаратăп. Йăла-йĕркесем пуçланиччен кăшт кĕтмелле. Сăнатăп, çÿретĕп.

Хĕрсене, пулас кинсене, уйрăм пÿлĕме ăсатаççĕ, тирпейленме. Миçен вĕсем! Хĕр вĕт-ха вĕсем халĕ, анчах кунтан çырăнса тухаççĕ. Мĕн шухăшлаççĕ-ши вĕсем çак самантра? Ĕлĕк, паллах, хĕр куççуль юхтарнă. Халĕ ун пек пулма пултараймасть, хĕрпе каччă юратса пĕрлешеççĕçке. Хĕрсен пÿлĕмне кĕретĕп. Пăхатăп пĕрне, теприне. Нихăшин сăнĕ те салху мар. Çапла кирлĕ те. Ав, пĕр чиперкки пысăк тĕкĕр умĕнче хăй пĕвĕ тăрăх пăхать кăна. Ай-яй, йăрăс пÿллĕскер. Тĕкĕрте пирĕн куççем йăлт! тĕл пулчĕç. Алтăр куç... Анчах та вăл куçне хăвăрт тартрĕ.

Именет. Чĕрем теме сиссе кăрт! кăрт! тапса илчĕ. Чим, чим, ара ку паллаНă хĕр-çке. Тупата, çапла. Ячĕ унăн Венера. Вăлах, пысăк куçлăскер. Кама качча каять-ши вăл? Лешне, Атăл йӳппин патшинех-ши? Кăсăкланса кайрăм. Тен, ыйтас? Мĕн эпĕ? Ха, пуçа айванла шухăш пырса кĕчĕ. Сирĕл! Çакнашкал самантра тĕпчесе тăни ытла та сĕмсĕрле пулĕччĕ. Венера хăй те инкекрен хăтăлас шутлăн, икĕ хĕр хыçне кайса тăчĕ. Чăрмантармăп. Кирек мĕнле пулсан та, пурнăçа улăштарса, тепĕр çулпа яма халĕ кая юлнă.

Эпĕ хĕрсен пӳлĕмĕнчен тухрăм. Мана, ав, шыраççĕ темĕн. Саламлама килнисем татах та пур. Пире клубăн пысăк залне ăсатаççĕ. У-ух! Кунта халăх мĕн чухлĕ! Качча каякансемпе авланакансен хурăнташĕсем, тус-тантăшĕсем пулĕ, ахăртнех. Эпир сцена çине хăпаратпăр. Вăрăм сĕтел çине хĕрлĕ хăмач сарнă. Шухăшласан, темле, ытла та чаплă самант çитнине туятăн.

ЗАГСра ĕçлекенсем кĕреймерĕç-ха. Вĕсен, чăннипех, ĕç нумай. Çĕнĕ çынсен докуменчĕсене майлаштармалла. Эпир те вăхăтлăха чаршав хыçне кĕрсе сак çине лартăмăр. Пурте калаçаççĕ. Эпĕ тăнламастăп. Пуçăмран Венера тухмасть. Шухăшăм мана темиçе çул каялла кайса ывăтрĕ.

* *
*

Чи малтан эпĕ Венерăпа мар, унăн аппăшĕпе — Ритăпа — паллашнă. Ун чухне каçхи университетра вĕренеттĕмĕр. Рита юнашар ларчĕ те тек хăпмарĕ ман çумран. Куншăн тĕлĕнместĕп. Çамрăксем хам пата туртăннине кирек ăçта та туйса тăнă эпĕ. Халĕ те-ха пĕр хваттерте пурăнакан шофер йăмăкĕпе туслă пурăнатпăр. Инкĕше çакăншăн кĕвĕçнипе типсех ларчĕ. Хушăран тӳсейменнипе йĕплесе те пăхать: «Тупăннă тантăшсем... Пăшăлтатса тăни килĕшмест сире». Эпир хыпмастпăр вăл шăл кăйранишĕн. Вуланă кĕнекесем пирки вĕçĕ-хĕррисĕр калаçатпăр.

Венера аппăшĕ Ритăпа та эпир çав тери çывăхланнăччĕ. Чăнах, иксĕмĕрĕн çулсем хушши самаях. Сахалтан та эпĕ унтан вун-вуник çул аслăрах. Апла пулин те, пĕр-пĕринсĕр кинона, театра кайман. Кулăш! Савнă каччипе тĕл пулма кайнă чух та ăсататтăм ăна.

Теплерен Рита патне килне кĕме тиврĕ. «Ман йăмăк Венера, паллашăр», — терĕ Рита, алăк уçса кĕртнĕ хĕрача çине кăтартса. Çав кун вĕсен амăшне те, ашшĕне те

куртӑм. Килӗшрӗҫ пурте. Иртнӗ ҫул ҫеҫ Шупашкара килнӗ-мӗн. Ашшӗне завода ӗҫлеме янӑ. Илтнӗ ӑста инженер тенине. Хваттерӗ вӗсен чӑн-чӑн керменех. Пысӑк. Кӗрсе тӑрсан темиҫе алӑк куран. Хӗрсен хӑйсен, ваттисен хӑйсен пӳлӗмӗсем. Ку ҫеҫ-и! Венера вӑтам шкулсӑр пуҫне художество шкулне ҫӳрет. Килте ӗҫлеме ятарласа кӗтес парнеленӗ. Хӑтлӑ та вара кунта. Пӳлӗм стенисене тӗрлӗрен картинӑсем илемлетеҫҫӗ. Акӑ вырӑссен паллӑ художникӗ Шишкин картини: хыр вӑрманӗнче упасем выляҫҫӗ. Брюлловӑн чуна хумхантаракан «Помпейӑн юлашки кунӗ» картини те пур... Урам енчи стена ҫумӗнче, икӗ чӳрече хушшинче, Венера хӑй ӳкернӗ ӳкерчӗксем. Уйрӑмах портретсем йӗрлеме юратать пулас. Речӗпех вӗсем, куҫран шӑтарасла пӑхаҫҫӗ.

Кайран эпӗ ку пӳлӗмре Венерӑпа пӗр класра вӗренекенсене те пайтах курнӑ. Чылайӑшӗн сӑн-пичӗ хут ҫинчи портретпа пӗрешкеллине асӑрхарӑм.

Майӗпен Венера пӳлӗмӗ пирӗншӗн те кану пӳлӗмӗ пулса тӑчӗ. Пӗр пӗрнери пӗрлӗхен пек пурӑнаттӑмӑр туслӑ та мирлӗ. Мӗн ҫинчен кӑна калаҫмастӑмӑр-ши! Тапӗр чух Венера концерт паратчӗ. Йӳрӗк хӗрача вӑл, лара-тӑра пӗлмест. Пианино умне вырнаҫсан, пӳрнисем вӑй выляҫҫӗ вара. Ӳссе ҫитсен кам пулӗ-ши ку хӗрача? Музыкант е художник? Тен, артистка ҫулӗ кӗтет ӑна? Мӗнлерех вӑл сӑвӑ вулать! Тӑрать вара каҫӑрларах, пуҫне каялла ывӑтарах... Кашни сӑмахӗ чӗрене тивет. Ҫук, Венера, пӑхса ытараймӗ чипер хӗрача мар. Чӑнах ӗнтӗ, куҫӗ пысӑк. Темшӗн вӑл тӗссӗртерех сӑн-сӑпатне илем памасть. Сӑмси каҫӑр. Ҫӳҫӗ улӑм тӗслӗ, ярт! тӑсӑлса тӑрать аялалла. Анчах ҫапах та ун ҫине куҫ илмесӗр пӑхас килет. Ӑнланаймастӑп, мӗн-ши Венерӑра «кил кунта, кил» тесе кӑчӑк туртаканни? Тен, вӑл ӳлӗмхи, пуласси? Халӗ вӑл пурӗ те саккӑрмӗш класра ҫеҫ вӗренет. Вӑхӑт иртӗ, ҫитӗнӗ тӗнчере ҫук чипер пике.

Икӗ хӗл иртрӗ ҫапла. Унтан каллех ҫуркунне ҫитрӗ. Юр ирӗлчӗ. Ҫӗр пичӗ те ӗнтӗ ем-ешӗл. Пӳрте кӗрес килмест. Пуринчен ытла Атӑл илӗртет. Леш енӗ вара ҫӗр ҫинчи чи канлӗ ҫӑтмах. Хулара унта каҫман ҫын ҫук-тӑр.

Венера та Таня тантӑшӗпе Атӑл леш енне каҫнӑ. Йӑпӑртлӑха ҫеҫ, кӑшт канма. Ара вӗсен ҫаплах экзаменсем пулчӗҫ-ҫке, вӑтам шкултан вӗренсе тухаҫҫӗ. Аттестата лармалли паллӑсем аван. Чӑрмантараканни пӗр кӑлтӑк пур. Темиҫе ҫул каялла географипе вӗренсе пӗтерсен тытнӑ экзамен палли тантӑшсен иккӗшин те «вис-

çĕ» çеç. Аттестата варалать ку. Çĕнĕрен экзамен тытасшăн. Çавăнпа та вĕсем географи учебникĕ илнĕ, кăшт-кашт пăхса тухкалама.

Мĕн пулнă Венерăна Атăл леш енче? Тавăрăнсан вăл хăй пÿлĕмĕнчи диван çине выртрĕ те тăмарĕ виçĕ кунччен. Чир-чĕр тытса хутлатман-и? Пĕçертсе пăрахман, çамки сип-сивех. Куçĕ шыв тумламĕ пек çап-çутă. Пурте пăшăрханатпăр. Аша хĕлхем ямасть, выртать маччаналла пăхса. Питрен улшăнчĕ. Хăй патне кĕнине юратмасть. Алăка хупса тăратпăр.

Эпир те Ритăпа каçхи университет пĕтертĕмĕр. Экзаменсем иртрĕç. Пушантăмăр пачах. Тавăрăнтăмăр. Венера килте çук, шкула экзамен тытма кайнă, имĕш. Кĕтĕмĕр ун пÿлĕмне. Тÿрех асăрхарăмăр: сĕтел çинче — çĕнĕ портрет. Вăрăм çÿçлĕ, сухаллă вăй-питти арçын. Чап-чакăр куçĕ пирĕн çине ăшшăн-ăшшăн пăхать. Темшĕн вăл сăрпа сăрласа куçне çеç тĕс панă. Кама аса илтереççĕ çак чакăр куçсем? Курасса курнă-ха. Ваштах аса илейместĕп. Портретне алла илетĕп. Ун айĕнче тепĕр ÿкерчĕк. Каллех çав çын. Пĕтĕм пĕвĕпе тăрать. Çийĕнче ун шăлавар çине кăларса янă лучăрканнă кĕпе. Уринче резина атă, кунчи çурăк. Аллинче хулă. Пÿрнисем юлхав хĕрĕнни евĕр кÿпшек. Ÿкерчĕк айне çапла çырнă: «Атăл йÿппин патши».

— Кам ку, юмахри паттăр-и? — тет Рита, ассăн сывласа. — Аван ÿкерчĕк. Талантсене ăнланма хĕн. Илткеленĕ, пĕр-пĕр чаплă произведени пĕçерсе кăларнă самантра чун чирĕпе чирлеççĕ тенине.

Ман пуçăма урăхларах шухăш юхса кĕчĕ. Талăк-талăкĕпе тăсăлнă чун асапĕн сăлтавĕ, тен, çак çынра? Курсан эпĕ ăна...

«Эсир ăна паллатăр-и?» — тенине илтрĕм. Палтах çаврăнса пăхрăм. Алăкра — Венера. Куçĕ чăн ахах, йăлтăртатать. Сиссе те юлаймарăм, вăл чупса пырса ыталарĕ мана. Куçĕнче мĕн чухлĕ тилмĕрÿ.

— Эсир, — терĕ вăл шанчăклă сăмах илтесшĕн пулса, — паллатăр-и ăна? Кам вăл?

— Ку этем кам иккенне хăвăнтан ыйтасшăнччĕ, — терĕм.

— Эх, пĕлсенччĕ...

Венерăн сасси ытла салху тухрĕ. Куçĕ сÿнчĕ. Диван çине ларчĕ пусăрăнчăклă.

— Атăл йÿппин патши... — йĕкĕлтесе илчĕ йăмăкне Рита.

Кулмасӑр тӳсеймерӗмӗр.

— Сире — кулӑ, мана — куҫҫуль, — мӑкӑртатать Венера салхуллӑн. — Юратрӑм эпӗ Атӑл йӳппин патшине. Акӑ мӗн.

Шартах сикрӗмӗр. Ӑна, иккен, малтанхи юрату пырса ҫапнӑ. Тивӗҫлӗ-ши ҫав этем ҫамрӑк пике юратӑвне? Юрату суккӑр. Юрату пашалу мар, сӗтпе ҫисе яраймӑн. Ӑнӑҫсӑр юратушӑн сахал-и ҫут тӗнчере пуҫне ҫухатакансем. Пӗччен асапа ҫӗнтерме хӗн. Эпир Венерӑшӑн тӑшман-и? Ҫук, пачах урӑхла, чи ҫывӑх тусӗсем. Тус туса инкекрен ҫӑлма тивӗҫ. Ҫакна Венера та аван чухлать.

Нумай та вӑхӑт иртмерӗ, «Атӑл йӳппин патши» пирки йӑлтах пӗлтӗмӗр Венерӑран. Халӗ ӗнтӗ пирӗн тӗллев — унӑн йӗрӗ ҫине ӳкесси.

...Вӗсене Атӑл леш енне пӑрахут илсе ҫитернӗ. Хӗрсем пӗчӗк пристаньрен тухсан ҫыран хӗррипе аналла утнӑ. Акӑ йӗлме тӗмӗ, вӑл Атӑла пуҫ тайнӑн ҫӗре ҫитиех пӗкӗрӗлнӗ. Йывӑҫ тураттисен сулхӑнӗнче ларма селӗм. Тахӑшӗсем каннӑ та курӑнать кунта. Лӳчӗркесе пӑрахнӑ хаҫат листисем кассӑн-кассӑн вӗрекен ҫилпе кӑштӑртатаҫҫӗ. Ҫывӑхрах сарлака хӑма выртать. Хӗрсем хӑйӑртан икӗ купа купаланӑ та вӗсем ҫине хӑма хунӑ — сак хатӗр. Ниҫта ҫын курӑнмасть. Канмалли кун мар, халӑх ӗҫре. Чӑрмантаракан ҫук, эппин, вула та вула. Сак ҫине ларса, Венерӑпа Таня географи учебникне уҫнӑ.

Вуланӑ-вуланӑ тантӑшсем, утрав енчен хӑйсем патнелле кимӗ ишнине туйман. Ҫырана икӗ йӗкӗт тухнӑ. Кушакла йӑпшӑнса, систермесӗр йӗлме вулли ҫумне пырса тайӑннӑ вӗсем. Ҫапла нумай тӑрайӑн-и? Ши-и! шӑхӑраҫҫӗ хайхискерсем.

Венера ялт! пӑхса илет сасӑ илтӗннӗ енне. Курать: йывӑҫ ҫумӗнче — сухаллӑ ҫын! Шартах сикет, тепле чӑтать ҫухӑрса ямасӑр. Пӗччен мар. Юлташӗпе. Вӑл ҫара янахлӑ, шакла пуҫлӑ. Чӗнессе кӗтмесӗр хӗрсем патне пыраҫҫӗ. Те чӑнласа, те ахальтен сывлӑх сунаҫҫӗ хӑйсем: «Салам пикесене!» Сухалли тӳрех Венера патне пырать, тепри Таня ҫумне ларать. Вӗҫкӗнпе-ши, сухалли тӳрех тытӑнать аллисене сулкаласа сӑвӑ вулама:

Ҫурхи каҫ таврана<br>
Ырӑ ҫӗмӗрт шӑрши сарӑлсан,<br>
Студентсем ҫырана<br>
Уҫӑлма алла-аллӑн тухсан,<br>
Юрӑсем, ташӑсем,<br>
Ҫамрӑксен сассисем,

Атăл урлă каçса,
Янратаç йăлăмри вăрмана...

Шакла пуçли çиме ыйтать хĕрсенчен:

— Хырăм выçă, хăналăр-ха мĕнпе те пулин.

— Пирĕн чăмăрла паранкă çеç, — сăмах хушать Таня, хутпа чĕркенĕ çĕрулмие вĕсен умне хурса.

— Çĕрулминчен йĕпхĕрмен. Пулсан халĕ куян çурине те çăтса яма хатĕр, — çапла пулчĕ лешĕн сăмахĕ. Сĕнесселе кĕтмест, сурчăкне çăта-çăта тытăнать паранкă хуппине шуратма.

Пăхаççĕ хĕрсем йыхăрмасăр килнĕ çынсем çине. Сăнаççĕ. Иккĕшне икĕ майлă шухăш çавăрать.

ТАНЯ: «Сăнĕ пичĕсем, тумĕсем ытла иленкесĕр. Тем тесен те вăрă-хурахсем. Тĕрмерен вĕçерĕннĕ пуль-и? Шанчăксăр этемсем. Хур тăвĕç. Инкек-синкек тухĕ. Хăтăлас тесен, хăвăртрах тармалла».

ВЕНЕРА: «Институтра вĕренекен студентсем. Çумăмри — поэт мар-ши? Сăвăçсем ялан хăйне евĕрлĕ çӳреççĕ. Тен, вăл пианист. Пӳрнисем епле вăрăм, илемлĕ, кăпăшка, ачаш. Сухалĕ? Мĕнех вара, пушшех сăн парать ăна».

Унччен те пулмасть, Таня сиксе тăрать те тăвалла тĕпĕртеттерет тиха евĕр.

— Атя, Венера! — кăшкăрать чупнă май.

Венера иккĕленсе тăрать. Ун юлма та кăмăлĕ пур, анчах ютсемпе ларни килĕшмест хĕрупраçа. Ирĕксĕрех кĕтмелле юлташне. Тăрса лĕпĕстетет.

Йĕкĕтсем хĕрсен шухăшне тавçăрчĕç. Кăшкăраççĕ:

— Хĕрсем, чарăнăр!

— Пурпĕрех хуса çитетпĕр!

Таньăн чăнласах сехри хăпать. Йĕкĕтсен сасси — аçа-çиçĕм. Хăрататать. Пристань инçе, такăнса ӳкесле чупсан та çул ӳсĕнмест.

Кайсан-кайсан, Таня çавăрăнса пăхать. Мĕн курчĕ вăл! Сухалли Венерăна хуса çитнĕ. Юрать-ха, тепри вырăнтан тапранман. «Пĕтереççĕ... Пристаньре милиционер тупса илсе килес. Тантăш хĕре вăрă-хурахсенчен çăлмалла. Ун аллинче сехет...»—шухăшлать Таня.

— Ма пăрахса хăваран? — тет сухалли Венерăна. — Ман сухалтан хăрарăн. Çапла-и?

— Ахă, — тет Венера. — Хĕрсене хăратнине пĕле тăркачах, мĕншĕн ӳстертĕн?

— Асаттесен ашшĕсен çамрăклăхне сума суса. Вĕсем нихăçан та сухалĕсене кастарман. Итле-ха, санран пĕр сăмах ыйтасшăн. Пĕл, эпĕ тĕрĕссине çеç илтме хăнăхнă.

— Суйсан?

— Ҫасармастӑп. Таваратӑп.

— Хӗнетӗн-и?

Сухалли чӗнмест, хӗр ҫине шӑтарасла пӑхать.

— Эсӗ ытлашширех павран иккен.

— Хӑюллӑ хӗр-ҫке эсӗ! — тет сухалли, куҫне хӗссе. — Мана сан пеккисем килӗшеҫҫӗ. Итле, эпӗ сана юратса пӑрахрӑм.

Венера карт туртса кӑларать аллине каччӑ ывӑҫинчен. Кайма пикенет. Йӗкӗчӗ тытса чарать татах:

— Эх, пӗлесчӗ сан эпӗ камне, шит уйрӑлмӑттӑн.

— Кам вара эсӗ аплах? — ыйтать Венера.

Сухалли кулса ярать, унтан ҫапла паклаттарса хурать:

— Атӑл йӳппин патши.

Венерӑна питӗ кулӑшла пек туйӑнать. Вӑл каҫса кайсах кулать. Шикленмест унран нимӗн чухлӗ те. Хӑрама мар, унпа таҫта кайма хатӗр. Тен, каятчӗ те, анчах туран Таня милиционерпа килнине курать. Атӑл йӳппин патши те асӑрхамасӑр тӑман ӗнтӗ. Ирӗклӗ кунтан камӑн ҫыхланас килтӗр.

— Асту, пирӗн пӗр-пӗрне тупмаллах!

Ҫак сӑмахсене ҫеҫ илтсе юлать Венера, хӑйӗнчен самант уйӑрӑлса кайнӑ ҫынран. Часах ҫын юлташӗпе кимӗ ҫине ларать. Авӑснӑҫемӗн чӑмпӑлт-чӑмпӑлт перӗнеҫҫӗ шыва кӗсменсем. Таньӑпа милиционер та ҫитеҫҫӗ ҫыран хӗрне. Мӗн усси? Лешсене алӑпа ярса илес ҫук. Аякка ишме ӗлкӗрнӗ вӗсем.

— Ых-х, тарчӗҫ йӗксӗксем!—тет Таня. Унтан вӑл юпа евӗр хытса тӑнӑ тантӑшӗ патне пырать те ыйтать: — Венера, сана тивмерӗҫ-и, кӳрентермерӗҫ-и вӗсем?

Таньӑна тарӑхнӑ Венера ним те чӗнмест, сасартӑк хӑлхасӑрланчӗ тейӗн. Тем пуплеҫҫӗ Таньӑпа милиционер. Калаҫӗҫин, чунӗпе кимӗ ҫинчи йӗкӗтсем хушшинче ларакан хӗрӗн ним ӗҫ те ҫук вӗсемпе.

Килте те никампа курнӑҫас, юмахлас килмен Венерӑн. Ҫавӑнпа та вӑл виҫӗ талӑк вырӑн ҫинчен анмасть, алтӑр куҫӗпе маччана ҫеҫ тӗллет. Пуҫра — Атӑл йӳппин патши. Шухӑш вӗҫет, вӗҫет. Килӗшнӗҫем килӗшсе пырать ҫывӑххӑн паллашма та ӗлкӗреймен каччӑ. Умран каймасть пачах. «Унӑн сенкер куҫӗ шӑп уяр ҫанталӑкра, хӗвел питӗнче палкаса выртан ҫӑлкуҫӗ. Тилмӗрсе пӑхать. Мӗн ыйтать? Пичӗ хыткан, шӑммисем палӑраҫҫӗ. Сухаллӑ шӗвӗрянах. Ҫамки сарлака. Хӗвелпе тӗсне ҫухатнӑ вӑрӑм ҫӳҫне

вирелле туранă. Малти пайăркисем ĕнсе хыçнех çитеççĕ. Куçхаршисене çеç куран. Тумĕ мĕншĕн хăлти-халти? Атăл йўппин патшине çапла килĕшет те».

Асаплă шухăшсемпе вырăн çинчен сиксе тăрать те Венера сĕтел хушшине ларать. Шурă хут листи çийĕн тытăнать вара вылямă карандаш. Вăл вылянă-ташланăçемĕн юхса тухать чунран пĕтĕм тунсăх, ун вырăнне тапса тăракан вăй кĕрет. Ку вăй тем тума та çитет.

Ўкерчĕкри Атăл йўппин патши чăр-чăр пăхма тытăнсан, пуçăнать унпа хĕр калаçма: «Хăравçă, тартăн. Сана пурпĕрех тупатăп!»

Çав кун кўлчĕ те пире Венера. «Пулăшăр, — терĕ вăл.— Атăл йўппин патшипе тĕл пулмасан, географипе экзамен параймастăп».

Мĕн тăвăн? Шыва путакан çынна алă памаллах.

«Пўтсĕр çын!» — ятлатпăр Ритăпа куçпа курман сухаллă этеме.

Чи малтан эпир Атăл хĕррипе çўрерĕмĕр. Мĕн чухлĕ халăх утать. Хĕрарăмсене асăрхамастпăр, сухаллă янах кăна кирлĕ пире.

— Ав, ав, — терĕ Рита. Куçĕ тинкернĕ çĕрелле пăхрăм. Чăнах сухаллă этем-мĕн. Анчах ватă çын, çумĕнче карчăкĕ.

Тепĕр кунне эпир çыран хĕрринче кимĕçе тара тытса Атăл леш енне каçрăмăр. Вĕçнĕ евĕр пырать пирĕн кимĕ. Мĕнле илемлĕ тавралăх. Пăхса ытараймăн. Атăл икĕ утрав хушшипе çул хывнă. Затона çитнĕ çĕре вăл сенĕк пек йўпленет: çўлелле тата аялалла. Шыв çийĕн кăтра хумсем йăпăртатаççĕ, çырана пырса ачашшăн лăпкаççĕ.

Акă шыв кукăрĕ. Çакăнта пурăнать-тăр пирĕн Атăл йўппин патши. Кунта вĕсем курнăçнă.

Кимĕ сăмси утрав çыранне тирĕнет. Сиксе тухатпăр. Вылянаççĕ куçсем. Таçта ача-пăча сасси илтĕнет. Пĕр-пĕр улах вырăнта пулă тытаççĕ пулас. Хăвалăха кĕретпĕр. Кăшкăрса янăраттарса ячĕ Рита:

— Робинзон! Ăçта эсĕ? Тух хăвăртрах!

Сасартăк ума тухсан, вара мĕн? Тытса каятпăр-и? Асту. Хăварĕ ура тупанне кăтартса. Айвансем эпир. Юрать-ха утравĕ калăпсăр сарăлса выртмасть, çапах та витĕр пăхса та курăнмасть. Эппин, çўремелле. Куматпăр урлă-пирлĕ. Утма кансĕр хăйăр çинче. Сарлака çулçăллă хупах тĕмĕсем ашкăраççĕ. Вĕсенчен ура чăлханать. Пит-куçа та çапса илеççĕ хăва турачĕсем. Усси пулас пек тўсрĕмĕр.

Рита тарăхать:

— Çитĕ. Тупайман ĕçĕ пĕтнĕ. Географипе кутемĕн экзамен тытнă Венера.

Хамăн та ăшчик тулнă. Ятлатăп. Чăнах юнсăркка хĕр екки хыççăн çӳретпĕр. Ытлашши ирĕке кайнă хĕр, ашшĕамăш нăхтинчен вĕçерĕннĕ. Юрамасть унашкал.

Тавăрăнтăмăр. Венера пире асăрхамасть те. Тĕкĕр умĕнче куç хăрпăкне хуратса тăрать. Çийĕнче чечеклĕ шурă кĕпе. Уринче пăта пек шĕвĕр те çинçе кĕлеллĕ туфли. Сăрланса пĕтсен, пирĕн çине шелленĕн пăхса илчĕ.

— Тупрăр-и? — тет тутине елпешкелентерсе. Çавăнтах ихĕлтетсе илчĕ. Пачах улшăннă хĕр.

Каярахпа акă мĕн пĕлтĕмĕр: Венера Атăл йӳппин патшипе ĕнерех курнăçнă. Географипе экзамен тытман. Аттестатра пĕр «виççĕ» çаплипех юлать. Халĕ вăл тĕл пулма каять каччипе.

Татах тарăхрăмăр.

— Кам вăл? — туллашать Рита.

— Çын, — тет Венера çăмăлттайла. — Пĕр-пĕрне вилесле юрататпăр. Чи кирли çакă. Тен, ăна качча та кайăп. Çĕркаç пăчăртаса чуп турĕ.

Тамаша! Эпир пăшăрханса ӳкрĕмĕр.

— Мĕнле апла, пĕрре курсах-и? — тетĕп. — Ăçта, мĕнре ĕçлет вăл?

— Эсир ватă çын, — тет Венера. — Хальхи çамрăксем ăçта, мĕнре ĕçленине пăхмаççĕ. Чи кирли пĕр-пĕрне юратнинче! Пурнăçа пĕр пек туйнинче.

Тавăрса калама сăмах тупаймарăм. Вăл татах тĕкĕр енне çавăрăнса майланма тытăнчĕ. Эпĕ ăна калпак тăхăннă тесеччĕ. Çук, иккен. Çӳçне кăпăшкалатса çӳлелле хăпартнă. Ара хураччĕ-çке çӳçĕ, хăçан пĕветме ĕлкĕрнĕ вăл? Шăп чечек çурнă хĕвелçаврăнăш пуçех, йăмăх сарă. Пуç кăшăлĕ — шурă хăю. Мăйĕнче — пĕрлĕхен шăрçа. Шăпах çаран çинчи хĕзел шевлипе темиçе тĕслĕн чĕлтĕртетекен чечек. Паллах, капла сăрă пыл хурчĕсем сырăнаççĕ, тупăнаççĕ пиçнĕ-пиçмен çырлашăн пурак çакса тухакансем те.

Ытлашши вĕлтĕркке хĕр. Хăйне хăй ытараймасть. Ав епле авкаланать, хуçкаланать, юрлакалать: ля-ля-ля! Унтан вăрт-варт утрĕ алăк патнелле.

— Сыв пулăр, пур пулăр! Эпĕ кайрăм. Телей сунăр! — тет вăл, ал сулса.

— Асту, чипер çӳренĕ пултăр!

Те илтрĕ Венера аппăшĕ çапла асăрхаттарса каланине, те çук. Эпир алкумĕнче унăн пушмак кĕлли çăмăл-

лăн шăк-шăк шăкăртатнине кăна илтсе юлтăмăр. Вĕçет хĕр пирĕн.

«Çакăн пек айван вăхăтра йăнăшать те хĕр», — тетĕп.

Ритăн темшĕн пичĕ улшăнчĕ. Туятăп, пăшăрханать. Тĕлли-паллисĕр япаласене пĕр вырăнтан тепĕр çĕре куçаркалать. Халатне тăхăнать, хывать, кĕпе тăхăнать.

— Ан вĕселен-ха, — тетĕп.

— Атя, каяр, — чĕнет вăл мана.

Аçта йыхăрнине сисетĕп.

— Йĕрлени кӳрентерет, çын тивĕçне ӳкерет, — ăнлантаратăп.

— Питех кирлĕ пулĕ вĕсен хыççăн сулланса çӳреме.

Ултала й м ăн. Туятпăр, тĕллев иксĕмĕрĕн те пĕрре: Венерăпа Атăл йӳппин патшине курасси. Ятарласа шыранă самантра нихăçан та куç тĕлне тухмасть çын. Курасса куртăм, тепĕр икĕ кунсем иртсен, пăч тăр кăнтăрла; Атăл хĕрринчи каферен апат çисе тухсан. Вĕсене хирĕçех пултăм. Юлхавлăн утаççĕ кĕллĕн-каллĕн пускаласа, аллаллăн тытăннă та. Малтан Венерăп йăл-йăл куллине кăна асăрханăччĕ, ним те калаймăн, телейлĕ хĕр, унтан каччи çине ӳкрĕ куç. Пăхрăм та, çавăнтах чуна çиçĕм яр! çурса пăрахрĕ. Тепле карлăка тытма ĕлкĕртĕм, унсăрăн кайса ӳкеттĕмех. Палланă çын! Вăл пирĕн хăтасемпе пĕр хваттерте пурăнать. Ячĕ ун — Алексей. Вăтăр урлă каçнăскер. Çук, хăй ятне тивĕçлĕ мар вăл. Пултăрах «Атăл йӳппин патши». Çӳçне-пуçне мĕншĕн араслантарнă? Апăрша этемĕ. Чухламалла: сухалпа витĕнсен çын палламасть самантрах. Пытанать, эппин. Сăлтавĕ пур. Килте унăн арăмĕ, ачи пур.

Чарăнмарĕç. Иртсе кайрĕç. Венера куçне мĕлт-мĕлт хупкалать, хĕскелет: «Кур, мĕнле ăмăрткайăк вăл»,—терĕ пулĕ. «Çумăнти этем пирки йăлтах пĕлсен выртса макăрăн...» — тетĕп ăшăмра Венерăна.

Вырăна çитрĕм. Ăш вăрканипе ĕç патне алă пымасть. Мĕн тумалла ĕнтĕ? Çынна чăннине калама питĕ йывăр. Каялла тапса та пăхатăп. Ман мĕн ĕç пур? Хăйсем пĕçернĕ шӳрпене хăйсемех лĕркеччĕр. Анчах чĕре канăç памасть, шухăш пăркăчлать. Венерăна шел. Вăл çур ăшшипе çеçкеленнĕ чечек. Çăлмалла ăна инкекран. Кам пĕлмест: пĕр ӳсĕмри тантăшсем пĕрлешсен çеç пурăнăç калама çук шеп, тата вĕсен чунĕсем çăл шывĕ пек таса пулсан, хĕрӳ юрату ĕмĕре пырать.

Кун кунланчĕ аран-аран. Калаçма Ритăна пахчана чĕнтĕм телефон тăрăх. Венерăна ăса кӳртесси пирки вă-

рахчен сӳтсе яврӑмӑр. Ыраттарать пулин те тӗрӗссине каламалла. Ытах итлемесен ваттисене пӗлтерес. Вӗсем ҫӑварлӑхлама тивӗҫ.

Килте Венерӑна хӑйӗн пӳлӗмӗнче тупрӑмӑр. Юрлаюрлах темле ӳкерчӗксем тӑвать. Пӗрре пӑхсах паллӑ, чунра ун сар ҫу.

— Мӗнле сывлӑхсем сирӗн, юратнӑ аппасем? — тет хуҫкаланса.— Савӑнӑҫ лӑпкать-и, хуйхӑ кӑшлать-и?

— Пире тивмӗ-ха, — пӑч татса хучӗ Рита. — Сан чунна вӑт часах шӗкӗ кӑшлама тытӑнать.

Эпӗ диван ҫине пырса лартӑм.

— Ай, хӑратӑп, аппаҫӑм! — тет Венера. Анчах хӑрани паллӑ мар, ихӗлтетсе илчӗ кӑна. Унӑн кулли анаталла ҫӑмӑл кӑлтӑрмач кусса аннӑнах туйӑнчӗ. Ҫапах та ыйтрӗ шӳтлӗ-мӗнлӗ:

— Аппаҫӑм, ман сӑн-питӗме типӗтекен хуйхӑ капланса килес хӑрушлӑх пур-им?

— Хӑв илӗртен.

— Витмест сӑмахху,— чӑрсӑрланать Венера,— таврара ан ҫӳре. Ухӑ йӗппине тӳрӗ вӗҫертсе яма хӑнӑх.

— Юрӗ, вӗҫертем, анчах ҫӗре персе анан. Акӑ мӗн: санӑн Атӑл йӳппи патши — авланнӑскер.

Венера аппӑшне пыртан ярса илессе кӗтрӗм. Ҫук, пуҫне те ҫӗклемерӗ, кулчӗ кӑна. Сасси вара пачах урӑхла: кӑлтӑрмач йывӑррӑн сӑрталла мекеҫленнӗ пек.

— Хыпару хӑлха ҫунаттине ӳпре ҫыртнӑ чухлӗ те йӗплемест, — тет.

Кулма чарӑнчӗ хӗр.

— Венера, унӑн ача та пур, — сӑмах хушрӑм.

— Сирӗнтен малтан пӗлнӗ. Эпир пӗр-пӗрне юрататпӑр. Юрату умӗнче пурте шывра сахӑр ирӗлнӗ пек ирӗлеҫҫӗ. Сахал-и, нумай-и вӑхӑт иртӗ, эпир ҫырӑнатпӑр.

— Енчен ачи ашшӗн ют юратӑвне, илемсӗр теттене пекӗн, ашкӑрса ларан вӗлтӗрен ӑшне ывӑтсан? Вара мӗн тӑвӑн?

Илтмест ман сӑмаха, хӑлхасӑрланчӗ Венера.

— Арӑмӗ килсе намӑс кӑтартсан? Эпӗ вара килтен тухса таратӑп, — тет Рита.

Шывра хӑй сӑнне курнӑнах тӗрӗс килсе тухрӗ Рита калани.

Эрне е эрне ҫурӑ иртрӗ...

Хваттерте эпир виҫҫӗмӗрех. Рита, Венера тата эпӗ. Ваттисем кинона тухса кайрӗҫ. Кантӑксем уҫӑ. Хӗвел анаҫа

çывхарать. Пӳлёме сулхăн сывлăш хăпарать йывăçсен ешĕл çулçăллă турачĕсем çилпе вăркăшнă май. Венера чăпар лĕпĕшех, пӳлĕмрен пӳлĕме çӳрет вĕлкĕшсе. Ăçта пуçтарăнни паллă. Ăна такăш кĕтесре Атăл йӳппин патши кĕтет, имĕш. Ав, тĕкĕр умĕнче чарăнчĕ-ха, хăлхине кĕленче шăрçаллă алка тăхăнтарасшăн муталанать. Шăп çак вăхăтра алăкра уйăх пек çап-çаврака питлĕ хĕрарăм курăнчĕ. Шартах сикрĕм. Сив чир тытнăн чĕтретет. Ара, палланнăскер-çке, Алексей арăмĕ. Мĕн пулĕ-ши? Чĕнессе кĕтмерĕ хĕрарăм, малалла иртрĕ. Паллаштарчĕ, хăй Венерăча куçран вĕçертмест, упăшкине йĕрленĕ чух курнă-тăр ăна. Рита сăнĕ катанпир, Венерăн çав-çавах. Анчах та пире пурсăмăра та курăнман алăсем юпа çумне пăявпа çыхрĕç, йăшăлтатса илме вăй çук. Унччен те пулмарĕ, Венера пуçне каçăртрĕ те парăнмассăн сăмса тăрăх пăхса каларĕ:

— Мĕн тесшĕнччĕ эсир? Ман васкамалла.

Ăшăмра ятласа илтĕм ăна, тăрасчĕ тĕк, эх, тӳрккес чĕлхе.

Алексей арăмĕ туллашмарĕ, лăпкă сасăпа сăмахне пуçларĕ: «Ятлама, çӳçна-пуçна тытса лăскама килмен эпĕ. Хамăн та хĕр пур, тăххăра çитрĕ. Анчах та акă мĕн: шел сана, чиперкке. Илемлĕ туйăмусене ахалех вĕçтерен çилпе. Чуну пушанса юлсан нимле те эрешлеймĕн çĕнĕрен. Упăшкапа эпир вунă çул пурăнатпăр. Вăл пур кашни çуркуннех çапла пĕрер хĕр юраттарать хăйне. Темĕн çав, шанмастăп, эсĕ те юлашки пулмăн».

Венера хирĕçмест. Тăлт-тăлт! утса тухса кайрĕ килтен. Уттинче ни пăшăрханни, ни кӳренни сисĕнмерĕ.

Алексей арăмĕ типпе тăрса юлнă пулă пек çăтрĕ, çăтрĕ те сывлăш, те куççульне... Питлешмерĕ тек. «Сывă пулăр!» — тенине те илтмерĕмĕр. Мĕнле кĕрсе тăнă, çавăн пекех хăвăрт çухалчĕ куçран. Рита ăсатма та тухмарĕ ăна.

Çак пăтăрмахсем хыççăн ман нумайлăха çулçӳреве тухса кайма тиврĕ. Каялла кĕркунне тин таврăнтăм. Çырусем тем чухлĕ килсе выртнă. Пĕри, ав, Ритăран. Васкаса уçатăп конвертне. Вулатăп. Ак тамаша, çĕнĕ хыпар. Рита качча тухнă. Ман çав самантрах вĕçсе çитес килчĕ вĕсем патне. Кăлăхах. Мăшăрсем пурăнма урăх хулана куçса кайнă-мĕн. Шел. Чи лайăх тус çухалчĕ. Вулатăп малалла. Хăнана чĕнет. Мĕнех, çитĕп те. Йăмăкĕ пирки ним те шарламан.

Еçе варăннă кунсем сисĕнмесĕр иртрĕç. Миçе уйăх хыçа юлчĕ-ши? Шутлатăп. Çапла, сакăр уйăх! Тусăм пăрах-

са кайнӑ килте эпӗ ҫак тапхӑрта вуҫех пулман. Кӑмӑл тууртмарӗ. Венера пирки ним те пӗлместӗп. Паян вӑл, ав, ҫырӑнать. Кампа? Ҫав «Атӑл йӳппи патшипех-ши?» Мӗнле-ха саламлӑп вӗсене? Ячӗшӗн кӑна чӗлхе ҫавӑрӑнмасть. Хӑнӑхман.

Тупсӑмӗ тупӑнмарӗ. Шухӑша татрӗҫ. Пире пухӑнма чӗнеҫҫӗ.

* * *

Чаршав хыҫӗнчен тухрӑм эпӗ те ҫынсемпе пӗрле. Сӗтел хушшине вырнаҫса ларма ӗлкӗртӗмӗр кӑна, хаваслӑ, чуна ҫӗклентерекен музыка янраса кайрӗ. Пӗр вӑхӑтрах, ҫӳлте, уҫӑ алӑкра, мӑшӑрсем курӑнчӗҫ. Хӗрӗ тинӗс хумӗнче ишен акӑш: ҫиййӗнче ярт шурӑ кӗпе, пуҫ тӗпекки — лили чечекӗ. Ҫумӗнче — каччи. Вӑл хуп-хура костюмпа. Кӑкӑрӗ ҫеҫ пӗсехелле шуррӑн курӑнать, ӑна та пулин йӑлтӑркка пӗрчӗллӗ хӑмӑр галстук ҫурмаран уйӑрать. Алла-аллӑн тытӑннӑ та анаҫҫӗ мӑшӑрсем картлашка тӑрӑх. Вӗсен хыҫӗнче — темиҫе ҫын, путех, тус-тантӑшӗсем.

Пӗрре те ахаль чухнехи пек мар. Тем тесен те ку юмах тӗнчи. Ытла чаплӑ уяв. Савӑнатӑп вӗсен мӑшӑрлӑ хаваслӑ ҫӗнӗ пурӑнӑҫ пуҫланнӑшӑн.

Ҫывхараҫҫӗ... Сцена ҫине хӑпараҫҫӗ майӗпен. Тинкерсе пӑхатӑп: паллана сӑнсем, тен... Ҫук. Акӑ пикепе каччӑ сӗтел умӗнче. ЗАГСра ӗҫлекенсем хӑйсен ӗҫне тытӑнчӗҫ. Мӑшӑрсем вара пӗр-пӗрне ӗмӗр тӑрӑшшӗпе шанса, ӗненсе, тӳрӗ кӑмӑлпа пурӑнма тупа тунине пӗлтерсе чуптӑваҫҫӗ. Эпӗ те ҫамрӑксене хула ӗҫтӑвкомӗ ячӗпе саламлатӑп, ырӑ пурӑнӑҫ, телейлӗ кунҫул сунатӑп. Тав тӑваҫҫӗ хирӗҫ. Куҫпа ӑсататӑп савӑнса.

Мӑшӑрсем сӗтел умне пӗрин хыҫҫӑн тепри пырсах тӑчӗҫ. Пӑхса тӑранаймастӑп, пӗри тепринчен хитре вӗсем. Ҫав хатер ҫурта пӳллӗ хӗрсем, юман кӗрешлӗ каччӑсем ӑҫта ҫуралса ӳснӗ-ши?

Каллех теприсене кӗтсе илетпӗр. Васкамасӑр ярӑ-ярӑ пусаҫҫӗ картлашка хӑмисем ҫине. Мӑнаҫлӑн анаҫҫӗ.

Залра икӗ айккипе, ретӗн-ретӗн ларакан пукансем хушшинче, кино курнӑ чухнехилле, халӑх лӑк тулли. Кӑмӑллӑн шӑпӑртататать алӑ ҫупни музыка ҫемми май. Пурне те килӗшеҫҫӗ пулас кусем. Эпӗ те пӑхатӑп, ним те калаймӑн хурласа: хӗрӗ шеп, ятуллӑскер. Темшӗн пирӗн куҫсем тӗлме-тӗл тытӑнса тӑчӗҫ. Алтӑр куҫ хӑюллӑн чӑрлатать. «Ку эпӗ, айӑпсӑр хӗр. Ҫавӑнпа мӑнаҫлӑ...» — тет мана ҫав куҫ. Чим, камччӗ-ха, кам? Эй, мӗн эпӗ?.. Ара Венера-иҫ. Кӗтсе тӑнӑ ҫӗртех манӑҫа тухнӑ. Ҫумӗнчи каччи

çине пăхма хăяймастăп. Сасартăк лешĕ — Атăл йўппин патши? Тепĕр хут венчете тăрать-ши пўтсĕр... Çакнашкал вăхăтра вăрах тытăнса тăрайрăн-и? Йăлт! Шуçрĕ куçăм. Сухаллă мар. Қастарнă-ши? Тинкеретĕп палласа илесшĕн. Турра шĕкĕр! Пачах урăх каччă! Сăн пичĕ çавракa çăмарта. Йĕпхĕн хура кăтра çўç. «Урра!» — кăшкăратăп ăшра. Сассăм тухасран çăвара алăпа хуплатăп. «Тавтапуç сана, Венера. Пирĕн шанчăка таптаманшăн. Упăшку купăçли пултăр!»

Çырăнаççĕ. Иккĕш те илемлĕ, мурсем. Тупăнма пĕлнĕ-çке.

ЗАГС умĕнче ĕçĕ пĕтрĕ. Ёнтĕ ман черет. Хула Совечĕн ĕçтăвкомĕ ячĕпе саламлатăп хĕрўллĕн. Çук, кунпа çеç ăш выртмасть. Çĕнĕрен Венера аллине ярса тытатăп та ваттисемле калатăп: «Ĕмĕрў сурпан пек вăрăм, хушпу кĕмĕлĕ пек çутă пултăр! Пўрт тулли ача-пăча вылятăр!»

Йăл-йăл кулать Венера. Аллăма ачашшăн лăсканă май çапла хушса хучĕ:

— Паллашăр ман упăшкапа. Вова.

«Эпир пĕрне-пĕри тахçанах пĕлетпĕр», — тенине илтетĕп.

Чăр-р пăхатăп куçран. Тур çырлах! Лидия Петровнăн ывăлĕ пулах кайрĕ. Темиçе çул курманнипе тўрех тĕсмĕртмен эпĕ. Чĕлхе çухалчĕ, ним калаймастăп.

— Сире туя пырасса кĕтетпĕр! — терĕç Венерăпа Вова.

— Пыратăп! Пыратăп!

Иртеççĕ умран. Залран тухаççĕ. Ёнтĕ коридорта шампански пăкки шаплатни илтĕнет.

Чĕрем сиксе тухасла тапать. Савăнатăп. Юрласа яманни кăна. Чаплă туй пулать паян.

## ШУРĂ ТАКСИ

Варсемпе путăксем тăрăх юхса кайрĕ çурхи шыв. Типрĕ çĕр. Кĕççеленчĕ симĕс курăк. Çĕмĕрт çеçке çурчĕ. Пахчара шăпчăк юрă шăрантарать. Урамра, унта та кунта, кăтраланнă хурăн айĕнче, хĕрсем лараççĕ тĕрĕ тĕрлесе. Илемлĕ вăхăт. Çу пуçламăшĕ ку.

Çавăн пек кунсенче, пĕринче, укăлча хапхинчен шурă такси яла кĕчĕ. Ана тĕрĕçĕсем куçпа ăсатрĕç. Қам патне хăна килет-ши? Такси аякка каймарĕ. Икĕ чўречеллĕ кĕтесри çурт умĕнче чарăнчĕ. Авă, сас парать: пи-пи-пик! Куçран вĕçертмесĕр сăнакансем пурте курчĕç: машинăран

арҫын тухрӗ. Паллах, ку — шофер. Ҫийӗнче комбинезон. Вӑл чупсах тепӗр енне каҫрӗ те васкасах машина алӑкне уҫрӗ. Аллине тӑсать. Мӗн тыттараҫҫӗ ӑна? Эхе, ача иккен. Урайне ячӗ ӑна. Ачи пӗр виҫӗ ҫулхискер, унтан ытла мар. Ури сывӑрнӑ ӗнтӗ, тӗнкӗл-тӗнкӗл пускалать.

Машинӑран анакан татах пур мӗн-ха — хӗрарӑм. Лӑпӑска ҫӳҫлӗ, ҫинҫешке. Вӑл ҫӳхе кӑвак пальтопа. Ним те калаймӑн, ятуллӑскер. Пурӑнӑҫ вӑхӑчӗ пит-куҫне йӗр ҫапма ӗлкӗреймен.

Хӑнана килекен ҫынна тӳрех чухлан, ун савӑнӑҫне таҫтан туян. Анчах кусем темшӗн хаваcсӑр, хӑюсӑр Ҫӑмӑла ҫӗклентерме, иҫмасса, хуҫисем те кӗтсе илмерӗҫ. Мӗн пулать те мӗн килет, хӑвӑртрах авӑра сикес те ӗҫӗ те пӗтет, тенӗн, хӑрасарах калинкке шашулккине уҫса, шалалла кӗрсе кайрӗҫ.

Нумай-и, сахал-и хӑпарчӗ хӗвел тӳпенелле, калинккерен каялла пӗчченех тухрӗ шофер. Часах кайрӗ те вӑл.

Пурне те курса тӑракан хӗрсем шалт тӗлӗнчӗҫ. Сасартӑк вӗсен канӑҫ ҫухалчӗ. Ҫӗр ыйту капланчӗ пӗр харӑс: мӗнле майра-ши ачаллӑскер? Ҫам вӑл? Мӗн тума килчӗши Трофим Петровичсем патне? Уйрӑмах Лида ятлӑ хӗрӗн чӗри кӑлт! кӑлт! тапса илчӗ. Ку вӑл унӑн савнӑ каччин килӗ-ҫке. Коля... Тепӗр ҫур ҫултан вӑл ҫартан таврӑнмалла. Вара туй пулӗ.

Лида хӗрсен куҫӗнчен тем тилмӗрнӗн пӑхкалать. Пичӗ ун — хӑмач. Юлташӗсем сисеҫҫӗ, кураҫҫӗ тантӑшӗ ҫуннине.

Куҫ илмесӗр сӑнан килтен сурпан сырнӑ кинемей тухрӗ.

— Тариҫ инке, кӗрсе тух-ха, тӗрӗ кӑтартатпӑр! — чӗнет ушкӑнран, сарӑ, вӑрӑм ҫивӗтлӗ хӗр.

— Хӗрсем, тӗнче маркуш куртӑм! Эй, ҫырлах, Трапхин кум килӗнче мӗн пулса иртет! — кӑшкӑрса ячӗ кинемей хӗрсем патне ҫитнӗ-ҫитмен.

— Лар-ха, Тариҫ инке! — Вырӑн парать лешӗ сарӑ, вӑрӑм ҫивӗтлӗ хӗрех.

Карчӑк вырнаҫрӗ. Хӗрсем йӗри-тавра сырса илчӗҫ ӑна, пӗри те тепри тӗпчеме тытӑнчӗҫ:

— Пӗлмерӗн-и, Трапхин пиччесем патне мӗнле майра килнине?

— Кам тет вӑл?

— Тӑванӗ-и?

— Ҫынна шырать-и?

Тариç кинемей тутисене шăлкаласа илчĕ те хĕрсене хăй сăмахĕпе татах кăсăклантарчĕ.

— Мĕн-н, лараттăмăр чиперех Мархва кумапа. Кăштăрт кĕрсе тăчĕ пӳрте майра. Ачапа! «Коля ашшĕпе амăшĕ эсир пулатăр-и?»—тесе ыйтать. «Эпир»,—теççĕ кил хуçисем. Вара майра арча пеккине уçса тем кăларма тытăнчĕ. Ачине вара, тупата, турă чунĕ панă-тăр. Чупса пычĕ те Трапхин кум патне: «Асатте, ку сан хăвăн сухалуах-и?» — тет.

— Тытса пăх-ха, — хушать ватти.

Кумăн сухалĕ, хăвăрах пĕлетĕр, кăмакана çăкăр хывмалли кĕреçех. Мĕн тери сарлака! Çитменнине тата кăвакарнă. Хĕл мучи куртăм тесе шутларĕ-ши кăвакарчăн. Эх, вара пĕç çапсах ахăлтатрăмăр. Куççулĕ тухрĕ сапçим.

Майра кумана темле пы-ы-сăк кĕнекепе пĕчĕк хут татăкĕ тыттарчĕ. Кум хутне куçлăх тăхăнсах вуларĕ. Унтан çапла каларĕ:

— Сире Коля ывăлăм ăсатрĕ, эппин? Питĕ аван. Хывăнăр, килти пек пулăр. Тараватпах йышăнтăмăр сире, Нинăпа Олёшка.

Кумине çийĕнчех ĕç хушрĕ:

— Карчăкăм, малти пӳлĕме вырнаçтар хăнасене.

Арçынĕ шухвĕрĕ пулнă-мĕн.

— Куратăп, пурте йĕркеллех, — тет. — Кайма ирĕк паратăр пулĕ?

Чей ĕçтересшĕнччĕ хăйне. Вăл хирĕçлет. Таçта васкать имĕш.

Кума çамрăкланчĕ, юс пек йăпăртатать.

Пысăк кĕнекинче, патюшки!, сăнӳкерчĕксем лăках. Мана та кăтартрĕç те, куçлăхсăр алчăр-палчăр тĕтреленейрет. Халĕ çав сăн çаптарнисене пăхаççĕ-ха. Ах, савăнчĕç. Тухса шурăм. Ара, эпĕ ларнине асăрхамаççĕ, манчĕç мана.

— Тариç инке, майри камне пĕлеймерĕн-и? — вăлтать хĕрсенчен пĕри.

— Ма пĕлмен? Ман шутпа вăл кам...

— Кам, Тариç инке?

— Кам, кала часрах, мĕн сăмахна çăтса тăран?

— Ман шутпа ку майра, — тет Тариç карчăк хĕрсем кăсăкланнипе хăпартланса, — Кулян арăмĕ. Ах, çырлах, шан хальхи çамрăксене. Авланнă, ача çуралнă, килтисем ним пĕлмеççĕ. Эх, чĕн писихи кирлĕччĕ, тăсса çапма...

Ял хĕрĕсен тĕлĕнипе чĕлхисем чăлханчĕç, нихăшĕ те калама сăмах тупаймасть. Куççем çеç пулă хуппи пек

йалтăртатаççĕ, вылянаççĕ. Пĕри те тепри Лида çине вăрттăн йăлт! та йăлт! пăхса илет. Вĕсене мĕн, ку усал хыпар пĕçертмест, вĕтелемест питрен. Тĕл пуланпа чĕлхе вĕçне якат та якат. Лида чĕрине вара вут хыпса илчĕ. Туять, унăн куç хăрпăкĕнчен çакланнă çутă шăрçа халь-халь татăлса ӳкет. Вăтаннине пытарма пикенсе, тĕррине саппун аркипе пĕтĕрсе пилĕкне хĕстерчĕ те, пуçне чиксе, кӳлĕ хĕрринелле вăркăнчĕ.

— Тăхта, ăçта каян, Лида! — чаранçи пулчĕç хĕрсем ытахальтен.

Шухăш... Шухăш... Шухăш амаланать, хĕмленет пуçра. Çунтарать, мур шăтăкне вĕçтерет вăл сынна.

* * *

АШШĔ. Кĕçĕнни — ачашши теççĕ халăхра. Кам хăй ачи-пăчине юратса, лăпкаса ӳстермест? Ашшĕ-амăшĕ юратăвĕсĕр ачаран çын пулаймастех. Ӳстертĕм. Çын турăм. Чăн ăмăрткайăк вĕт вăл ман. Çавăнпа Совет Çарне юрăхлă пулнă. Пур вĕт ялта нăйăлти хур чĕппи евĕр çамрăксем. Килтен тухма хăват çук вĕсен. Ман Куля вара — пысăк чунлă этем. Пурнăçра йăнăшмастех вăл, шанатăп. Мĕнех вара, ачаллă пултăр. Пирĕн пурлăх çук-и? Ача ӳстерме карчăкпа иксĕмĕрĕн кăмăлсем чухăн-и? Ачаллă пултăр. Куншăн никам та хурлаймĕ. Юрату çеç çӳллĕ ту евĕр çирĕп пултăр. Эпир карчăкпа пĕр-пĕрне юратнă пек юратчăр кăна, вара пурте хăй вырăнне ларĕ. Чее çырать çырăвне шеремет: «Атте-анне, усрăр Нинăпа Олĕшкăна хăвăр патăрта. Атте, эсĕ ăна ĕç тупса пар. Ӳркенсе тăмĕ вăл. Аннем, эпĕ пĕлетĕп санăн ачаш чунна. Олĕшкăна юратса пăхасса шанатăп. Пĕчĕк ача вăл сана йăпанмалăх кăна. Часах пурин çинчен те тĕпĕ-йĕрĕпе çырса ярăп.

Сире юратса хисеплекен ывăлăр Коля».

Их, чее, питĕ чее эсĕ. ывăлăм. Шăп хам хăраххиех. Хăйĕн шухăш-кăмăлне ĕнентерме сăнӳкерчĕксен альбомне ярса панă. Хут çырса янипе те ĕненнĕ пулăттăм. Çапах та сахал пĕлетĕн эсĕ аçу кăмăлне. Эпир те хăй вăхăтĕнче çамрăк пулнă, сана ăнланмăп-и, ывăлăм...

* * *

АМĂШĔ. Эх, Куля, Куля. Аçунах хывнă эсĕ. Çыннăн хуйхи-суйхи умĕн куç хупса иртместĕн. Ашшĕ ертсе килнĕ çынсене хам килте пĕрре çех усраман эпĕ. Пĕлетĕп са-

на, чуну ытла ҫепӗҫ, сӑпайлӑ. Ҫиле хӑв килсе кайнӑ пулсан, савӑнтараттӑн ватӑ аннӳне. Унтан пахи мӗн пултӑр маншӑн? Ҫурманни хӑҫан! Аякран хуть куҫ хӳрипе пӑхса илӗттӗм. Ӗмӗтӗм талмӗ-ха, кӗтсе илӗп, самани кӑна лайӑх тӑтӑрччӗ. «Аннем, эпӗ пӗлетӗп санӑн ачаш чунна. Олӗшкӑна юратса пӑхасса шанатӑп. Пӗчӗк ача вӑл сана йӑпанмалӑх кӑна...» — тесе ҫырать. Куля, эсӗ питӗ лайӑх чухлан: санпа ҫыхӑннӑ тӗвӗ маншӑн хӑвӑн пекех хаклӑ. Эсӗ ыйтан пулсан, ӑҫтан хирӗҫлӗп? Пурӑнччӑр, Нина... ячӗ лайӑх. Ҫӑмӑлӗ те ӑшӑ пек. Ачи ытла та чӗвӗлти. Ача-пӑча пӗтӗм киле илем кӳрет. Пурӑнччӑр, пурӑнччӑр. Пӳртҫурт — керменех, такама та ырӑн ҫитет. Ӗҫми-ҫими сӗтел тулли. Улми-ҫырли пахчипех. Ҫын ҫисе пӗтерес ҫук.

Саншӑн, юратнӑ ывӑлӑм, пӗр саншӑн тем тӳсме те хатӗр: чӑрмавне те, савӑнӑҫне те...

* * *

ЛИДА. Коля, Коля, ӑш ҫунтармӑш эсӗ ман! Илтетӗн-и, сысна ҫури? Виҫӗмкун кӑна эпӗ тӗнчере чи телейличчӗ. Виҫӗмкун кӑна санран ҫыру илтӗм. «Юрататӑп», — тесе ҫыртӑн. Мӗншӗн суйса пурӑнтӑн-ши? Кала, мӗншӗн? Туять-ши сан чӗрӳ, эпӗ ҫак ҫӗр ҫинче чи телейсӗррине? Вӑрларӑн эсӗ манӑн ҫутӑ ӗмӗте, вӑрларӑн! Вӑрӑ, вӑрӑ эсӗ. Акӑ кам.

Мӗнле питпе ҫӳрӗп хӗрсем хушшинче? Кала! Пурте пӳрнепе тӗллесе кӑтартӗҫ: «Ав пӑхӑр, савнӑ каччи пӑрахнӑ хӗр пырать...»

Тӗлӗнтермӗш, мӗнпе ҫавӑрма пултарчӗ вӑл ачаллӑ хӗрарӑм сан чӗрӳне? Пӗлместӗп, тен, ачи те санӑнах-тӑр. Апла пулсан, сан кӑкӑрунта икӗ чӗре тапрӗ-ши? Пӗри — маншӑн, тепри — уншӑн.

Эх, Коля, Коля, мӗнле манма пултарӑн-ха мӗн пӗчӗкрен пынӑ юратӑва? Асту-ха, ача чух пӗрле выляннӑ самантсене. Пӗр-пӗрне эпек! тӑваттӑмӑр та чупаттӑмӑр. Тӗк пек вӗҫеттӗмӗр, ура ҫӗре тивместчӗ. Тытаймастӑн, хуса ҫитейместӗн мана. Тен, юри хуса ҫитмен эсӗ? Ун чух эпир юрату мӗнне пӗлмен-ха. Выляннӑ, айвансем, чӗкеҫ чӗпписем. Ачасем тӑрӑхлатчӗҫ пире. Астӑватӑн-и, хӳме хӑмисем ҫине ҫырнине вулаттӑмӑр: «Лида + Коля = юрату». Вара пӗр-пӗрне куҫран пӑхма вӑтанаттӑмӑр. Астӑватӑн-и мана малтанхи хут юрататӑп тесе каланине? Эпӗ ҫав самантa вилсен те манас ҫук.

Шкултан вĕренсе тухнă ятпа ирттернĕ вечер... Ташланипе ура çинче аран тăратпăр. Пысăк зала шурăмпуç çути çапсан тин салантăмăр. Эпир санпа ял вĕçĕнчи пĕве хĕрне антăмăр. Эпĕ те, эсĕ те шыв çине тăпра муклашки перкелеттĕмĕр. Ункă, ункă хумсем сарăлса çыран хĕрне çитрĕç. Сисмерĕм те çавăн чух эсĕ мана ыталаса илтĕн те чăп! чуптурăн. Вăтаннипе çĕр тĕпне анса каяттăм. «Лида, эпĕ сана юрататăп!»— терĕн. Ĕнентĕм. Ĕнентĕм! Эпĕ те сана тахçанах юратнă-çке.

Астăватăн-и тата хăв çара кайнă куна? «Кĕт мана, Лида»,—терĕн. «Кĕтетĕп»,—сăмах патăм эпĕ.

Пурăнтăм. Çулсем иртрĕç. Никам çине куç çĕкленмерĕ. Эсĕ таврăниччен шутлă кунсем юлчĕç те, акă сана — савни! Куç ытамне сасартăк — ачаллă майра! Турăçăм. Ăçта хурас телейсĕр пуçăма? Тек никама та юратма вăй çитерес çук. Пĕчченех ĕмĕрлес-и ĕнтĕ ĕмĕре? Пĕтертĕн мана, шăлса ывăтрăн хăвăн çумăнтан. Мĕншĕн, мĕншĕн?

Санăн Нинуна чунтан кураймастăп. Илсе кай ăна хăвăртрах ялтан. Сирĕншĕн пурăнăç пур çĕрте те пĕрех. Эпĕ хамăр ялтан ниçта та каймастăп. Ку пирĕн юратнă ял. Эпĕ ял хĕрĕ. Ялта пурăнма çуралнă. Ытараймастăп ялтăн уй-хире, ешĕл вăрман тăрăхне, пахчи-пахчи сад пахчине, çавра кӳлĕсемпе пĕвесене, унта ишен касите пек пуллисене, тусан măкăрлантарса яла кĕрекен кĕтӳсене... Çаксемсĕр эпĕ тĕнчере типсе ларăп. Куçăм хăнăхнă ял илемĕсĕр тин текех пурăнаймăп.

* * *

НИНА. Тĕлĕнмелле çынпа тĕл пултăм. Акă ăçта вăл çĕр çинчи çăтмах. Ахальтен каламаççĕ-мĕн: тĕнче ырă çынсемсĕр мар, тесе. Тавтапуç сана, Коля. Кунçулу телейлĕ пултăр. Аçу-аннӳ те ăшă кăмăллă çынсем. Ачана юратрĕç.

Аякри яла килтĕм. Туп ĕнтĕ мана шыраса.

* * *

Нина хăйне яланах тăлăхсен ретне тăратать. Ашшĕне, чăнах та курман. Вăл вăрçă пĕтнĕ кун, Берлинта, рейхстага илнĕ чух вилнĕ. Нина ун чухне мĕн пурĕ те пилĕк уйăхра пулнă, сăпкара выртнă. Малтанах амăшĕ ĕненмен мăшăрĕ киле таврăнмассине. Кĕтнĕ. Çул хыççăн çул иртет. Хĕрача ӳснĕ те ӳснĕ. Ĕнтĕ вăл тăвата çулта. Амăшин ача пур, анчах чунĕ пурпĕрех çамрăк. Акă кӳршĕри урçа ăшшăн пăхкалать. Унăн виçĕ пĕчĕк ывăл. Пĕрлешсен —

ик-виç тĕрлĕ ача-пăча пулать. Ҫайса вырнаçтарнă вара хĕрарăм хăйĕн пĕчĕк Нинуçкине ача çуртне.

Пĕтĕме паман хĕрачана, ырă-сывах аталаннă. Тăн кĕрсен амăшне йышăнман хĕрача, хăй телейне мала хунăшăн сивĕннĕ. Нина çаплах манмасть-ха амăшĕпе юлашки хут тĕл пулнине. Ун чух вăл интернат-шкулта улттăмĕш класра вĕреннĕ.

— Нина, анну килнĕ, тух! — пĕлтернĕ воспитательница рояль каласа ларакан Нинăна.

Миçе çул иртрĕ те, амăшĕ пуçласа ура ярса пусать хĕрачи патне. Ҫама тарăхтармĕ ку? Пĕчĕк этемĕн те чун пур-çке. Ух! тăвăл çĕкленнĕччĕ Нинăн. Тĕнчере анне пур çинчех тăлăх ӳс-ха, паллах, кăмăл хуçăлать.

Тухрĕ Нина.

— Кучченеç тавраш илсе килеймерĕм, акă семăчкă, — тет хĕрарăм сăхман кĕсйинчен пĕр ывăç хĕвелçаврăнăш кăларса.

Çук, килĕшмен хĕрачи шĕкĕлчеме, вăл амăш арки çине сапать те хĕвелçаврăнăшне каялла чупса тухать. Ҫаçару çуккине ăнланнă хĕрарăм. Тăрса утнă вара хăй çулĕпе ăçтан килнĕ çавăнталла. Нина эрнипе йăшса пурăннă ун чух. Воспитательсем темĕн чул йăпатсан та, никампа та калаçасшăн пулман вăл. Пĕчĕккĕ, çапах та хуйăха пĕччен тӳссе ирттернĕ, ăшри тăванлăх хĕлхемне кăларса ывăтнă.

Интернат-шкулта пурнăç хăй майĕпе юхнă. Пĕтĕм ĕçхĕлĕ те кунта — вĕренесси. Нина музыкăна юратнă. Ăста калама вĕренсе çитнĕ вăл рояльпе. Радиопа çĕнĕ юрă юрланине пĕрре çеç илтет Нина, шкул концертĕнче юрласа та парать.

Учительсем ырлаччĕç. Хăшпĕр чух итлеменшĕн, юлхавланнăшăн аслă туссем ятланине тӳскелеме те тивнех. Ҫу пĕрре те усала хăварни мар, чăн-чăн çын тума тăрăшни.

Ҫирек мĕнле пулсан та, шкул çулĕсем сисĕнмесĕр иртеççĕ. Интернат-шкултан вĕренсе тухнă Нина.

Завода ĕçлеме кĕнĕ кун чутах ĕмĕр хурлăха хăваракан инкек сиксе тухмарĕ. Тен, савăнăç? Паян кунччен иккĕленет кун пирки Нина. Ырăпа усал, юратупа курайманлăх пекех, юнашар, теççĕ.

Общежитие вырнаçнă хыççăн Атăл хĕррине анчĕ Нина. Пĕчченех. Шурă-шурă пăрахутсем шыв çийĕн акăш евĕр чӳхенеççĕ. Хĕр çыран çуммипе утрĕ шыв юххине хирĕç. Хĕвел анман-ха. Темшĕн хĕвел паян шĕл-кăвар пек хĕрлĕ, катка кăшăлне вырнаçайми сарăлнă.

Мĕн шухăшлаççĕ-ши каччăсем пĕччен хĕр утнине курсан? Виççĕн хуса çитрĕç вĕсем Нинăна.

— Холле! Халиччен курман хĕр! — вĕçкĕнленет хĕрринче утаканни...

— Таçтан килнĕскер, — пакăлтатса илчĕ юлташĕ, тутине пăркаласа.

— Тыткай! Хĕр аптрамасть! — тет виççĕмĕшĕ.

Нина куçпа виçсе пăхрĕ йĕкĕтсене. Килĕшмерĕç. Кăмăлламан çын вăл яланах хитре мар. Тăсланки хурчка сăмсаллă. Сарлака туталлин шăлĕсем шултра. Виççĕмĕшĕн — пичĕ-куçĕ пырать те, анчах армак-чармак утать.

Хăрушшине нимех те асăрхамарĕ хĕр. Интернатшкулта вĕреннĕ чух ялан ушкăнпа çӳренĕ. Пĕр-пĕрне никам кӳрентерме хăяйман. Çавăнпа та вăл хăюллăн татса хучĕ:

— Эпĕ сирĕн паллана хĕрĕр мар. Хăвăрах куратăр. Халĕ ĕнтĕ çаврăнăр та утăр каялла. Ман хыççăн ан пырăр.

— Хо-холле! — кăшкăрать хурчăка сăмсалли, çын ăнланман ухмахла сăмахне.

— Атя пирĕнпе вăрмана хура çырла пуçтарма. Хура çырла пыл пекех... — тата тем пакăлтатса кайрĕ шултра шăлли.

Армак-чармак утаканни аллине Нина хулпуççийĕ çине лаш! хучĕ.

— Халех илнĕ пул хăвăн çăмлă аллуна! — хыттăн каларĕ Нина.

Виççĕшĕ те ахăлтатса кулса ячĕç. Вара çăмлă алăлли шăлне кăчăртаттарчĕ пулин те килĕшрĕ.

Нина ырă мара сисрĕ. Сăрталла сукмак выртать. Ăна асăрхарĕ. Йĕкĕтсене малалла ирттерет те хăй çав сукмак тăрăх вĕлт çӳлелле ыткăнать.

— Хо-холле, тарать! Тытăр! — ӳлет хурчăка сăмсалли.

Вăрăм ураллăскерсенчен тарса хăтăлаймăн. Самант хуса çитрĕç. Пĕрле хăпараççĕ. Пит-куçĕсемпе темле паллăсем параççĕ пĕр-пĕрне. Нина курмасть, вăл малта чавтарса пырать.

Çӳлте, ту çумĕпе — карта. Ниçта пĕр çын курăнмасть. Хĕвел анса ларчĕ. Нинăн çанçурăмĕ сăр-р сăрлатрĕ. Ахальтен мар-мĕн, виçĕ мăнттай хĕр аллине тытса каялла пăрса лартрĕç те, хӳме хăмине çапса кăларнă хушăкран шалалла тĕксе кĕртрĕç ăна. Нина кăшкăрса ячĕ: «Ху-

рах! Хурах!» Хурчăка сăмсалли ун çăварне тутăрпа пăкăласшăн. Шăлне çыртрĕ Нина.

Урараи ӳкерме тапаçланнă самантра, Нина хăлхине шăхăрни пырса кĕчĕ. Вара кăшкăрни:

— Эй, эй! Мĕн тăватăр эсир, эсрел çурисем?! Чарăннă пултăр! Халăх! Халăх! Кунталла килĕр! Кунта вăрă-хурахсем хĕре тапăннă!

Самант алăсем пушаннине туйрĕ Нина. Хăраса ӳкрĕç пулас йĕкĕтсем. Пăрахса хăварчĕç хăйсен тупăшне. Ав, тĕр-пар саланчĕç виççĕшĕ виçĕ еннелле. Хура юнлăскерсем! Мĕнле çĕклет-ши çĕр çавнашкал йăх-яхсене?

Хĕр чысне пăсма хăвăрт. Малалла мĕнле пурăнмалла унăн? Вăл пулас арăм, пулас амăш-çке. Шухăшлама ăстăн çитерейметçĕ çав кун пирки хăшпĕрисем.

Çамрăк çын чупса çитрĕ Нина патне. Пĕвĕпе хăй ытлашши çӳллех те мар. Çанçурăмĕ вара сарлака.

Нина тем калама хăтланчĕ, анчах чĕлхе-çăварĕ çаврăнмасть. Пăлханнипе çухалса кайрĕ, макăрса ячĕ.

— Ан хурланăр, кирлĕ мар куççуль тăкма, — йăпатма пикенчĕ çамрăк. — Каяр кунтан. Вĕсен çулĕ кĕске, пурпĕрех милицие лекеççĕ.

Хӳме шăтăкĕнченех илсе тухрĕ вăл Нинăна. Ерипен утгарчĕ. Тин çех пулса иртнĕ пăтăрмах пирки тĕпчемест. Мĕншĕн тискер саманта тепĕр хут аса илтермелле хĕре? Сехĕрленнĕ чĕри пусăрăнтăр. Майĕпен Атăл хĕрринчи чечек аллейисем патне çитрĕç. Кунта халăх йышлă çӳрет. Сак çине ларчĕç иккĕшĕ те. Чылай вăхăт иртсен тин сăмах тупăнчĕ вĕсен калаçма. Паллашрĕç пĕр-пĕринпе. Нинăна хăрушла инкекрен çăлса хăварнă паттăрăн ячĕ Виталий иккен. Вăл вăтам шкул пĕтернĕ. Часах çара каймалла ун. Тавăрăнсан института кĕме ĕмĕтленет.

Çак каç Виталий хĕре общежитине çитерсе хăварчĕ. Нина алăка шăппăн уçрĕ. Хĕрсенчен именчĕ вăл. Каланă пек, çĕрĕ тарăна кайман та-ха, çапах та сас туса çӳрени килĕшмест.

Пӳлĕмре çап-çутă. Сĕтел тавра пиллĕкĕн лараççĕ. Вĕсем пӳлĕме кĕрсе тăнă çынна асăрхамарĕç те. Сарă çивĕтлĕ хĕр сасăпа кĕнеке вулать. Çыравçă тĕлĕнмелле пурăнăç çинчен каласа парать-тĕр.

Пуçласа курнă хĕрсене Нина сывлăх сунчĕ. Çивĕтлĕ хĕр тăп чарăнчĕ вулама. Ыттисем те пуçĕсене çĕклесе чăр-чăр пăхрĕç.

— Эсĕ-и вăл çĕнĕрен килнĕ хĕр?

— Ирт, ирт. Хăюллăрах пул! — терĕç саламланă май.

Часах ятне ыйтса пĕлчĕç, хăйсемпе те паллаштарчĕç. Сăсăпа вулаканнин ячĕ Шура.

— Қаçарăр, чăрмантарнăшăн, — тет Нина.

— Шура чаплă кĕнеке тупса килнĕ—«Хура çăкăр»,— сăмах хушать сарă çивĕтлĕ хĕрпе юнашар лараканни. Авторĕ хăй парнеленĕ.

Хĕлле вуланăччĕ Нина ку кĕнекене. Лайăх кĕнеке. Селиме хĕрпе Тухтар йĕкĕт халĕ те асра. Тепĕр чух пулсан Нина кĕнекери çав тантăшсем пирки нумай калаçĕччĕ, анчах кĕçĕр ун чĕлхе çаврăнмасть.

Вырăн çине выртрĕ Нина. Қанлĕх çук. Шухăш явăнать пĕвери çурхи шыв пек. Паттăр каччă пуçран тухмасть. Тĕрĕсех, шиксĕр çамрăк вăл. Пĕччен виçĕ çынна хирĕç тух-ха! Йышлă-и Виталий пек хăюллисем?

Куçĕ хупăнчĕ хĕрĕн. Умра — Витя. Вăл ӳсет, ӳсет, пĕлĕте перĕнет пуçĕпе. Акă, яш каччă улăп пулса тăрать, пĕрре урине çĕклесе çичĕ çухрăм ярса пусаканни. Тастине витĕр курать, ашкăнчăк этем пусмăрĕнчен хăтарать мĕскĕн хĕрсене... Чиперккесем пуç таяççĕ ăна тав туса. Нина савăнать, мăнаçланать, улăпĕ ăна çех ăшă куллине парнелет-çке.

Тепĕр кунне Нина ĕçрен таврăнсан чӳрече умне тухса тăчĕ, паттăра кĕтме. Вăл сăмах паман. Чĕре сиснĕ, чĕннĕ чух, сăмах мĕн тĕшне тăрать? Шанни сая каймарĕ. Виталий, ăна тамăкран çăлнă чухнехи евĕрех, таçтан умне яш! тухса тăчĕ. Қинона чĕнет. Ырă каччăсем чĕннĕ чух турткаланса тăни ытлашши. Кун пек çамрăксен çумĕнче çӳрени илемлĕ, шанчăклă.

Нинăна хăй туйăмĕ кайран та улталаман. Çав тери курас килтĕр çеç, пăх чӳречерен: вăл — ав, тирек айĕнче тăрать.

Уйрăлу кунĕ çитрĕ. Виталие салтака илчĕç.

Ку тарана çитсе те Нинăна никам та юрататăп тесе каламан. Виталирен те çав асамлă сăмаха илтеймерĕ. Мĕнех вара, ан каланă пултăр; чĕре кăкăрта пурпĕр кăлт! кăлт! тапать! Туять вăл, Виталий аякра пулин те унăн çумĕнчех, çывăхрах. Кăпăшка çӳç, шурă шăл, йăлйăл кулă — пурте умра. Ку çеç-и? Тата сывлани те сисĕнет... Ав, кă... çук, ...ай, куçĕ мĕн тĕслĕ-ха ун? Мĕн тĕслĕ?

Çук, Нина пĕлмест Виталин куçĕ мĕн тĕслине. Вăл пĕрре те ăна куçĕнчен пăхман вăтаннипе. Пулин, уншăн салтакран таврăнсан пăхĕ кунĕн-çĕрĕн. Халлĕхе çыру килмен-ха. Қайни те нумай пулмасть. Çыру килес пирки хĕр йĕп çăрти чухлĕ те иккĕленмест.

Ку хутӗнче те туйӑм улталаман. Пирвайхи эрешлӗ юр пӗрчисем ҫӗр ҫине вӗлтӗртетсе аннӑ чух, Нинӑна пӳлӗмре пӗрле пурӑнакан хӗрсем алӑ ҫупса ташлаттарчӗҫ. Чӑвашсен йӑли ҫавнашкал, ҫыру килсен хуҫине ташламасӑр памаҫҫӗ. Ҫыру савӑнӑҫлӑ япала-ҫке.

Ытлашши нимех те ҫырман Виталий малтанхи ҫырӑвӗнче. Шыракан тупатех хӑй валли мӗн те пулин. Ӑна пӗр сӑмах калама ҫук хӗпӗртеттерчӗ. «...Нина, тунсӑхлатӑп эпӗ сансӑр»,—ҫырнӑ каччӑ. Ҫывӑрма выртсан та ҫак йӗркесем аса килнӗ, ыйхӑран вӑрансан та ҫак ачаш сӑмаха Виталий хӑй пӑшӑлтатнӑн туйнӑ.

Кашни кунах хӗрсем капӑр тумланса ушкӑнпа тухатуха кайнӑ. Нина яланах юлать. Юлашки вӑхӑтра ӑна хӗрсем чӗнме те пӑрахрӗҫ, ҫураҫнӑ хӗр вырӑннех хураҫҫӗ. Унӑн савни ҫарта, урӑх шырама кирлӗ мар, шӳтленӗ тантӑшӗсем. Нина кӳренмен. Йӗлтӗрпе ярӑнассинчен кӑна нихӑҫан та пӑрӑнмасть. Атӑл леш енче юр кӑпӑшка, йӗлтӗр айӗнче чӑкӑртатни ҫеҫ илтӗнсе юлать. Чӗпӗттӗрех кӑрлач сивви пите. Пурпӗрех чуна кӗсъери виҫӗ кӗтеслӗ ҫыру ӑшӑтать. Ҫанма тӑрсан ҫыран хӗрринче речӗпех ӳсекен хӑвасем илӗртеҫҫӗ. Хӗлле вӗсем пушшех илемлӗ иккен. Юр ҫинче ӳсекен чӑн-чӑн капӑр чечек. Вуллине тахӑшӗ ҫинккӑланӑ пур шӗвекӗпе сӑрланӑ. Ҫавӑнпа та шуррӑн-чакӑррӑн курӑнать. Хунавӗсем йышлӑ, хура кӗрен тӗслӗ, ҫинҫе ҫурта пек тӳп-тӳрӗ ҫӳлелле кармашнӑ. Туратсем шурӑ хурткуҫҫи шӑрҫи ҫакнӑ. Ҫапла, кӑчкӑсӑр хунав ҫукпа пӗрех.

Атӑл леш енчен ярӑнса килсен, Нина ҫыру ҫырма ларать. Ҫырӑвне ҫав тери ҫепӗҫ пуҫлас килет ун. «Сывӑ-и, савниҫӗм... Сана вилес пек юрататӑп...»—тесе ҫырӗччӗ. Анчах хӗре юрать-и вара ытлашши хӑюлланма? Апла ят каять. Тата чи малтан: «Юрататӑп»,—тесе хӗр каласан, каччӑ сивӗнет имӗш. Хӗрупраҫшӑн кунтан ытла мӑшкӑл мӗн пултӑр? Нина хӑй ҫав чӗрене сар ҫу хывакан сӑмаха Виталирен ӗмӗр кӗтме хатӗр. Халлӗхе, ытла кичем пуласран, унтан-кунтан пуҫтарнӑ сӑвӑсемпе пуҫлать вара ҫырӑвне ҫырма, чунсӑр сӑмахсемпе:

Сарӑ чечек сарӑ пултӑр  
Сар кайӑка савӑнма.  
Ырӑ вӑхӑт сана пултӑр  
Ман ҫырӑва вулама...

Ҫыру хӗртен вӗҫсе кайнӑ, ҫыру каччӑран вӗҫсе килнӗ. Нина ҫунат сарса пурӑнчӗ хӗл каҫипех. Заводра та ӗҫ ӑнӑҫлӑ. Вӗренекенсен шутӗнчен куҫарчӗҫ. Ӗҫе хӑнӑхта-

раканĕ ăста çын лекрĕ ăна. Халĕ ĕнтĕ вăл чăн-чăн рабочи. Пурнăçра ку çеç сахал-мĕн. Унăн сасартăк çунат усăнма, усăнма тытăнать. Мĕншĕн? Çыру Виталирен çук та çук. Акă ăçта сăлтав. Нина темиçе хут та сĕтел хушшине ларчĕ, ыйтасшăн вăл: «Мĕншĕн çыру çырма пăрахрăн? Е, урăххине юратрăн?..» Анчах кирек хăçан та ăна хĕр мăнаçлăхĕ, танлăхĕ хутпа чернила илме чарса тăрать.

Ĕнтĕ тулта — çуркунне. Юр ирĕлетваскаса. Унпа пĕрле Нина ĕмĕчĕ те ирĕлет, çӳхелет, тĕпренет, çурхи çилпе типсе вĕçсе саланать.

Пысăк хуйăха пĕччен тӳссе ирттерме ытла хĕн. Кампа та пулин калаçинччĕ. Анчах хăвăн асаплă пурнăçна кăли-кали çынна калинкке уçса кĕртеймĕн. Кам ăнланĕши? Тен, Шура? Ырă кăмăллă вăл. Темĕн чул пĕрле çӳресе те вĕчĕх, кĕвĕç, чунлă пулнине сисмен. Вара пӳлĕме иккĕш çеç юлсан, вăтанса та хĕрелсе, Нина чун ыратăвне пĕтĕмпех кăларса хучĕ. Шура йĕркеллĕ тăнларĕ. Кулмарĕ те, ятламарĕ те. Юлашкинчен йăмăкне ăс панăн çапла сăмах турĕ:

— Шурсах лартăн. Ма кулянас утериех. Тĕнчере каччă пĕтмен. Пурнăçу малалла, тупăнĕ-ха чăн-чăн юратаканни те.

Çунсан-çунсан, чĕре пуш кăшкар евĕр пушанать. Вара вăхăт иртнĕçемĕн каллех çип çăмхаланать, кăшкар тулатех. Ним кĕтмен çĕртен чăнах та Нинăна пĕр каччă юратрĕ. Ячĕ унăн Гена.

ГЕНА. Ман çывăх тусăм Тимуш çил вăркăштарса чупса кĕчĕ.

— Гена, ил хăвăртрах купăсна, атя клуба. Унта паян ял çамрăкĕсем концерт параççĕ, — терĕ вăл. — Тепĕр чи кирли — хыпар пур. Шура эрне каяллах Шупашкартан киле канма таврăннă иккен. Чи кирли çакă мар-ха. Чи кирли акă мĕн: Шура хăйпе пĕрле ай-вай хитре хĕр илсе килнĕ. Пĕр пичĕ хĕвел, тепĕр пичĕ уйăх. Шăп та шай сан валли.

Тимушпа Шура темиçе çул савниллĕ. Эпĕ çаплах юратнă хĕр тупаймастăп. Шыраман мар, шыранă, паллашнă та. Килне çити ăсатса ярап, тек ун патне чун туртмасть. Çав тери тăрăшатăп юратма, кăлăхах. Çутçанталăк мана юрату паман. Калаççĕ-çке: юратма пĕлесси çынра хăйне май пултарулăх. Кулянатăп, анчах ним те тăваймастăп. Тимуш юлташăм мана çапла каласа лăплантарать: «Сан пек çынсене вырăссем «однолюб» теççĕ.

Ну, эппин, эсĕ пĕрне çеç юратма пултаран. Халлĕхе юратмалли хĕре тĕл пулман». Тĕл пулман... Ĕмĕрне те тĕл пулаймасан? Вара мĕн тумалла? Чăннипех пăшăрхантарать ку мана. Кулянатăп. Юрать-ха Тимуш ырă çын, ывăнма пĕлмесĕр хĕр шырать ман валли.

— Эх! Мăран та вара эсĕ, Гена. Васка, — тĕпĕртеттерет мана Тимуш, — куç хывĕ ак ăна кам та пулин. Кĕнеке вуласах тăрса юлан типнĕ лачакари шапа пек. Квак! Квак! Квак! квакласа вара.

— Куç хывакана янах шăмминчен тыттарса ярăпăр! — терĕм, алăри кĕнекене сĕтел çине хурса.

— Янах... Янах.., — витлет Тимуш. Вăл хăраса ӳкрĕ. — Тӳпелешсе çӳресе ята ямастпăр.

Юлташăн пăшăрханăвĕ мана та куçрĕ. Чышкăсем чăмăртанчĕ. Хăрататăп пулас. Иçмасса хам хĕрне те курман, ăна куç хывакан пур-и, çук-и, паллă мар. Эпĕ тĕкĕр çине пăхатăп. Сире — кăвак костюм. Темшĕн килĕшмест пек. Чи кăмăллани-çке. Хывса хурине тăхăнтăм. Ятусăр каллех. Татах хăйăр тĕслине илтĕм. Тимуш ăна карт! туртса илчĕ.

— Эс мĕн?! Витринăна тăма хатĕрленетне, — хăмсарчĕ вăл, — васкамалла чух, тĕкĕр умĕнче авкаланатăн. Хура костюмпах юл. Концерт паян.

— Юрĕ-çке, эсĕ калана пек пултăр, — тетĕп. Хамăн галстук çыхма алă чĕтрет. — Хăш галстук килĕшет-ши, Тимуш?

— Хĕрли,—тет вăл витĕмлĕ сассипе.

— Хĕрли-тĕк, хĕрли.

Юлашкинчен татах тепĕр хут тĕкĕр умĕнче çӳçе вирелле тураса якатрăм та чĕнтĕм:

— Атя, кайрăмăр!

— Купăсна ил.

— Мĕн тума? Аюк, — кутăнлашатăп.

— Эсĕ музыкант. Ку вăл этеме илем парать.

Парать-тĕк, парать. Килĕшрĕм. Хуткупăс алăра мар чух, хама та тем çитмен пек туйăнать.

Клубра çын лăках. Концерт пуçланман. Чаршавĕ хупă. Ун-кун пăхкаларăм. Шура ниçта та курăнмасть.

— Ăçта сан хĕрӳсем? — пăшăлтататăп Тимуша. Ун сăмахне илтме ĕлкĕреймерĕм. Кӳршĕ çамрăкĕ Палюк пырса алă парса саламларĕ те сцена çине хăпарма чĕнчĕ. Вĕсен иккен юрлакансем валли купăсçă çук. Купăсçи урăх ялтан килмелле имĕш, туйра кĕлернĕ. Мана ял çамрăкĕ пĕлет, хам ĕмĕрте эпĕ нумай юрăçсем çумĕнче хут-

купăс каласа тăнă. ФЗО шкулĕнче вĕреннĕ чух та мансăр сахал концерт иртнĕ. Ахальтен мар ĕнтĕ хĕрсем тăрăхланине пĕрре мар тӳснĕ: «Гена пире пăхать-и, савни унăн — хуткупăсĕ. Купăс пĕрмечи хăçан шăтĕ!» Мур хĕрĕсем. Юрлама пуçласан вара: «Гена, ăçта сан купăсу?» — теççĕ.

Палюка хам патăмран хăвалатăп, пуçăмра пачах урăх шухăш. Вăл пур шав йăнкăртатать.

— Хăтар ĕнтĕ, — хушать Тимуш.

Тилмĕрнине хирĕç тавăраймастăп. Ирĕксĕрех килĕшетĕп.

Мана программăпа паллаштарчĕç. Юрăсене пурне те пĕлетĕп. Пăшăрханма кирлĕ мар.

Сцена çине часах ялти çамрăксен хорĕ тухрĕ. Юрă кĕввисене чаршав уçăличчен кăшт-кашт аса илтĕм.

Концерт пуçланчĕ. Хор умлă-хыçлă темиçе юрă шăрантарчĕ. Куракансем алă çупаççĕ. Тен, юрăсем çав териех те янрамарĕç-тĕр, ял çыннисем ытлашши тиркемеççĕ.

Хор сцена хыçне кĕрет. Ертсе пыраканĕ сăвăç пирки калать. Поэт тухать ĕнтĕ. Çак вăхăтра пĕччен юрлакапа репетици ирттермелле. Ман пата часах пĕр хĕре ертсе пычĕç. Кам ку? Мĕнле палламан хĕр? Халиччен курман. Виçĕ çул яла таврăнман, аякри ФЗО шкулĕнче вĕреннĕ. Çак вăхăтра хамăр пахчарах мăкăнь кĕрен чечек сарнă. Мĕн тери хитре хĕр. Пичĕ-куçĕ эреветлĕ-теветлĕ. Пĕтрĕм, Якат Петĕр пăчăнтăр-р. Пĕрре кăна пăхса илтĕм. Ак тамаша! Мĕн амакĕ? Тĕпсĕр касмăка чăматăп! Сасартăк ăшăмра халиччен лăпкăн тĕлĕрнĕ арăслан вăранчĕ, тĕлкĕшекен кăвар вĕри хĕлхем чĕртет. Чараймастăп, юнăма чашлаттарса вĕретсе илчĕ ваштах. Туятăп, юнăм хальхаль пĕрхĕнсе тухать питçăмартинчен. Чĕлхе çухалчĕ. Пӳрнесем хытрĕç, хуткупăс чĕлĕхĕсем тăрăх чупса вылямаççĕ. Куç хупанкисене усал тытамак тытрĕ-и? Çĕкленмест çӳлелле, пăхаймастăп хĕр куçĕнчен. Юрату текенни мар-ши ку? Халиччен çакнашкал туйăм хыпкăчламанччĕ.

Эпĕ хытса тăнине хĕр туйрĕ-ши, вăл хăй чĕнчĕ малтан:

— Ноти çук. Юрă ячĕ «Одуванчик». Авторĕ тутар композиторĕ Фаттах. Пĕлетĕр-и?

— Çу-у-к, — терĕм. Анчах хам сасса хам илтмерĕм.

— Юрласа парам. Тен, эсир юрă çеммине тытса юлăр хуткупăспа калама.

— Юрлăр, итлетĕп, — пăшăлтатрăм тата ытларах вăтанса. Хĕр хăюллăскер, иментине палăртмасть. Маттур.

Юсанса тăчĕ те пуçларĕ чуна тивекен юрă. Сăмахĕсем мĕнлерех! Акă: «...Юханшыв леш енче ял тĕлĕрет. Эпир иккĕн çӳретпĕр уйăх çуттинче. Эсĕ мана çул хĕррипе ӳсекен хăлха çакки чечекне парнелерĕн. Пĕлместĕп, мĕн каласшăн пултăн-ши мана? Анчах çырма леш енчен аскăн çил вĕрчĕ те мамăк хăлха çаккисем вĕçрĕç, пĕтрĕç тавра-на. Сан пирки чап çӳрет: каччă, эсĕ пур хĕрсене те чечек парнелен, имĕш. Ахалех эс çӳрен, ахалех куçран пăхан. Санăн чĕрӳ — хăлха çакки куракĕ, çил вĕрĕ те вĕçсе сапаланĕ».

Итлерĕм те юри мана тĕртсе юрланăнах туйăнчĕ. Ăшри арăслан ӳхĕрчĕ кăна: «Эпĕ—хăлха çакки куракĕ мар. Вĕçсе саланмăп...»

Хĕрĕн сасси, пĕр пытармасăр калатăп, чăн-чăн йĕс шăнкăрав. Ман чĕре ирĕклĕнех тыткăна парăнчĕ.

Концерта ертсе пыраканĕ итлекенсене тем пĕлтерчĕ, хăлхана кĕрсе юлаймарĕ. Анчах пире тĕпĕртеттерсе сцена çине илсе тухрĕ.

Сцена çинче хĕр манпа юнашар тăрса юрларĕ. Юрă вĕçленсен, залра тăвăл çĕкленчĕ: «Би-ис!» — теççĕ. Иккĕмĕш хут юрлаттарчĕç-юрлаттарчĕçех. Пурне те кăмăла каять çав тĕнче илемĕ.

Чипер хĕре эпĕ тепĕр хут сцена хыçĕнче куртăм. Киле кайма хатĕрленнĕ, алăк патнелле утать. Тăм камит евĕр хытрăм кайрăм. Юрать ман ăшра арăслан ахăрса ячĕ: «...Вĕçернет. Ут хĕр хыççăн, хуса çит, ăсатса яр». Хуткупăсăма çурăм хыçне çавăрса хутăм та, вĕçтертĕм хĕр хыççăн. Хуса çитрĕм. Çук, намăслантармарĕ хĕр. «Сĕмсĕркке, ăçта ăнтăлан!» — темерĕ. Кăмăллă. Урама тухрăмăр. Тахçантанпах çӳренĕ хĕр пек лăпкăн калаçма тытăнчĕ.

— Купăспа ăста калатăр, музыка училищинче вĕренетĕр-и? — ыйтать.

— Вĕренместĕп. Хуткупăспа ачаранах калатăп.

— Музыкăпа туслă çынсене хисеплетĕп, телейлĕ çын вырăнне хуратăп. Ун пек çынсем çутçанталăкăн куçа курăнман ытарайми илемлĕхĕпе киленеççĕ.

Ăçтан тухать калаçу? Вăл нотăпа юрлама, пианинăпа калама пĕлет. Интернат-шкулта вĕрентнĕ вĕсене. Ĕмĕчĕ ун — музыка училищине вĕренме кĕресси. Композиторсем çинчен сăмах-юмах тапранчĕ.

— Сан юратнă композитору кам?

Ыйтрĕ те. Ĕмĕрне те аса илмен, хăлхара тытса юлман. Унăн чи юратнă композиторĕ Михаил Иванович

Глинка иккен. Хӑй ҫавӑнтах чипер хӗр ҫинчен вырӑсла юрӑ юрласа илчӗ.

— Ҫак юрӑ сӑмахӗсене кам ҫырнӑ? Пӗлместӗр-и? Эх, эсир те ҫав. Пушкин ҫырнӑ. Вӑл Анна Керна питӗ юратнӑ. Унӑн хитрелӗхӗ ҫинчен сӑвӑ ҫырнӑ.

— «Я помню чудное мгновенье» юрра илтнӗ, ӑна кам мӗншӗн ҫырнине, кӗвӗленине пӗлес шухӑш аса килмен.

— Совет композиторӗсенчен кама юратан? — ыйтать татах. Эпӗ каласса кӗтмесӗрех хӑйӗн юратнӑ композиторӗ ҫинчен пуҫлать сӑмах.

— Пуринчен ытла мана Никита Богословский килӗшет.

— Ун пек композитор ҫинчен илтмен, — тетӗп. Ҫумра утакан хӗр ахӑлтатса кулса ярать.

— Шел, — тет вӑл куҫне шӑлса. — Ун юррисене юратсах юрлатӑн. Вӑл ытларах кинофильмсене юрӑпа илемлетет. «Истребители» кино курнӑ-и?

— Курнӑ.

— Летчик юратнӑ хула ҫинчен юрланине маннӑ-и вара?

— Манман, — тетӗп. Ҫавӑнтах шӑппӑн юрлама тытӑнтӑм:

— В далекий край товарищ улетает.
Родные ветры вслед за ним летят.
Любимый город...

Манпа пӗрле хӗр те юрлать.

— «Разные судьбы» кино курнӑ-и?

— Курнӑ. Кинона ҫӳреме юрататӑп.

— Пурте юратаҫҫӗ. Анчах чылайӑшӗ унта мӗн пулса иртнине курнисӗр пуҫне урӑх ним те асӑрхасшӑн мар. Ҫак кинора мана Рощин юрри кӑмӑла каять. Ӑна та Никита Богословский ҫырнӑ.

— Кам вӑл Рощин?

— Рощин вӑл — ҫамрӑк хӗре юратнӑ композитор.

— Аса илтӗм! Вӑл ӳпкелешсе юрлатчӗ пулас, ҫамрӑк хӗре, ну, эппин, хӑйӗн юратӑвне ватӑлсан тин тӗл пулнӑшӑн.

Хӗр каллех кулса ячӗ.

— Эпӗ ытларах хамӑр композиторсене пӗлетӗп: Лукин. Хирбю. «Чӑваш хӑмли» юрӑ хӑй мӗне тӑрать! — Мухтанатӑп. Хам ҫавӑнтах купӑса ҫавӑртӑм та калама тытӑнтӑм. «Шупашкар урамӗсем» юрра тытӑнасшӑнччӗ. Анчах та вӑл чарчӗ.

— Юрӗ, тепӗр чух. Эпӗ ҫитрӗм акӑ. Сывӑ пул, Гена!

Вăл хĕсĕк тăкăрлăкалла чупса кайрĕ. Тĕттĕмре унăн шурă кĕпи çăлтăр евĕр йăлкăшать кăна. Эпĕ ним калама та пĕлмерĕм, хытса юлтăм юпалла. Эх, тăмсай.

Хĕр уйрăлса кайсан, урана тапратма вăй çитерейместĕр пĕр вырăнта чылайччен тăтăм. Кĕтни харам пулчĕ. Каялла тухмарĕ. Ирĕксĕрех çавăрăнса килелле утрăм. Пурпĕрех чунра çăмăл, çăмăл. Ĕмĕтĕм çунатланнăн туятăп. Пулаççĕ-мĕн тĕнчере, çав тери ăслă, çепĕç хĕрсем. Вĕсен çумĕнче пурăнасси пысăк телей.

Киле тавăрăнсан час çывăраймарăм. Шухăшăм çаплах пĕрле утнă хĕр çинче. Качча илесчĕ çавнашкал пикене. Мĕн тери çăмăл пулĕччĕ пурăнăç. Ăшăмри арăслан каллех вăранчĕ. «Ыранах хăтана яр!» — тет. «Яратăп!» — сасăпах кăшкăртăм. Чим-ха, ара эпĕ хĕр ятне ыйтса пĕлме ăс та çитерейменох. Эх, айван! Кам хĕрĕ-ши? Ялтан татăлса пурăнсан кун пек-çке вăл япала.

Ирхине илĕм-тилĕмпех Тимуш килсе кĕчĕ. Ыйхăран вăратасшăн лăс-лăс силлет мана.

— Ăçта çухалтăн çак эсĕ çĕркаç концерт хыççăн? — ыйтать. Сасси йĕкĕлтенĕн илтĕнет.

— Киле тавăрăнтăм.

— Никама та ăсатса ямарăн-и?

— Çук, — тунатăп.

— Шел, шел. Эпĕ сана Шурăпа Шупашкартан килнĕ хĕре кăтартасшăнччĕ. Нина ятлă. Пулмарĕ паллаштарасси. Ăна такам мурĕ ăсатса янă. Вĕсем паян ирех хулана тухса каяççĕ. Атя ăсатма.

— Каймастăп!

— Тăхăн, теççĕ сана, — шăл витĕр калать.

Эпĕ тăма шутламаннине кура ман çинчи çӳхе утияла сирсе пăрахрĕ. Эх, тарăхса кайрăм, çилĕ килнĕ енне кăшкăрса тăкрăм:

— Мĕн тăвас унпа! Сирĕлтĕр сан Нину-качку! Эпир, ав, таçта çӳретпĕр, çав вăхăтра ялта чипер пикесем ӳссе çитĕннĕ.

— Ну-у-у? — тĕлĕненçи пулать. — Пĕлесчĕ. Кала, çураçма май килмест-и? Ятне кала-ха!

— Ятне тата кам хĕрне пĕлнĕ пулсан, çутăлнă-çутăлман ун хапхи патне кайса ларăттăм.

— Ăçтан шыраса тупрăн ăна? Мĕнле паллашрăн?

— Ĕнер концертран тухса кайнă-и-мĕн эсĕ? Асăрхамарăн-и вара ăна хуткупăс каласа «Одуванчик» юрă юрлаттарнине?

Тимуша тем пулчĕ, варне тытса ахăлтатма пуçларĕ. Ним кулăшлине те курмастăп. Шăл хушшинче кулăш пĕрчи ирĕлчĕ пулĕ. Кулса тăрансан, пусмăрласах тум тăхăнтартрĕ мана.

— Пĕччен именетĕп. Ман савние кайса ăсатар, ял вĕçĕнчи автобус чарăнакан çĕре, — ӳкĕтлет Тимуш.

Юлташа пулăшмалла. Вĕренпе çыхса ирĕксĕрленĕн утатăп. Ялтан тухсан, автобус чарăнакан çĕрелле йăлт! пăхса илтĕм. Курах кайрăм.

— Тимуш! Ĕнерхи хĕр Шурăпа калаçса тăрать, — тетĕп.

— Э-э, ара вăл Нина, Шупашкар хĕрĕ, сана паллаш тарас текенни. Халь сана вăл кирлĕ мар ĕнтĕ, эсĕ каç хамăр çук вăхăтра çитĕннĕ ял хĕрне тупнă.

— Ан пакăлтат-ха уссăра!—хирĕçлетĕп ăна. Эпĕ пĕтĕмпех ăнлантăм. Çĕркаçхи хĕр çакă —Нина, эппин, вăл. Хăюлăх таçтан тухрĕ. Çавра çил евĕр çитсе тăтăм хĕрсем умне.

— Сывлăх сунатăп сире! — саламларăм хĕрсене. Унччен те пулмарĕ, автобус килсе чарăнчĕ те. Урăх пĕр сăмах хушаймарăм. Шурăпа Нина автобуса кĕрсе ларчĕç. Юрать-ха, вĕсен вырăнĕ чӳрече умĕнче. Алă сулатпăр: вĕсем те, эпир те. Часах автобусĕ тапранчĕ. Илсе кайрĕ тин çех тупнă юратăва.

— Эх, Тимуш, ним те калаймарăм, — тетĕп, хаш сывласа.

— Ху айăплă.

— Ĕлкĕреймерĕм.

— Чеерех пулаççĕ ăна.

— Ăçта курас ĕнтĕ ăна? — кулянатăп. Ăша пачах урăхла вут çулăмĕ хыпса илчĕ. Ку çав тери ыраттараканни.

— Ан пăшăрхан, — тет Тимуш. — Пĕлтерем пĕр вăрттăнлăх: вĕсем пире хулара кĕтеççĕ, хăнана пыма чĕнчĕç.

— Хăнана? Урра! — ачалла сиккелетĕп. — Атя паянах каятпăр. Ыран ĕçе пуçăнăпăр. Пĕрле, тăватсăмăр Атăл хĕрринче çӳрĕпĕр.

Сисетĕп, Тимушăн та ăш вăркать. Унсăрăн манпа килĕшмесĕр тăрĕччĕ. Кайма калаçса татăлтăмăр.

Киле таврăнсан чăматана уçса лартрăм та япаласене унта тирпейлĕ хума тытăнтăм.

— Ăçта капла? — ыйтать анне.

— Шупашкара каятăп. — тетĕп çемçен.—Пире стройкăра питĕ кĕтеççĕ.

— Ара эсĕ вĕренсе тухнă ятпа килте пĕр уйăх пурăнма юрать, терĕн-çке.

— Чĕнеççĕ. Ĕçлекенсем çитмеççĕ. Эсĕ ан кулян, анне. Кунта аякра мар ĕнтĕ, кашни канмалли кунах килсе тăрăп, — йăпататăп аннене.

— Виçĕмкун çеç килтĕн, паян каян. Çунатлă çынна тытса чарма вăйăм çитеймĕ.

Ах, çав аннене, темшĕн вăл нихăçан та ирĕккĕн кăларса ямасть килтен, ӳпкелешет, йăнкăртатать.

Каç пулас умĕн Тумушпа иккĕн чăматан йăтса автобуса кĕрсе лартăмăр.

Васка, автобус, çитер пире хамăрăн савнисем патне!

Пилĕк çул иртрĕ, пилĕк кун пек çеç туйрăм. Юлашки пилĕк талăк вара — хăй пĕр ĕмĕр. Выртатăп, диван çине йăванса кайнă та. Куçа уçса пăхассăм килмест. Çынна курса калаçассинчен тур сыхлатăр. Йĕпе çине сапа тенĕн тахăшĕ шăнкăртаттарать, ав. Кам килчĕ-ши ĕнтĕ?

— Кĕр, алăк уçă!

Тимуш-мĕн. Шак! хытса тăчĕ. Хваттер пуш-пушах. Япаласем унта-кунта выртаççĕ. Çамкам çинче йĕпетнĕ шурă тутăр. Çаксем тĕлĕнтерчĕç ĕнтĕ ăна.

— Гена, мĕне пĕлтерет ку? Çапса пăрахсан та ним те тĕсмĕртместĕп.

Пĕлмене хывать-ши? Тен, илтмен чăнах. Нина каламан-тăр, хам та никама шарламан. Хашлатса сывласа илтĕм те çамка çинчи тутăра çĕре çатлаттартăм.

— Ман пурăнăç стени, Тимуш, лаштăрах çурăлчĕ çурмаран. Хам ĕçре чух Нина ачапах тухса кайнă. Эрнене яхăн çапла ухмахла пурăнатăп.

— Ан калаç-ха кирлĕ мара. Ĕненме хĕн, суян.

Ура çине сиксе тăтăм та Нина çырса хăварнă хут татăккине тыттартăм. Вăл сасăпах вуларĕ: «Гена, пире ан шыра. Нина.»

— Мĕн сăлтава пула? — ыйтать Тимуш, Нина çырăвне каялла парса.

— Усал хыпар пĕлтĕм, Тимуш. Ун савнă каччи пур. Унпа çыхăну тытать. Почта ещĕкĕнче Нина ячĕпе килнĕ çыру тупрăм. Ах, уртарчĕ хама. Вирлех çапрăм пулас ăна.

— Кĕвĕç тени вăл çынна сумсăра кăларать, пуçа касать. Ачана шел, — хĕрхенет Тимуш.

Олĕшка ывăлăма асăнатăп та чĕре тухса ӳкесле ыратать.

— Пыр-ха, çуттине кайса ил, — хушатăп юлташăма. Вăл тухса кайрĕ. Эпĕ каллех диван çине тăсăлса выртрăм. Пуçра шухăш хĕмленет. Ман ума Нинăпа иксĕмĕр ирттернĕ çулсем пĕрин хыççăн тепри тухса тăраççĕ. Пилĕк çул! Шутласан сахалах та мар. Паллах, ваттисем каларăшле, тăварне пĕр пăт кăна çимен-тĕр, анчах та арăма витĕр пĕлмен. Арăм...

Ялтан Шупашкара килсенех Тимушпа иксĕмĕре те ĕçе хапăлах йышăнчĕç. Эпир — строительсем. Алăра кирпĕч вылятчĕ. Мĕншĕн? Мĕншĕн тесен чунра хавас. Манăн тĕлĕнмелле ырă кăмăллă, тĕнчере çук хитре савни — Нина — пур. Ăна юратнипе, хушсан, сăрта тепĕр май çавăрса лартма пултарнă. Тимушăн та çавах, унăн та савнă хĕр пур — Шура. Пирĕн сăнўкерчĕксене хисеп хăми çине вырнаçтарчĕç, комсомол пухăвĕсенче ырăпа асăнаççĕ.

Пултарулăх концерчĕсене хутшăнаттăмăр. Нина юрлать, эпĕ хуткупăс калатăп. Киносене, театрсене çўреттĕмĕр ялан.

Нинăпа çапла пĕр çул çўресен асран кайми самант çитрĕ. Çамрăк мăшăрсене пурăнмалли çурт туса пĕтернĕ кун ячĕпе эпир Нинăпа кайса çырăнтăмăр. Тимуш та авланчĕ, Шурăна качча илчĕ. Пĕрле комсомолла туй турăмăр. Мĕн чул çын пулмарĕ-ши туйра! Саламларĕç, саламларĕç... Кам кăна телей сунмарĕ-ши! Хамăрпа пĕрле ĕçлекен строитель-юлташсем, тăвансем, ĕçри аслă юлташсем, комсомол комитечĕ тата ыттисем те... Сĕтел хушшинче ларнă чух хăнасем пĕр-пĕринпе черкке шаккаса тавсси тăваççĕ те пире йўçĕ! тесе кăшкăраççĕ. Вăтаннипе Нинăпа иксĕмĕр те хĕрелетпĕр, çапах та чуптумалла. Тутасем сĕртĕннĕ-сĕртĕнмен пуçа чиксе айккинелле тăратпăр.

Туйра пире хваттер уççи пачĕç. Тимушсене те пайсăр хăварман. Хваттерсем пирĕн юнашарах, çамрăк мăшăрсен çуртĕнче.

Пурăнăç калама çук лайăх пуçланчĕ. Пирĕн пек телейлĕ мăшăр тĕнчере сайра. Пурăнмалла та пурăнмалла савăнса. Çапла пулчĕ те ку тарана çити. Шăкăл-шăкăл çемье... Пĕр çăварти çăкăра çурмаран пайланă. Йĕркеллĕ, тирпейлĕ хĕрарăм Нина. Алли — ылтăн. Эпĕ инженер пек çўреттĕм ĕçе. Кил-çурт таса. Пурна киле эпир илемлĕ пукан-сĕтел, кĕнеке шкапĕ, телевизор туянтăмăр. «Хăтлă сирĕн пўлĕм», — тетчĕç килсе çўрекенсем. Ĕç пĕтĕмпех Нина илем кўме пĕлнинче. Лайăх арăм лекнĕшĕн

хĕпĕртеттĕм. Хăшпĕр чух арăм чӳречерен салху пăхса тăнине куркаланă, пĕррехинче ыйтрăм та-ха:

— Нина, кама шыратăн урамра? Кама тунсăхлан?

Кĕтмен ыйту пулчĕ-ши, е шухăшĕнчен уйăрăлма йывăртан-и, тӳрех ним те чĕнмерĕ. Чылай тăрсан тин тĕнчере çук ырă хыпар пĕлтерчĕ:

— Ача амăш аллинчен уртăннă та аран-аран утать. Ывăннă ĕнтĕ.

Кантăк витĕр эпĕ те пăхрăм, курăнмарĕ.

— Гена, — терĕ вăл, çакăн чух ман çума йăпшăнса, — пирĕн те пĕчĕкки пулать.

Ух! Савăнтăм. Нинăна ыталаса илтĕм те çавăркалатăп кăна.

Кĕтнĕ пекех, пирĕн ывăл ача çуралчĕ. Хамăр калаçса татăлнине, пульницăран тухичченех Нина ăна Олĕшка тесе чĕнме тытăннă. Пульницăна вĕсене киле илсе тавăрăнма кайсан, эпĕ хăранинчен кайран та час-часах аса илсе кулаттăмăр.

Ларатăп çапла пульницăн тĕлпулу пӳлĕмĕнче. Шур халат тăхăннă ватăрах сестра кĕчĕ те пӳлĕме, сасартăк мана:

— Ашшĕ! Акă сире парне, — терĕ. Унтан кап! тыттарчĕ мана утиялпа чĕркенĕ ача. Эпĕ шартах сикрĕм, аллăмсем ярт! çĕрелле усăнчĕç! Юрать-ха, сестра хыçĕнчен пӳлĕме кĕнĕ Нина ачана йăпăр-япăр ярса тытма ĕлкĕрчĕ. Сестра, сăмси çине шуса аннă куçлăхĕ урлă пăхса, пуçне сулкаласа илчĕ те:

— Мĕн эсир, тĕкĕлтурам, çав териех пăшăрханса ӳкрĕр? Лăпланăр, çамрăк ашшĕ, лăпланăр, — терĕ.

Нумаях та пулмасть, эпĕ хам та ачаччĕ-çке. Халĕ эпĕ — пĕчĕк этемĕн ашшĕ. Мана «ашшĕ», «атте» теççĕ. Ку калама çăмăл, анчах та çак чăнлăха пуçа вырнаçтарма хĕн. Çавăнпа мана шалкăм çапнăн чĕтретсе пăрахрĕ. Майĕпен аранах хама чун кĕчĕ.

— Каçарсамăрччĕ, — терĕм пуç тайса, — чунра мĕн пулса иртнине хам та ăнланмарăм.

— Пулкалать ун пекки, тĕкĕлтурам. Пăшăрханма кирлĕ мар. Пурте чиперех, сывлăхлă, телейлĕ, — йăпатать сестра.

Куçран пăхма вăтанатăп, çапах та Нинăран ача ыйтатăп.

— Ӳкермĕн-и? — тет, шăл йĕрсе Нина.

— Нихăçан та!

Нина йăл! кулса мана Олёшкăна тыттарать. Чăнах, пурте йёркеллё. Вара киле кайрăмăр.

Виçё çул тултарчё Олёшка. Сăнёпе вăл каснă лартнă амăшах. Куçё — хăмăр. Çÿçё — сарă. Олёшка вăл чăнчăн чёвёлти кайăк. Ир калаçма вёренчё те, çăварё самантлăха та хупăнмасть. Кам итлет-ши ёнтё çак вăхăтра унăн чёвёлти сассине? Чуна савăнтаракан çăлкуçё вăл ман. Çук, эпё вёсемсёр пурăнма пултараймастăп. Эпё пётём вăйран кăшкăратăп: «Олёшка-а! Ни-на!» Пушă пÿлём ян! янрать. «...Ан шыра...» — тесе çырса хăварнă Нина. Çу-у-ук! Шыратăп! Тупатăп! Чим, вёсем, тен, çыру çыракан патёнче пурăнаççё? Аха, пурăнаççё-и?! Мёнле паттăр вара вăл, çын çемйине тытса илекенскер? Парăп ёнсе чикки! Сурап сан çине лачлаттарса! Тăхта-ха, эсё, Гена, тен Нина санран сивённё, юратмасть? Эх, çав хёрарăмсен чунне нимпе çутатса курма çук. Хам та ытларах вёрилентём пулас. Юратнă арăм çине алă çёклерём. Ну, айăплă вёт-ха вăл, манран вăрттăн такампа çыру çÿретни ултав вёт-ха вăл. Тата эпё Нинăна пёрре те хёнес шутпа алă çёклемен. Çавăншăнах килтен тухса каймалла-и? Çитменнине ачапа. Чим-ха, чим, ара эпё ăна çапнă хыççăн çавăтса алăк патнелле тёртсе ятăм мар-и? «Тухса кай ман килтен!» — терём. Ах, мён туса хутăм! Паллах, вăл мана каçарас çук. Çапла, алăкран тапсах кăларса ятăм. Ун выранёнче пулсан, хам та тухса каймалла. Пётёмпех эпё айăплă. Ёмётсёр эпё, кёвёç, путсёр этем. Акă кам эпё. Мён тăвас? Юратăва пайлас килмест икке.

Шухăшран мана алăк шăнкăравё уйăрчё. Тимуш çаврăнса çитрё.

— Мён çăвине шăнкăравлан?

— Ха, эсё хусах çын-çке, — лёпёртетет юлташăм, — хёрпе ларма пултаран.

— Нинăпа Олёшкăна улăштаракан ёмёрне те тупăнаймё.

— Вăл, ав, тупнă, вăрттăн çыру илсе тăрать.

— Пурнăç сакки сарлака. Пурнăçра тем те тÿсмелле пулё, Тимуш тусăм. Тен, хам пăхма пёлмерём, кичем пулчё-тёр.

— Майлашё-ха. Ёçер ăш хыпнă енне.

— Мён туянтăн?

— Квас.

— Çуттисёр, кваспах çырлахтарасшăн-и?

— Гена юлташăм, юрамасть. Çакнашкал хуйхă-суйхăллă вăхăтра çутти çынна тыткăна илет те.

* * *

...Виталие флота илнӗ. Вӑл пулас моряк.

Килтен тухни темиҫе кун, поезд ҫаплах малалла, малалла ыткӑнать.

— Тӗнче хӗрринех илсе ҫитерет пулас пире, ку поезд! — шӳтлет чакӑр куҫлӑ яш салтак, кантӑк витӗр аякка-аякка тинкерсе.

— Мӗнле-ши вӑл тӗнче хӗрри? — кулкалать Витали те, калаҫӑва хутшӑнса. Вӑл юлташӗсемпе хутран-ситрен ҫапла перкелешсе илет те, каллех пуҫне кӗнеке ҫине пӗкет. Кӗнекийӗ вара, чӑнах, куҫ илмесӗр вуламаллискер: «Десять дней, которые потрясли мир».

— Мӗнле кӗнеке вулан шав? — ыйтать Виталирен леш чакӑр куҫлиех.

— Тӗлӗнмелле кӗнеке. Америка писателӗ Джон Рид пирӗн Октябрьти социализмлӑ Аслӑ революци ҫинчен ҫырнӑ.

— Ӑҫтан пӗлет вара вӑл пирӗн революцие?

— Ун чухне вӑл шӑпах Раҫҫейре пулнӑ. Ҫамрӑкскер, пур ҫӗрте те пӑшатан пек шӑтарса ҫӳренӗ.

Поезд, Виталие кӗтнӗн, вӑл кӗнекен юлашки страницине вуланӑ кун, пысӑк тинӗс хӗррине ҫитсе чарӑнчӗ. Пурте пӑшӑрханса пӑхаҫҫӗ вӗҫӗ-хӗррисӗр сарӑлса выртакан тинӗс ҫине. Юман кӗреш евӗр мӑкӑлтатса килекен хумсем пӗрин хыҫҫӑн тепри пыра-пыра ҫапаҫҫӗ ҫырана. Мӗншӗн кӳренет-ши? Е чӑп тулли шывне тытса чарнишӗн ҫапла туллашать? Тӑвӑр-ши вара куҫ ытамне кӗрейми ирӗк вырӑнта алхасса ҫӳреме? Ӑҫтан тухаҫҫӗ-ши ҫав хумсем, кам авӑсса тӑрать? Тӗлӗнмелле ҫав ҫутҫанталӑк мыскаринчен.

Тинӗс... Лере — океан.

Кунта Тӑван ҫӗршывӑн шыв урлӑ выртакан чикки. Ана моряксен сыхламалла.

Кашни ҫар чаҫӗнчех хӑйне май йӗрке. Ҫав йӑла-йӗрке витӗр тухсан, тум та параҫҫӗ. Мӗн калаҫси пур, килӗшет моряк тумӗ яшсене, сӑн парать. Шалпар шӑлавар, уҫӑ ҫухав айӗн йӑрӑм-йӑрӑм тельняшка курӑнать. Лентӑллӑ, сӑмсасӑр карттус. Хӑю ҫинче ӑҫта службӑра тӑнипе кӑтартса паракан паллӑ.

Хулана тухма чи пирвайхи хут ирӗк илнӗ кунах, флота ҫӗнӗрен килнисем, пурте тенӗпе пӗрех, сӑн ҫаптарчӗҫ моряк тумӗпе. Вара мухтанчӑкраххисем сӑнӳкерчӗкӗсене савнийӗсем патне ячӗҫ.

Виталий ытти юлташĕсемпе пĕрле шыв айĕнчен ишекен ҫар киммине вĕренме тытăнчĕ. Темиҫе уйăхран практика пуҫланчĕ. Анса каять вара кимĕ тинĕс тĕпне ҫити. Малтан пĕр сехет, унтан иккĕ, вара пĕр кун, унтан — виҫҫĕ, тăваттă... Эрне ытла та шыв айĕнче иртет.

Ҫуркуннехи пĕр ҫумăрлă каҫ моряксене тревога сасси вăратрĕ. Самантрах вĕсем пухăнмалли вырăна ҫитсе тăчĕҫ. Акă приказпа паллаштараҫҫĕ. Чикĕ ҫывăхĕнче тăшманăн шыв айĕн ҫӳрекен кимми. Приказра тăшман кимми хăш параллель, меридиан патнелле ҫывхарни пурте паллă. Ҫула тухрĕ вара совет кимми, ыткăнать палăртнă ҫĕрелле. Тăрать Виталий чикĕ хуралĕнче. Мĕн чухлĕ ишмелле киммĕн тăшмана шыраса тупиччен? Ку паллă мар. Вăхăтне кам пĕлтĕр ĕнтĕ.

Виталий постран канма тухать. Пуҫра шухăшсем явăнаҫҫĕ. Куҫа хупсанах Нина тухса тăрать. Сарă, вăрăм ярт ҫӳҫ. Миҫе ҫыру яман-ши ун патне? Нумай. Анчах хăй флотра иккенне нихăҫан та асăнман: «Эпĕ — ҫарта». Пĕтĕм сăмахĕ те ҫакă ҫеҫ пулнă. Ытти юлташĕсене кура сăнӳкерчĕкĕ ярса парасчĕ. Ҫук. Кирек хăҫан та ăна сăпайлăх тытса чарать. Вăл вуланă кĕнекесем, курнă кинокартинăсем ҫинчен е юлташĕсем пирки ҫырнă. Малтанхи вăхăтра, шыв айĕн ҫӳрекен кимĕпе ишме тинĕсе тухиччен, Витя хĕр патне виҫ-тăвата кунтах ҫыру вĕҫтеретчĕ. Каярахпа сайрараххăн чупнă почта ещĕкĕ патне. Халĕ ĕнтĕ хăҫан, хăҫан почтăна утмалла? Паллах мар-ха.

Йĕрлеҫҫĕ совет морякĕсем шыв айĕн ҫӳрекен тăшман киммине. Чеескер. Таҫта мура кайса ҫухалать. Темĕн чул пытансан та капкăна лекетех. Анчах ăна тыткăна илме ҫăмăл пулман совет морякĕсене. Кирек мĕнле тискерленсен те, чееленсен те тăшман вĕҫернеймен. Ҫакăн чух Виталий йывăр аманать.

Тинĕс ҫыранĕ хĕрринче савăнăҫлă музыка янăрать. Ҫар карапĕсем салют параҫҫĕ. Йĕри-тавра моряксем. Ҫывăхра хĕрсене те курма пулать. Путех, вĕсем савнисене шыраҫҫĕ. Ҫапла чысласа кĕтсе илеҫҫĕ-мĕн паттăр моряксене. Вĕсем Совет ҫĕршывĕн чиккине пăсма хăйнă тăшман киммине парăнтарнă. Ҫĕнтерӳҫĕсене яланах — пысăк хисеп.

Виталие, аманнипе тăн ҫухатнăскерне, ҫар госпитальне вырнаҫтарчĕҫ. Мĕн вăхăт куҫĕ уҫăлман-ши ун? Ыйтсан хăй те калаймĕ. Вара ыйхăсăр ҫĕрсем канăҫ паман.

Ҫапла, Виталишĕн асаплă кунсенче, пĕринче, аякри тăван хулара Нинăн туйĕ сикнĕ. Морякăн пуҫне пырса

кĕмен çак япала. Пĕр енчен вăл хĕре шаннă, тепĕр енчен илсен, сывлăхĕ хавшакланса çитнипе, шухăш вылянтарма вăй та юлман. Ун умĕнче çаплах шурă халатлă çынсем кускаланă. Врачсем, паллах, Виталие ура çине тăратасшăн кунне-çĕрне уямасăр тăрăшнă. Темиçе-темиçе уйăх иртсен тин Виталий тăрса ларакан пулать, темиçе-темиçе эрнерен вара ура çине тăрать.

Палата. Ирхи хĕвел пайăрки Виталий пичĕ çинче вăй вылять. Йăл! кулчĕ ун тути. Пахча енчи кантăк уçă. Кайăксем чĕвĕлтетни, юрлани ян! та ян! илтĕнет. Вĕсем çепĕç сассипе пуç-тăна уçăлтарсах яраççĕ. Сасартăк çăра тĕтре сирĕлет те халиччен пекех куç умне Нина тухса тăрать. Миçе уйăх унсăрăн пурăннă! Ӳт-пĕве вăй-хăват кĕрет. Аван!

— Сывă пултăр Нина! — кăшкăрать Виталий. Сĕтел çинче тахçанах конверт, хут, кăранташ хатĕр тăрать, ав.

Мĕн çыру çырнă кунранпах почтальона кĕтме тытăнчĕ вăл. Кĕтни харама кайрĕ. Икĕ эрнерен хăй çырнă çыру каялла таврăнчĕ. Конверт кĕтесĕнче кăна темиçе сăмах. Çыру хуçине тупайман. Ăçта кайса çухалнă-ши Нина? Камран ыйтса пĕлес? Вĕсен пĕрле паллană çын та çук.

НИНА. Вокзалăн пысăк пӳлĕмĕнче ларатăп. Пуйăссем, пуйăссем! Чупатăр, чупатăр унталла-унталла. Кама ăçта илсе каятăр-ши? Тухса вĕçĕттĕм эпĕ те сирĕн хыççăн. Анчах ман алă-урасем çыхăннă çав. Элĕ пĕччен мар. Ытамăмра — виçĕ çулхи ывăлăм. Пурнăçăм ăнăçсăр. Хама хам хĕрхеннипе куççулĕ юхтаратăп. Пит тăрăх ярăнса анакан çутă ахах тумламсене пепкемĕм пĕчĕк аллипе шăлса тăрать. Тен, уншăн ку, ахăртнех, кăсăклă. Ним шарламасть хăй, тăрăшни палăрать. Юх, юх, куççулĕм. Эпĕ вăтанмастăп. Кунта паллакан çынсем çук. Халăхĕ те, ав, урамра хĕвĕшет. Тулта халĕ çутçанталăка пăхса ытармалла мар. Куç тулли илем. Çуркунне çĕр питне çуса тасатнă. Чугун çул хĕррипе ешерен пĕчĕк вăрман тăрăхĕсенче çамрăк çĕмĕрт йывăççисем шап-шурă çеçкере. Вĕсем таврана тутлă шăршă сараççĕ. Пурте савăнăçлă, пĕр эпĕ çеç мĕскĕн. Хам пурнăçа аса илетĕп те хурланатăп, йĕретĕп. Ентĕ ман пуç та ыратать. Çак вăхăтра ывăлăм ытамран шуса тухрĕ те айккинелле утса кайрĕ. Пăхатăп, ăна сак вĕçĕнче ларакан çар тумлĕ çын кăчăк туртать. Лешĕ пырса тăрсан, çын тем пăшăлтатрĕ. Тетте тыттарать — машина. Арçын ача машина тесен чунне парать. Паçăрах илĕртнĕ, эппин, вăл машинăпа. Олĕшка

ман пурне те манса вăйă выляма тытăнать. Хуйхă мĕн иккенне ăнланмасть вăл, кирлĕ те мар ăнланма.

Эпĕ чĕркуççи çине ӳпĕнетĕп, пуçа чиксе шухăша каятăп. Чăнах вĕт-ха: хĕр пĕр-пĕр каччă çунса каясла юратать, пырса чĕнеймест. Ҫаччă хăй юратрĕ пулсан, ăна хĕрпе паллашма ним те мар. Мĕншĕн паттăр хĕр тупăнмасть-ши? Хĕр ĕмĕтне татса тăракан авалхи йăлана улăштарĕччĕ. Хĕр хăй хăтана кайтăр!

— Мĕн терĕр эсир?

Ют çын сассине илтсе шартах сикрĕм. Ҫуçпуç чарăлсах кайрĕ. Ҫар тумли манпа юнашар лара парать. Ывăл çавăтса килнĕ пулас. Эпĕ вара пуçри шухăша сасăпах персе янă-мĕн.

Пуçа çĕклесе юсанса ларнине курса татах тепĕр хут ыйтрĕ вăл:

— Мĕн терĕр эсир? Хĕре каччă патне хăтана ярасшăн-и?

— Ярасшăн, — терĕм хыттăнах. — Унсăрăн хĕр юратăвĕ чĕререх типсе ларать.

— Ăнланаймастăп.

— Ĕлĕкхи йăлана улăштармалла, тетĕп. Эпир хĕруправсем каччă хамăр юратăва уçса параймастпăр, ят каясси хăрататать.

Салтак ахăлтатса кулса ямарĕ. Шухăшласа тăнă хыççăн тин çапла каларĕ:

— Йăласене улăштарсан та юратман çынна юраттараймăн. Хĕр чĕри ун чухне те пайтах çунĕ.

— Ҫук, тĕрĕс мар. Йăли улшăнсан пурпĕрех хĕрсене хăй телейне тупма çăмăл пулать.

Салтакпа эпир тавлашса кайрăмăр. Тарăхатăп, вăл пур кулать кăна. Пурăнăçăмри инкек-синкекшĕн вăл айăплăн, пĕтĕмпех каласа пама шутларăм.

— Итле, — терĕм ăна. — Шкулта вĕреннĕ чух кĕнекесем вулаттăм. Эх, тĕлĕнеттĕм вара! Мĕн тери илемлĕ пурăнăç. Юрату кăна хăй мĕне тăрать! Турă çырлах, ухмаха тухан. Мĕн-ши вăл юрату? Тупасчĕ, курасчĕ ăна...

— Ӳсме васканă. Ҫапла-и?— тет салтак.

— Васканă. Ҫитĕннисен тумне тăхăнма тăрăшнă, пысăк курăнассишĕн. Анчах сиссе юлма пулмарĕ, мĕн вăхăтра çунатсем сарăлчĕç-ши? Вăй çителĕклине чухлаймарăм. Вăхăтсăр хăлаçланчĕç, вĕçрĕç. Аякка кайма тивмерĕ, час анмалла пулчĕ çĕр çине.

— Мĕншĕн? — тĕплĕнрех пĕлесшĕн вăл.

— Чăрмавсем хамран пысăк.

— Туятăп, эсир юратăва тупнă, анчах...

— Тупнă. Юмахри пек. Хамăн чысшăн кĕрешнĕ чи хăрушла вăхăтра тĕл пултăм. Хулигансенчен хăрамасăр çĕр айĕнчен шăтса тухрĕ вăл. Мана çăлса хăварчĕ. Эпир, хĕрсем, çавнашкал паттăра шырамастпăр-и вара? Шăпах çавнашкал каччă — пирĕн çунатлă ĕмĕтре. Ун хӳттинче мĕнле хĕре пурăнма канлĕ пулмĕ? Эпĕ шиксĕр каччă чунран юратрăм.

— Вăл?

— Ăçтан пĕлĕн сире? Часах çара кайрĕ. Қайни лайăх-ха. Çара тивĕççĕр нишлĕ каччă эпĕ юратас та çук. Пурнăç çырусене куçрĕ. Вĕсене сарă куна кĕтнĕн кĕтеттĕм. Унтан сасартăк хĕрлĕ çип пăт! татăлчĕ çурмаран. Вĕçĕсене асамлă çил çухатрĕ вĕçтерсе, ĕмĕрлĕхех. Вĕри куççулĕ те пулăшаймарĕ татăлнă çипе тупса сыпма.

Пĕрле çӳренĕ кунсенче мĕншĕн-ха эпĕ хам юратăва пытарнă? Қаламарăм ăна: «Саватăп», — тесе. Қайран, çыру килме пăрахсан, каллех пуçласа çырмарăм. Мĕншĕн? Пĕтĕмпех авалхи йăлана пăхăннипе: ят каясран, каччă сивĕнесрен, хĕр чысĕ çухаласран хăранă. Юратăва уçса панă пулсан, тен, паян кун та пĕрлеччĕ.

Тав вăхăта. Вăхăт — эмел, чун суранне кăшт та пулин юсать.

Часах мана Гена юратрĕ. Çук, пăсăк каччă мар вăл. Хурлама никам та хал çитерейме. Сăнĕ-пичĕ те пур. Хура кăлкан çӳç. Қуçĕсем те хура. Пĕвĕ çӳллĕ. Илемлĕ çын. Юратăва тивĕçлех. Анчах ман чĕремре — урăххи, леш паттăр. Пурпĕрех Генăна хам çумран тĕртсе яман. Ватă хĕр ятне илтиччен урçана каччă тух, тенĕ халăхра. Ваттисем пĕлеççех. Паллашнă хыççăн çулталăк çӳрерĕмĕр. Çак хушăра хамăн паттăра вăрттăн асăнман кун иртмен. Çыру çаплах килмерĕ. Эпĕ Генăна каччă тухрăм. Ав, куратăр ĕнтĕ, пирĕн ача пур — Олĕшка.

— Ăнланмастăп, ăçта кайса кĕчĕ-ха паттăрĕ? — ыйтать салтак. — Урăх тĕл пулмарăр-и?

— Тĕл пулнă. Çав инкек тĕнче тăрăх çапкалантарса çӳреттерет те мана. — Виталипе эпир (ман паттăрăн ячĕ çапла) ывăлăм çуралсан, ăнсăртран урамра тĕл пултăмăр. «Нина! Чунăм! — кăшкăрса ячĕ те вăл, пĕтĕм халăх умĕнчех мана ыталаса чуптурĕ. — Çухалнă çын тупăнчĕ! Тупăнчĕ! Урра!» Эпир ун чух пĕр-пĕринчен уйăрăлаймасăр хăшкăлтăмăр. Вăл мана ăсатать, эпĕ — ăна. Қалаçăвăн вĕçĕ çук. Вăл çыру мĕншĕн çырманнине те пĕлтĕм. Чикке пăсакан тăшмансене тытнă чух хытă аманнă, ва-

ра госпитальте выртнӑ. Ҫайран ҫырнӑ ҫырӑвӗ мана тупайман. Уйӑрӑлма тахҫанах вӑхӑт ӗнтӗ. Пепкемӗн хырӑмӗ те выҫӑ татӑлсах ӳкрӗ-тӗр. Эпӗ ҫӗнӗ хыпар пӗлтеремха. Вара ассӑн сывласа илтӗм те каларӑм: «Витя, эпӗ каччӑ кайнӑ. Хушаматӑм та ман урӑх — Питеркина. Пӗчӗкки те пур». Вӑл юпа пек хытса тӑчӗ. Сӑн-пичӗ кӗл евӗр шуралчӗ самантлӑха. Мӗн шухӑшларӗ-ши? Анчах эпир унпа чи ҫывӑх туссем пулма тупа турӑмӑр, алӑ парса уйрӑлтӑмӑр.

— Ӑҫта илсе ҫитерчӗҫ сире ҫапла пӗр-пӗринпе тӗл пулса ҫӳренисем? — ыйтать салтак, эпӗ калама чарӑннине кура.

— Унччен те, халӗ те унтан юрататӑп тенине илтмерӗм. Хӑй вӑл педагогика институтне, музыка факультетне вӗренме кӗчӗ. Хамӑра асӑнмалӑх. Эпӗ музыкӑна ҫав тери юратнине пӗлет-ҫке вӑл. Мана та ҫаплах вӗренме ӳкӗтлет. Пултараймастӑп. Ал-урама пӗчӗкки ҫыхса лартнӑ. Вӑл вӗреннӗҫем пирӗн туслӑх татах ҫирӗпленсе пырать. Пӗр-пӗринсӗр пурӑнаймастпӑр. Калаҫӑвӗ — шав музыка пирки.

Юлашки вӑхӑтра ун патне тухаймарӑм, Олёшка кӑшт йӑшнӑччӗ. Мӗн тӑвать-ха Виталий? Паллах, вӑл кӗтнӗ, кӗтсе илеймен. Тытать те пирӗн почта ещӗкне ҫыру пӑрахса хӑварать. Ҫырӑвне Гена илсе кӗчӗ. Ытлашши нимех те ҫырман: «Нина, ӑҫта ҫухалтӑн эсӗ? Пӑшӑрханатӑп. Калаҫмаллисем пур». Упӑшкана ку уртарсах ячӗ. Киревсӗр сӑмахсем илтрӗм унтан. Кӳренмеллипе кӳрентерчӗ. Вӗсене иккӗшне питӗ паллаштарасшӑнччӗ те, ӗлкӗреймерӗм.

Килтен ачапа тухрӑм. Ӑҫталла ҫул тытмалла-ши? Аса килчӗ. Кострома хулинче паллана хӗр-тантӑш пурӑнать. Хӑнана пыма пӗр хут ҫеҫ чӗнмен. Халӗ май килчӗ, кайрӑм. Аван йышӑнчӗҫ. Уйӑх пурӑнтӑмӑр. Ӗҫӗ тупӑнмарӗ. Хӑрарӗҫ, урлӑ пӑхма тытӑнчӗҫ, уйрӑмах упӑшки. Укҫи тенкине хам та сахал пӗтермен. Мӗн тӑвӑн? Ют ҫын. Ирӗксӗрех тепӗр хут ҫула тухрӑм. Ларатӑп, акӑ, ҫакӑ станцӑра иккӗмӗш кун, пуҫа ӑҫта чикмеллине чухлаймастӑп.

Салтак ӳсӗркелесе илчӗ те ыйтрӗ:

— Эсир килтен тухса кайнине Виталий пӗлет-и?

— Мӗн тума кирлӗ ӑна пӗлме.

— Гена кӗтет пулӗ-ха?

— Темӗн ҫав.

— Киле таврӑнмастӑрах-и?

— Пите кĕççе çĕлес-и? Çаплипех таварăнсан ӳлĕм мĕн кĕтĕ?

— Тĕрĕс шутлатăр.

— Анне, анне, пăх-ха урапи тухса ӳкрĕ,—тет Олёшка машинине тăсса. Çĕнĕ теттепе мĕн хушă вылярĕ, пире калаçма чăрмантармарĕ. Маттур ача вĕт вăл ман. Ăна ыталаса темиçе хутчен те чăп! чăп! чуптуса илтĕм.

— Йăлăнтарса аптратмасть ывăлăр, Нина,— сăмах хушать салтак. Унтан вăл ачапа калаçма тытăнчĕ.

— Олёш, каяс килет-и сан яла? Сана унта асаннепе асатте кĕтеççĕ. Вĕсен юмахри пек илемлĕ сад пахчи пур. Улмуççин усăнса аннă турачĕсем айне йăпшăнса кĕр те çăварна уç. Çӳлтен хĕп-хĕрлĕ панулми пат! татăлса ӳкĕ. Пахчара лутра тĕмĕсем нумай. Вĕсем пĕри те санран çӳллĕ мар. Пĕрин патне пĕчĕк пурак çĕклесе пыр та çулçисене сиркелесе. Эсĕ вара шерепен-шерепен ярăмланнă хура çырла курăн. Татма çеç ан ӳркен. Сана кичем пулмасть унта. Кӳршĕ ачисемпе кӳлĕ хĕррине кайăн, пулă мĕнле ишсе çӳренине курса савăнăн. Пурăнас килет-и сан çавăн пек çĕрте, Олёшка?

— Пурăнас килет,—тет ача.—Пулли тыттарать-и?

— Вăлта яр та тыт.

— Ну, каятăн-и?

— Анне кайсан, каятăп.

— Амăшĕ, эсир мĕн калăр?

Салтак сăмахне илтмĕш пулатăп. Пуш параппан çапнине хăлхана чикес килмест. Вăл çине тăрсах ыйтать:

— Нинăчка, ĕненĕр, сире аван пулать пирĕн патăрта. Ваттисем таравап çынсем. Савăнсах йышăнаççĕ. Чăвашсем вĕт эпир. Сирĕн кулянмалла пулмĕ. Атте колхозра ĕç тупса парать. Пурăнăр пĕр кана. Кӳренӳсем, хумханусем сирĕлĕç. Лăпланăр. Каннă пуçпа пурне те виççе пăхăр. Шантаратăп, тĕрĕсси тупăнатех. Вăхăт, хăвăр каларăшле — эмел, чун суранне юсать.

— Усăсăр сăмах ан ваклăр-ха, тархасшăн. Ахаль те ăш çунать. Акă, тытăп та, ĕненсе лартăп эсир мĕн каланине, — тетĕп.

— Ĕненĕр! Эпĕ чăнласах калатăп, — ӳкĕтлет салтак. — Халех билет илсе паратăп. Канаш станцинче анса юлатăр. Такси хатĕр тăрать. Вăл сире яла çитерсе, пирĕн кил умĕнчех антарса хăварĕ.

— Эсир киле каймастăр-и?

— Çук. Эпĕ командировкăри çын, поезд кĕтекенскер, — ăнлантарать салтак. — Тепĕр сехетрен ман кай-

малла. Ну, килĕшрĕмĕр-и? Нина, эсир уçă кăмăллă хĕрарăм. Юрататăп эпĕ çавнашкал çынсене.

«Хĕрхенетĕп сире», — темерĕ. Çапла каланă пулсанах эпĕ шăртланмаллаччĕ. Кăмăлăм çавăрăннине сисетĕп. Темшĕн шанас килет. Çапах та именетĕп.

— Мĕнле-ха, ним палламан çынна йышăнĕç-и сирĕн ваттисем? — пăшăрханса калатăп. Ывăлу ячĕ тесен те ĕненмĕç?

— Халех хут çыратăп.

Вăл сумкинчен хутпа ручка кăларчĕ те хăвăрт-хăвăрт çырма тытăнчĕ. Пăхса, вуласах пыратăп. Юлашкинчен алă пусрĕ:

«...Сире чунтан хисеплесе, юратса тăракан ывăлăр Коля».

Миçе сехет калаçса лартăм. Ятне ыйтса пĕлесси асра пулман. Ах, ытла айван çак эпĕ. Коля... Лайăх ят.

Çырнă хута тыттарчĕ те пире васкаса пуçтарăнма хушрĕ.

— Билет илме каятăп, — пĕлтерчĕ Коля.

Ĕнтĕ эпир Канашалла каякан поездра. Вакунра Коля чăматанĕнчен альбом кăларчĕ. Уçкаласа пăхнă май çапла каларĕ:

— Нина, çак альбома киле илсе çитерме йывăр пулмĕ-ши сире?

Çепĕç çын. Илмесĕр тăрăп-и? Килĕшнине пĕлтерсе пуça сĕлтетĕп, хам йăл! кулатăп.

Асатакансене вакунран тухма хушаççĕ. Коля ура çине тăчĕ. Эпĕ хăвăрт чĕвелентĕм те Кольăна ыталаса, хыттăн-хыттăн чуптурăм, пăшăлтатса:

— Тавтапуç сана, ырă çыннăм. Телейлĕ пул!

«Сире те ăнăçлă çул сунатăп!» — илтетĕп Кольăн шăппăн тухакан сассине. Олĕшкăна чуппа парсан, вăл вакунран тухрĕ.

Поезд ерипен тапранать. Акă кустăрмасем хăвăрттăн-хăвăрттăн чупма тытăнчĕç. Мĕлт те мĕлт иртсе юлаççĕ станци çурчĕсем, телефон юписем... Эпир Олĕшкăпа иккĕн питсене кантăк çумне тытнă та перрон çинче алă сулса тăракан Кольăна куç илмесĕр пăхатпăр.

Поезд ыткăннă май вăл пĕчĕкленнĕçем пĕчĕкленчĕ. Тем чул пăхсан та ăна çын хушшинче уйăрса илме пулмарĕ, вара пачах çухалчĕ, пурне те хыçалти вакунсем картларĕç.

* * *

Нинăпа ывăлĕ яла çитнĕренпе вăхăт самаях иртрĕ. Ав, пахчара Коля амăшĕ, Олĕшкăна çавăтса та, йăран хушшипе утать. Тем шăкăлтатаççĕ çамрăкпа ватă.

— Асанне, пăх-ха сар чечек!—кăшкăрать Олĕшки.

— И-и! Ара, ыльăм, хăяр чечеке ларнă та-çке. Халĕ эсĕ ăна, — тĕлĕнет карчăк.— Ах, çырлах, аннӳн алли ытла çăмăл.

«Çăмăл» сăмаха Олĕшка урăхла ăнланать.

— Аннен алли çăмăл. Çывăрнă чух аллине ман çине хурать, эпĕ туймастăп та,—ăнлантарать Олĕшка асламăшне.

— Ия çав, ия. Мĕн тытса тăвать, пурте йĕркеллĕ.

Кинемей Нинăна пур енчен те килĕштерчĕ. «Эх, тамаша, лайăх кин пулмалла, — хăйпе хăй калаçать ăшĕнче. — Ача пуршăн тиркесе тăмăттăм. Кули мур илесшĕ ни апла, ни капла çырмасть. Чĕлхи, чĕлхи Нинин — сар çу. Анне, тесе чĕнет. Килсенех: «Куля пекех эпĕ те анне тесе чĕнетĕп, ятламăр-и?» — терĕ. Ăшă сăмахшăн кам ӳпкелешĕ.

Чăнах, Нинăна пурте юратрĕç. Ваттисем ытларах ĕçченшĕн килĕштереççĕ. Кил-çурт тĕкĕр евĕр çап-çутă. Пахча çимĕçне хăй шăварса тăрать. Темиçе кун каялла фермăна ĕçе — учетчике — кĕчĕ.

Килте йĕркеллех. Анчах ял хĕрĕсенчен хăшпĕрисем тӳнтер пăхаççĕ, уйрăмах Лида. Пĕррехинче Нина пахчаçимĕçне шăварма кӳлĕ хĕррине шыв ăсма анчĕ. Унччен те пулмарĕ, Лида сикрĕ тухрĕ таçтан. Кăвак куçĕ — пăр, пăхрĕ те шăнтса лартрĕ.

— А-а, лекрĕн-и тинех!—кăшкăрса ячĕ вăл çиллес.— Тĕртетĕп те яратăп акă шыва, никам курман чух! Эсĕ, майра-сайра, çын савнипе ыр курса пурăнма ан та ĕмётлен.

Çапах та Лида Нинăна шыва путарма хăяймарĕ.

— Айван та иккен эсĕ, — терĕ те Нина, витрисене кĕвентепе çаклатса, пуçне чиксе, утрĕ пахчаналла.

Пурте Кольăран çыру кĕтеççĕ: ашшĕ те, амăшĕ те, савнă хĕрĕ Лида та. Лешĕ вара, мансăрах тавçăрса илĕрха тенĕн, юри çырмасть.

Нина ĕçрен таврăнчĕ. Пӳртре пĕри те çук. Вăл пахча енчи кантăка яри уçрĕ. Чӳрече ани çине выртрĕ. Мĕн тери ырă. Ял илемĕ чуна илĕртет. Ĕмĕр пурăнма хатĕр вăл кунта.

Пахчара Олёшкăн чĕвĕл сасси илтĕнет. Нина ывăлĕ патне вĕçтерчĕ.

— Нина! — чĕнет амăшĕ. — Пирĕн хăяр чечеке ларнă.

— Пĕлетĕн-и мĕн тăвăпăр, анне, — тет Нина, — хăяр чечекĕсене шерпет шывĕпе пĕрĕхтерĕпĕр.

— Ай-ай, мĕн тума? — тĕлĕнет ватти.

— Хăяр нумай пулать. Пылак тутта сиссе пыл хурчĕсем кĕтĕвĕпех нăйласа килĕç. Чечекрен чечеке вĕçсе вĕсем сĕткен çĕклĕç. Чечексене пыл хурчĕ кĕрсе тухни çеç кирлĕ, вара пуш чечек юлмĕ.

— Ах, çак Нинăна, хулара пурăнать пулин те ун пеккине пĕлет,— тĕлĕнет карчăк.

— Эпир интернат-шкулта вĕреннĕ чух сăнавлă ĕçсем нумай тăваттăмăр.

Нина Кольăсен килĕнче пурăнса лăпланчĕ, ăш вăркамасть, шухăшсем килсе пăвмаççĕ, куççулĕ те пытанчĕ. Қаçсерен ыйхă канлĕ, усал тĕлĕк văратмасть. Вăхăт хăйĕн ĕçне тăвать.

Ачасем шкула кайрĕç. Часах кĕркунне çитет. Çуллахи тума улăштарма та тивет. Ăшă тумтирсене Шура патне хурса хăварнă. Ярса пама ыйтса çыру çырма ларчĕ. Çак вăхăтра Лида хашкаса пырса кĕчĕ. Аллинче ун темле конверт. Хăлаçланать, кулкалать, куççулĕ тухать хăйĕн. Анчах ним те калаймасть .

— Лăплансам, Лида. Лар! — тет ăна Нина, пукан парса.

— Çыру илтĕм. Вăл пĕр мана çеç юрататъ! Мана çеç! — çĕр айĕнчен çăлкуçĕ палкаса тухнăн, сасси вăйлăн вĕçерĕнчĕ Лидăн. — Турăçăм, мĕнле ухмахланнă эпĕ. Сана, Нина, Қоля арăмĕ тесе кураймасăр тулхăрса пурăнтăм. Ах, айван та-мĕн эпĕ, пĕрле ӳснĕ туса ĕненме пăрахнă. Савнине шанăçран кăларсан, çăвара çапла эрĕм хыпан. Сан пирки, Нина, йăлтах çырнă Қоля. Йăлтах, йăлтах...

Савăнăçне шăнăçтарайман хĕр чĕвĕлтетрĕ, чĕвĕлтетрĕ. Унтан Нинăна тытса чăмăртарĕ. Мĕнле кĕнĕ, çаплах чупса тухса кайрĕ урама. Нина ун хыçăнчен ăшшăн пăхса кулса юлать.

— Савни юратнинчен пахи хĕршĕн тĕнчере урăх мĕн пултăр! — тет Нина шăппăн. — Телейлĕскер.

Қольăран çыру илнĕ хыççăн Лида миçе хут каçмарĕши Нина патне. Халĕ ĕнтĕ унăн çул уçăлчĕ, тĕнче çуталчĕ. Тепĕр кун та, иккĕмĕш, виççĕмĕш кун та, вара та Ли-

да ёҫ хыҫҫăн Нина патĕнчен тухмарĕ. Нина юрлать, вăл каҫса кайсах итлет.

— Уҫă, чуна ҫĕклентерекен сасă сан, Нина, — мухтать Лида кăвак куҫне ăшшăн вылятса. — Артистка пулмалла пулнă санăн. Сăн-пуҫу чипер. Ҫӳҫӳ кăна мĕне тăрать: лăпăска та ҫăра, сарă.

— Санăн хăвăн та сарă-ҫке, — тет Нина.

— Санăн ярт тăсăлса тăрать. Манăн ав мĕнле вĕтĕ кăтра. Хам ҫӳҫрен вăтаннипех тутăр ҫыхса ҫӳретĕп. Кольăна ман ҫӳҫ килĕшетчĕ.

Нинăпа Лида иккĕш ҫӳреме тытăнчĕҫ. Ĕҫе пĕрле каяҫҫĕ, Лида та фермăра ĕҫлет. Қаҫсерен вĕсене вăйăсенче, киносенче пĕрле курчĕҫ. Тус-тантăш пур чух пурнăҫ тулли, илемлĕ.

Пăхать, сăнать Қоля амăшĕ ҫĕнĕ туссене, ăнланаймасть вĕсене мĕн пĕрлештернине.

— Нина, — чĕнсе илет карчăк пĕррехинче айккинерех,—ку хĕр матти тăвас сарă чăх пек мĕн пит какалать?

— Анне, Лида сирĕн пулас кинĕр. Савăнăр, лайăх хĕр вăл. Унăн кулли те хĕвел ăшши пек.

«Эсĕ вара...» — чĕлхе вĕҫне килнĕ ҫак сăмаха персе ямасăр шăл хушшинче тытса юлма ĕлкĕрчĕ аран. Вăл аллипе ҫăварне хупласа ассăн сывласа илчĕ те кулланҫи пулса каларĕ:

— И-и, ара, Лида ман кин пулас пирки шыв ҫине сенĕкпе ҫырнă.

— Апла мар ĕнтĕ, анне. Вăл Қольăран ҫыру илнĕ.

— Э-э, илнĕ пулать, эппин.

Қайран-малтан тек тапратмарĕ кун пирки карчăк.

* * *

Нинăпа Лида каллех пĕрле лараҫҫĕ сад пахчинчи вата улмуҫҫи айĕнче, сĕтел хушшинче. Панулми туранă май хăйсем ытарлă калаҫаҫҫĕ. Қоля амăшĕ лешсем вакланă панулмисене хĕлле компот пĕҫерме кăмакара типĕтет. Олĕшка валли ятарласа хĕвел питĕнче типĕтме чи тутлă панулми кастарчĕ. Қашни турамне курăс хуппи ҫине майласа хурать. Хăй ĕҫленĕ май йăлт! та йăлт! пăхса илет чиперккесем ҫине. «Эх, пахăр чунĕсем, ҫураҫнă хĕрсем пек пуплеҫҫĕ, — шухăшлать карчăк. — Аҫтан сăмах тухать?»

Лешсем татти-сыпписĕр юмахлаҫҫĕ. Қашниех ку таранччен мĕнле пурăнни ҫинчен каласа парать.

Лида ёнтĕ çĕнĕ юлташĕн кĕске кунçулне, ăраскалне витĕр пĕлет. Кăшт куçне хупса, сĕтел çине тайăнса тăнă хыççăн ыйтрĕ:

— Нина, малашне кампа пурăнма ĕмĕтленетĕн?

— Мĕнле кампа? Манăн куç тулли ывăлăм пур. Ав, вăл, Олёшка, асламăшĕ тавра лашалла вылять.

— Генăна каçармастăнах-и?

— Эпĕ мĕн? Вăл каçарас çук. Нумай шухăшларăм. Тĕрĕссипе илсен, Гена нимĕн чухлĕ те айăплă мар. Ăна кӳренсе эпĕ йăнăшнă. Енчен, ман упăшка час-часах хĕрпе тĕл пулма урама чупать пулсан, почта ещĕкĕнче ун ячĕпе килнĕ çыру тупсан—тытăнса тăма пĕл. Мĕнле ăшшă урăттăм. Хам килтен тухса кайнă чух виçсе пăхма ăс çитереймен.

— Нина, эсир пирĕн ялтан ниçта та ан кайăр. Колхоз çурт лартса парĕ, — йăпатать Лида. — Пурăнăр. Сана фермăра пурте хисеплеççĕ.

Чĕнмест Нина хирĕç ним те.

Тепĕр кун Трофим Петрович килĕнче пурнăç юххи каллех улшăнчĕ.

Кăнтăр апатне Нина киле çӳрет. Кая юласшăн мар васкать кашниччех. Карчăкпа старик ăна кĕтсе апата лармаççĕ. Тахçантанпа пыракан йĕрке.

Сĕтел хушшинчен тухсан Трофим Петрович сак çине выртрĕ.

— Апатланнă хыççăн начар улпут та икĕ сехет выртса каннă тет, — мăкăртатать хăй. — Эпир начар йышши мар. Çапла-и, Олёшка?

— Çапльа, асатте.

Лида кантăк умĕнче кулкаласа ларать. Вăл юлташне ĕçе пĕрле кайма кĕтет. Нина Олёшкăна аллине çутарать васкасах.

— Анне, эпĕ асаттепе выльап,— шăпăлтатать пĕчĕк чĕлхипе.

Аслашшĕ илтрĕ те чĕнет, ав.

— Кил, кил, Олёшка, пушăт хуппинчен лаша туса паратăп.

Ачана урăх ним те кирлĕ мар. Вăл аслашшĕ хыçне кĕрсе ларать. Кăшт вылякаланă хыççăн унăн куçĕ хупăнать те тӳнет вара çытар çине.

— Анне, кан-ха кăшт, сĕтел çинчен хамах пуçтарса хăварам, — тет Нина. Тĕпел кукринче чашăк-тирĕк çунă чух пӳрте пĕр çын кĕрсе тăчĕ.

— Ман килес. Кĕме те юратчĕ-ши? — терĕ вăл.

Кĕрсе тăнă çын сассине илтсе пурте карăх çаврăнса пăхрĕç. Кăвак плащ тăхăннă хура кĕрнеклĕ çынна курсан, Лида тӳрех тавçăрчĕ: «Вăл! Вăл!» Нина йăпăрт! хăйĕн пӳлĕмне чăмрĕ. Кинемей, ырă мара сиснĕн, аллипе чĕри тĕлне тытрĕ. Пĕр старик кăна, выртакансккер, тăрса ларса, кĕнĕ çынна тĕпелелле иртме сĕнчĕ.

Ним чĕнме аптранăскер, малалла ура ярса пусрĕ килнĕ çын. Хура куçĕ вылянать кăна хăйĕн. Çав тери пăлханни палăрать.

— Хăна пулăр, иртĕр сĕтел хушшине, — чĕнет лăпкă сасăпа килхуçи хĕрарăмĕ.

Старик хыçĕнче ача тетте лашапа кăсăкланса ларать. Килнĕ çын ун чунне ним те хускатмасть, вылять те вылять. Лешин вара ачана курсан самант пичĕ-куçĕ улшăнчĕ. Амăрткайăк çунаттипе авăсса илнĕн, вăл аллисене ача еннелле тăсса, ăна халь-халь ярса тытасла, кăшкăрса ячĕ:

— Олĕшка! Ывăлăм!

Çук, ача хирĕç аллине тăсмасть. Вăл аслашшĕ хыçне пытанчĕ. Манăçа тухнă ашшĕ, çавăнпа ютшăнать те. Ăнланма пултарать-и вара нумай хушă курмасăр тунсăхланă ашшĕ кăмăлĕ çакна? Генăн аллисем, çурмаран хуçăлнăн, ваштах усăнчĕç. Ăçта тарать вăй? Ура чĕтрет. Хăйне вăл икĕ чул хушшине хурса хĕстернĕнех туять. Кăкăрĕ антăхать сывлăшсăр. Çил вăркăштарса уçăлтарасчĕ халь пӳлĕме. Çук. Тӳсейми чун ыратать. Унăн пысăк, хура куçĕнчен вĕри куççулĕ пăчăртанса тухрĕ.

Пурне те ăнланчĕ кинемей. Олĕшкăн ашшĕ килнĕ, пӳрт пушанса юлмалла. Йывăр уйăрăлма. Мĕн тăвăн? Çемçе кăмăлласкер, хĕрхенчĕ куççуль кăларакан çынна, тытăнчĕ йăпатма:

— Ара, тӳрех хыпăнса ан ӳк-ха. Ача-пăча тени вăл час манать, час хăнăхать. Ытларах ачашла кăна.

Олĕшка хăнăхасси нимĕн чухлĕ те паллă мар. Гена тӳсеймен енне тухса каять пӳртрен. Кăшт тăрсан Нинăпа Лида та пахча хыçĕпе ĕçе чупрĕç.

Халаплама юратакан Лидăшăн тупăнчĕ мĕн шĕкĕлчемелли. Пĕлес килни канăç памасть хĕре.

— Каятăн-и ĕнтĕ, Нина? — ыйтать вăл.

— Каятăп, Лида, каятăп. Олĕшкăна шел. Мĕнле-ха ăна çынĕ пур çинчех ашшĕсĕр хăварăн. Эпĕ хам та анне пур çинчех тăлăх ӳснĕ.

— Юрату? Пурăнайратна унсăрăн?

— Тупатăп юратăва. Гена ăна тивĕçлĕ.

— Тĕрĕс. Юрат ăна, Нина.

* *
*

Килте икĕ ватă, пĕр ача.

— Эх, старик, мĕн тăвăпăр? Çав тери хăнăхрăм. Олĕшкисĕр пурăнассăн туйăнмасть. Ăшăм çулăмпа çунать.

— Мĕн тăвăпăр, карчăк. Чарма вăй çитерейменĕпĕр.

— Пулаççĕ-çке, ют та ху ачу-пăчу пекех паха.

Коля амăшĕ сĕтел çине тепĕр хут хурса тухать ĕçмеçиме. Гена тавăрăнчĕ. Вăл лавккана кайса килнĕ-мĕн. Сĕтел çине кучченеç кăларса лартрĕ.

Олĕшка ашшĕ çине çаплах сĕкекен пĕчĕк вăкăрла пăхать.

— Кил ĕнтĕ, каçар. Çитĕ çилленсе. Нумай кăнтти паратăп,—тет ывăлне Гена, кĕсйинчен конфет кăларса.

Ачана конфетсăр пуçне урăх мĕн кирлĕ! Чупса пычĕ те ашшĕ арăкĕ çине хăпарса ларчĕ. Хутне салтса пĕр конфетне хыпать, тепĕрне... Çăвар тулли! Ашшĕ куçĕнчен ăшшăн пăха-пăха илет. Çухалнă туслăх çĕнелет.

Каçалапа Нина таврăнчĕ ĕçрен. Лиди те юлман.

Çур çĕр иртичченех Петрович килĕнче çутă çуннине асăрхарĕç çынсем.

Çутă сӳнсен те Нина пӳлĕмĕнче шăкăл-шăкăл калаçу часах шăпланмарĕ.

— Мĕнле тупрăн пире? — ыйтать Нина упăшкинчен.

— Чĕрĕ юрату туптарчĕ, Нина. Олĕшкăна курас килнипе вилеттĕм. Тунсăх пĕтеретчĕ. Манар пулни-иртнисене. Ĕмĕр лайăх пурăнар. Килĕшетни?

— Килĕшетĕп. Тĕнчере çук туслă юратупа пурăнăпăр, — тет Нина.

Упăшки арăмне хĕрӳллĕн чуптăвать.

* *
*

Ир. Асату. Йывăр уйăрăлма. Пурне те хурлантарать.

—Лида, чĕнĕн-и хăвăн туйна?— тет Нина алă парса.

— Чĕнмесĕр. Коля кăна часрах таврăнтăрччĕ, — пĕлтерет. Хăй вăтаннипе нар пек хĕрелет.

— Олĕшкăна çитес çула килсе ярăр,— сĕнет Трофим Петрович. — Пирĕн патра выляма ăна ирĕклĕ пулать.

— Нина хĕрĕм, итле, — хăйне тăнлама хушать кинемей те, — эпĕ саншăн яланах — аннӳ, çакна ан ман.

— Аннем, — пырса çупăрлать çурăмĕнчен ăна Ни-

на, — эсё ман чӗре варрине ҫирӗп кӗрсе лартӑн. Пуриншӗн те тав, пысӑк тав.

...Ӑсату... Тӗлпулусӑр килмест вӑл, тӗлпулусӑр ӑсату ҫук. Хумхантарать, хурлантарать вӑл ҫынсене.

Хапха умӗнче кӗтсе ывӑннӑ шофер сас парать: пи-пи-ик!

— Сывӑ пулӑр!

— Тепре куриччен!

Тӑрса юлчӗҫ ӑсатакансем.

Укӑлча хапхи уҫӑлчӗ. Шурӑ такси ялтан тухса кайнине курса юлчӗҫ сӑнакансем.

Цена 16 коп.